В.И. Игнатьева, Н.Н. Чернова, Л.В. Николаева

# ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВĔН УРОКĔСЕМ

## 4 класс

**Меслет кăтартăвĕсем**

Шупашкар, 2024

# Умĕн калани

«Литература вулавĕн урокĕсем. 4 класс» меслетлĕх кĕнекине авторĕсем хăйсемех хатĕрленĕ «Литература вулавĕ. 4 класс» вĕренӳ кĕнекипе тăваттăмĕш класс ачисене чăваш литературине вĕрентес ĕçе тухăçлăрах йĕркелеме пулăшас тĕллевпе хатĕрленĕ. Меслетлĕх кĕнекин тытăмĕ, пĕтĕмĕшле илсен, 1-3 классем валли хатĕрленĕ меслет кĕнекесенни майлах, содержанийĕ кăна тăваттăмĕш класс программипе тата ку класс валли хатĕрленĕ вĕренӳ кĕнекинчи материалпа çыхăннă.

Меслет кăтартăвĕсем, ытти классенчи пекех, умĕн каланинчен, кашни урокăн йĕркине тĕслĕхшĕн çырса панинчен тата хушма материалтан тăраççĕ. Умĕн каланинче «Литература вулавĕ. 4 класс» вĕренӳ кĕнекин уйрăмлăхĕсене уçса панă, тăваттăмĕш класра чăваш литературине вĕрентессин тĕллевĕпе задачисене, предмета вĕрентнĕ май пулмалли результатсене, вĕренĕвĕн универсаллă ĕç-хĕлĕсене палăртнă, вĕренӳ предмечĕн содержанине, литература вулав урокĕсене тема тата сехет тăрăх пайланин тĕслĕхне (34 сехет), литература вулавĕн урокĕсене йĕркелессин уйрăмлăхĕсене çырса кăтартнă. «Уроксем» пайра вара вĕрентекенсене тĕслĕх евĕр усă курма 34 урокăн йĕркине туллин çырса пани пур. Меслет кăтартăвĕсем хушса панă материалпа вĕçленеççĕ. Кунта вĕренӳ кĕнекине кĕртнĕ хайлавсен авторĕсем çинчен кĕске информаци панă. Енчен те вăл е ку авторăн хайлавĕсем 1-3-мĕш классенче тĕл пулнă пулсан, ун çинчен меслет катартăвĕсенче тепĕр хут информаци паман.

Тăваттăмĕш класра, пуçламăш шкулăн ытти класĕсенчи пекех, ачасен пуплевне аталантармалли, тавракурăмне йĕркелемелли, кăмăл-туйăмне хускатмалли тĕп хатĕрсенчен пĕри илемлĕ сăмахлăх пулса тăрать. Тăваттăмĕш класра вĕренекен ачасем халăх сăмахлăхĕн тата чăваш ача-пăча литературин паха тĕслĕхĕсемпе ытларах вуласа паллашаççĕ, çавăнпа вĕренӳ кĕнекинче ачасен вулав хăнăхăвĕсене аталантарас енĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнă. Ачасене пултаруллă вулавçă пулма çул уçса парасси, вулав культурин никĕсĕсене алла илме пулăшасси питех те кăткăс, яваплă ĕç. Кĕнекери текстсене вуласа, вулавпа çыхăннă тĕрлĕ ĕçсене пурнăçласа ачасем чăвашла тĕрĕс, вуланине ăнланса, сасса кирлĕ пек улăштарса вулама вĕренсе пыраççĕ, вулавăн тĕрлĕ тĕсне (сасăпа вулани, ăшри вулав) алла илеççĕ, хăйсен чăвашла пуплевне аталантараççĕ. Вулав тата пуплев хăнăхăвĕсене аталантарнипе пĕрлех тăван (чăваш) чĕлхепе хайланă текстсен вăрттăнлăхĕсене уçăмлатас ĕç те пулса пырать. Вĕренӳ кĕнекинче çак ĕçе тума вĕрентмелли материал та чылай. Сăвă-калавсен, юмахсен тĕп

шухăшĕсене, темисене уçăмлатакан микротемăсене палăртма, тытăм тата сăнарлăх уйрăмлăхĕсене ăнкарма кĕнекере панă тĕрлĕ йышши ĕçсем май параççĕ. Вĕсен шутĕнче пĕр-пĕр темăпа çыхăннă ваттисен сăмахĕсен пĕлтерĕшĕсене уçăмлатни; пĕчченшерĕн, мăшăрпа е ушкăнпа ĕçлесе хайлавсенчи сюжет йĕрне тупни, план пункчĕсене йĕркипе тĕрĕс вырнаçтарни, хайлавăн планне туни, литература пĕлĕвĕн ăнлавĕсене ăша хывни, итлени-тăнлани, илемлĕ вулама вĕренни, харпăр хăй е ытти ачасен вулавне хаклани-пахалани, сăмахсен сăнарлă пĕлтерĕшĕсене асăрхама, ăнлантарма пултарни тата ытти те. Кĕнекере панă ĕçсем ачасене хайлав содержанине пĕтĕмĕшле ăнланма, темине уçăмлама, хайлав содержанине сӳтсе явса тарăнрах ăнланма пулăшаççĕ; хайлаври ĕçсен аталанăвне, уйрăм самантсене сăнама май параççĕ; сăнарсене палăртма, вĕсене сăнлама, хăйсем мĕн шутланине калама вĕрентеççĕ. Хайлавсене тишкернĕ май ачасем литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе те паллашса пыраççĕ.

Кашни хайлав хыççăн, ачасене унăн содержанине туллинрех ăнланма пулăшас тĕллевпе, словарь панă.

Ĕçсене ачасем урокăн тĕрлĕ тапхăрĕсенче (вулав умĕнхи, вуланă самантри тата вулав хыççăнхи тапхăрсенче) тăваççĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен, 4-мĕш класра ăс пухакан ачасем валли хатĕрленĕ «Литератуа вулавĕ» вĕренӳ кĕнекине авторĕсем программа шалашĕпе килĕшӳллĕн, çӳлерех асăннă шухăшсене тĕпе хурса, ачасен уйрăмлăхĕсене, вĕсен чăвашла пуплевĕн шайне шута илсе йĕркеленĕ.

Вĕренӳ планĕнче 4-мĕш класра чăвашла литература вулав урокĕсене чăваш чĕлхипе пĕрле ирттерме эрнере 1 сехет уйăрма палăртнă.

Ку уроксен тĕп тĕллевĕ – ачасене чăвашла çырнă илемлĕ хайлавсене вуласа ăса хывма, чăваш сăмахлăхĕн илемлĕхĕпе пуянлăхне туйма, çак пуянлăхпа харпăр хăй пуплевне йĕркеленĕ чух усă курма хăнăхтарасси. Палăртнă тĕллеве пурнăçлама пулăшакан задачăсем:

- «Литература вулавĕ» предметăн тĕллевĕпе, задачисемпе паллаштарасси, вĕсене пурнăçласси;

- «Литература вулавĕ» кĕнекен вĕренӳри вырăнĕпе пĕлтерĕшне, тытăмĕпе шалашне, ятарлă палăртусене пĕлесси;

- ачасене чăваш çыравçисен хайлавĕсемпе кăсăклантарасси, илемлĕ хайлавсене вуласа ăнланма, ăса хывма хăнăхтарасси;

- вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма вĕрентесси;

- илемлĕх мелĕсене хайлавсенче асăрхама-тупма вĕрентесси, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси;

- хайлаври ĕçсен йĕркине палăртма, геройсен хăтланăвĕсене ăнлантарма тата хаклама, хайлав темине палăртма пултарнине çирĕплетесси;

- тĕрлĕ жанрлă илемлĕ литература хайлавĕсен уйрăмлăхĕсене палăртас, вĕсене вуласа ăнланас, ăса хывас, асăмлас хăнăхусене аталантарасси;

- халăх сăмахлăхĕн вак жанрĕсен тĕслĕхĕсемпе паллаштарасси, вĕсемпе пуплевре усă курма вĕрентесси;

- ачасен гражданла, патриотла туйăмĕсене аталантарасси;

- ырăпа усала, хурапа шурра туяс туйăма, илем сисĕмне аталантарса пырасси, тĕнчекурăмне анлăлатасси.

Кĕнекере чăваш тата ытти халăх çыравçисен хайлавĕсене, ача-пăча, халăх сăмахлăхĕн паха тĕслĕхĕсене панă. Хайлавсене тематика принципне пăхăнса ушкăнланă. Ачасем «Асран кайми çу кунĕсем», «Ачалăх», «Чăваш çĕршывĕ – Тăван çĕршыв», «Çут çанталăк тĕнчи», «Сивĕ хĕл çитрĕ», «Манăн çемье», «Эпир – туслă ачасем» темăсемпе çырнă хайлавсемпе паллашаççĕ. Ачасем тĕрлĕ йышши текстсем пулăшнипе тăван тавралăхăн, çут çанталăк вăхăчĕсен хăйне евĕрлĕ илемĕпе паллашаççĕ, ачалăх тĕнчин курăмлăрах енĕсене асăрхаççĕ, чăваш чĕлхин хăвачĕ-техĕмне, çемьери тата туссем хушшинчи хутшăнусен хаклăхне ăнкарса пыраççĕ. Вĕренӳ кĕнеки, çавăн прекех, паянхи вĕренӳ стандарчĕ ыйтнипе килĕшӳллĕн ачасен харкамлăх ĕç-хĕлне аталантарма, харпăр хăй сывлăхне упрама кирлине ăнлантарма май парать.

4-мĕш класс программине кĕртнĕ илемлĕ текстсем ачасене чăваш сăмахлăхĕнчи тĕрлĕ ăрури пĕлтерĕшлĕрех çыравçăсемпе, вĕсен хайлавĕсемпе тĕплĕнрех паллашма пулăшаççĕ. Тĕрлĕ ăрури çыравçăсем, паллах, пурнăçра тĕл пулакан пулăмсемпе ĕçсене, тăван халăхăмăрăн йăли-йĕркисене хăйсем пурăннă вăхăтпа килĕшӳллĕн сăнласа панă. Вĕсен хайлавĕсене вуласа ачасем иртнĕ, хальхи пурнăç-вăхăта хаклама вĕренеççĕ, тăван ен культурипе туллинрех паллашаççĕ. Çапла майпа вĕренекенсен тавракурăмĕ анлăланать, аслашшĕ-асламăшĕсен несĕлне тĕпчес-тишкерес туйăм çуралать.

Вĕренӳ кĕнекинче хайлавсен шучĕ уроксен шутĕнчен ытларах. Çакă вĕрентекене ачасен аталанăвĕн шайне шута илсе урок валли материал суйласа илме май парать, ачасене килте ашшĕ-амăшĕпе пĕрле чăвашла вулама та материал юлать. Калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен пăхсан кĕнекери хайлавсем пысăках мар, 4-мĕш класра вĕренекен ачасемшĕн шăпах шăл çемми.

Вĕренӳ кĕнекинче çакăн пек йышăннă паллăсем пур: итле, ĕçсене ту, ыйтусене хуравла, мăшăрăн ĕçле, ушкăнпа ĕçле, вула, хăв вуланине хакла, словарьпе паллаш, вулав умĕнхи ĕçсем, ăшра вула, ваттисен сăмахĕсене вула, пултарулăх ĕçĕ. Уйрăм палăртусен тĕллевĕ – ачасене кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлеме хăнăхтарса пырасси.

Вĕренӳ кĕнекин содержанийĕпе методика аппарачĕ ачасенче илемлĕх туйăмĕсене аталантарма пулăшаççĕ, литература илемлĕ сăмах искусстви пулнине туйса илме май параççĕ.

Кĕнекере ăслăлăх стилĕпе çырнă текстсем те пур. Вĕсем ачасемшĕн ăнланмалла тата кăсăклă, пĕлӳ культурине аталантарма, ăна çĕнĕ пусăма çĕклеме пулăшаççĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен, вырăсла калаçса ӳсекен 4-мĕш класс ачисем валли хатĕрленĕ «Литература вулавĕ» кĕнеке вĕрентекенсене ачасене пур енлĕн аталантарма, программа ыйтнине пурнăçлама май парать.

**Предмета вĕрентнĕ май пулмалли результатсем**

**Харкамлăх результачĕсем:**

- ача хăй чăваш ачи, çав вăхăтрах Раççей гражданинĕ пулнине ăнланса илни;

- тăван çĕршывăн, тăван енĕн иртнĕ, хальхи тапхăрĕсемпе тата пуласлăхĕпе кăсăкланни;

- тăван халăха та, ытти халăхсене те хисеплени;

- çын общество членĕ пулнине, çын тивĕçлĕхĕпе яваплăхне, çынна хисеплемеллине ăша хывни; хăйне обществăра мĕнле тытмалли правилăсене пĕлни; кашни çыннăн хăй евĕрлĕхне, уйрăмлăхĕсене йышăнни, кашни çынна ăнланма тăрăшни, хисеплени, ырă сунни;

- ӳт-пӳ, мораль тĕлĕшĕнчен çынсене сиен кӳме пултаракан кирек мĕнле ĕç-пуçа та сивлени;

- искусствăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе, тăван халăхăн йăли-йĕркипе, ташши-юррипе

тата ытти халăхсен пултарулăхĕпе кăсăкланни;

- харпăр-хăй пултарулăхне тĕрлĕ енлĕ аталантарма тăрăшни;

- обществăра çирĕпленнĕ сывлăх тата хăрушсăрлăх правилисене (çав хушăрах информаци усçлăхĕнче те) тытса пыни;

- харпăр-хăй сывлăхне (психика тĕлĕшĕнчен те) упрамаллине пĕлни;

- ĕç çынна илем кӳнине, ĕçлесе илнĕ пурлăха перекетлĕ тытмаллине ăнланни, тĕрлĕ ĕçе хутшăнма тăрăшни, тĕрлĕ профессипе интересленни;

- çут çанталăка упрамаллине, çут çанталăк пурлăхĕпе перекетлĕ усă курмаллине пĕлни; çут çанталăка сиен кӳрекен ĕçсене уйăрма пултарни;

- çĕннине пĕлме тăрăшни, çак ĕçре хастарлăх, пуçарулăх кăтартни, хăй тĕллĕн ĕçлеме пултарни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- тĕрлĕ текстсене танлаштарма, текстсен пĕрпеклĕхĕсемпе уйрăмлăхĕсене палăртма пултарни;

- палăртнă тĕллеве кура текстсем калăплама е текстсен пуххине хатĕрлеме пултарни;

- текстсене классификацилемелли пĕлтерĕшлĕ паллăсене  палăртма, сĕннĕ текстсене классификацилеме пĕлни;

- текста тишкерме, пĕтĕмлетӳсем тума пултарни;

- ĕç тĕллевне вĕрентекен пулăшнипе палăртма пултарни;

- палăртнă тĕллеве пурнăçлама май паракан темиçе çул-йĕре тишкерни, меллĕреххине суйласа илме пĕлни;

- пĕтĕмлетӳсем тума, харпăр хăй шухăшне вуланă текстри материалпа çирĕплетме пултарни;

- словарьсемпе, справочниксемпе ĕçлеме пĕлни;

- информаци тĕрĕс е тĕрĕс мар пулнине харпăр хăй тĕллĕн словарьсемпе, справочниксемпе ĕçлесе палăртма тăрăшни;

- интернет усçлăхĕнче материал шыранă чухне информаци хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнмаллине пĕлни;

- вӗренӳ задачипе килӗшӳллӗн текст, видеоматериал хатӗрлеме пултарни;

- таблицăсемпе, схемăсемпе ӗçлеме пӗлни.

Пӗтӗмӗшле вӗренӗвӗн тӗп тӗллевӗсемпе килӗшӳллӗн предмета вӗреннӗ май планлакан результатсене пурнăçлама ачасен вӗренӗвӗн универсаллă ӗç-хӗлӗсене (УУД) алла илмелле. 4-мӗш класс вӗçне ачан çак ӗç-хӗлсем калăпланса çитмелле:

***Харкамлăх ӗç-хӗлӗсем:*** ача кăмăлпах вӗренме хăнăхать, мӗн пӗлни çумне пӗлменнине хушса пырать, вӗренӳри йывăрлăхсене, хăй пурнăçлакан тата хутшăнакан ӗçсен пурнăçри вырăнне ăнланать, хăйне Раççей обществин, чăваш халăхӗн пӗр уйрăлми тӗпренчӗкӗ пек туйма, çывăх тăванӗсемпе тус-тантăшӗсене, ваттисене хисеплеме, вӗсен шухăш-кăмăлне уяма хăнăхать. Хутшăну этикечӗн ансат йӗркисемпе усă курать, хутшăнупа çыхăннă ăнлавсене уçăмлать; лайăххипе япăххине, ыррипе усаллине уйăрма пултарать; илемлӗ хайлавсене вуласа пурнăçра пулса иртекен пулăмсемпе ӗçсене курать, вӗсен сăлтавӗсене чухлать; чăваш халăх культури, сăмахлăхӗ пуян пулнине пӗлет, ăна кăмăллăн йышăнать.

***Пӗлӳлӗх ӗç-хӗлӗсем:*** ача вӗренӳ кӗнекипе ӗçлеме пӗлет: кӗнеке тытăмне пӗлет, хайлав ятне, унăн авторне курать, тупмаллипе усă курать, кӗнекери ӳкерчӗксене сăнать, йышăннă паллăсене ăнланать, вӗсемпе усă курать; чӗлхери ансат пулăмсене тишкерет, терминсене ăса хывать; танлаштарма, тишкерме тата пӗтӗмлетӳ тума хăнăхать; текстсене итлесе те, вуласа та тивӗçлӗ информаци илме вӗренет; вуланă текст содержанине ăса хывма, хайлав темине, тӗп шухăшне палăртма, вуланине пӗтӗмӗшле хак пама хăнăхать.

***Хутшăну ӗç-хӗлӗсем:*** ача пӗр парта хушшинче ларакан тантăшӗпе е ушкăнри ачасемпе килӗштерсе ӗçлеме вӗренет: ӗçе пайлама, валеçсе илме, пӗр-пӗрин ӗçне тӗрӗслеме, черетленсе ӗçлеме, хăйӗн тата ыттисен шухăшне ăнланма, вăл е ку шухăшăн тӗрлӗ енӗсене курма хăнăхать; харпăр хăй курăмне е шухăшне йӗркелесе калама, теприсен курăмӗ-шухăшӗсене итлеме-тăнлама, ăнланма, кирлӗ пулсан хушса калама вӗренет; вӗрентекен ыйтăвне кӗскен е тӗплӗн хуравлама, кӗске монолог йӗркелеме, чӗлхен илемлӗх мелӗсемпе каласа панă чух усă курма пултарать.

***Йӗркелӳ ӗç-хӗлӗсем:*** ача пӗр ыйтăвах тӗрлӗрен хуравлама май пулнине пӗлет, хăй шухăшне вуланă материалпа çирӗплетме пултарать; хуть мӗнле ӗçе те планламаллине пӗлет, план тума вӗренет, юлташӗсем е вӗрентекен хакланине кура ӗç йӗркине улшăнусем кӗртме пултарать; мӗне вӗреннине,

вĕреннин шайĕпе пахалăхне палăртма вĕренет; йывăрлăхсене çĕнтермелли майсене шыраса тупма хăнăхать.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- **с**одержание ăнланас тĕллевпе текста сасăпа е ăшра вулани, сасăпа вуланă чух орфоэпи тата интонаци нормисене пăхăнни;

- текст планне туни, унпа усă курса текст содержанине калани;

- пысăках мар текст содержанине каласа пама пултарни;

- 4-мĕш класра вуланă-тишкернĕ литература хайлавĕсен содержанине тата вĕсен авторĕсене пĕлни;

- илемлĕ литература хайлавĕ е унти пĕр-пĕр сăнар çинчен ĕнентерӳллĕ каласа пама пултарни, каланине хайлавăн фрагменчĕсемпе е уйрăм йĕркесемпе çирĕплетни;

- хăйпе калаçакан çын калани çине мĕнле пăхнине (килĕшни е килĕшменни пирки) пĕлтерме пултарни;

- тĕрлĕ задачăсене татса парас тĕллевпе (сĕннĕ спискпа вулама, палăртнă темăпа каласа пама хатĕрленме) харпăр хăй тĕллĕн библиотекăра кĕнеке суйласа илме пултарни;

- пĕчĕк ушкăнра ĕçлеме пĕлни: вуланă хайлавсен сăнарĕсем çинчен мĕн шутланине пĕр-пĕрне каласа пани, пĕрле вĕренекенсем мĕн каланине итлени-йышăнни;

- чĕлхен илемлĕх мелĕсемпе сăнарсене хакланă чух усă курни;

- текстсенче вĕрентсе каланине (морале) палăртма, çунатлă сăмахсене тупма пултарни;

- текста пайсем (эпизодсем) çине пайлама пĕлни;

- ушкăнпа ĕçлесе уйрăм хайлава е хайлавăн пĕр-пĕр пайне курăмлă мелсемпе (жест, алла вылятни, интонаци) усă курса выляса кăтартни;

- панă темăпа пысăках мар текст хайлама, харпăр хăйĕн шухăшĕпе паллаштарма пултарни.

**Вĕренӳ предмечĕн содержанийĕ**

**4 класс**

*Асран кайми çу кунĕсем (4 сехет)*

**Петĕр Çăлкуç** «Эс чăвашла пĕлетĕн-и».

**Анатолий Смолин** «Пулăра».

**Юрий Вирьял** «Çырмари концерт»

**Георгий Орлов** «Çуллахи вăрманта»

**Уйăп Мишши** «Çуллахи каникул», «Шыва кĕни»

**Ольга Савандеева** «Микула пичче кучченеçĕ»

***Литература пĕлĕвĕн кўртĕмĕ.*** Итлекен, вулакан рольне ăса хывни. Хайлав ячĕ, авторĕ. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ, жанрĕ. Фольклорăн вак жанрĕсем: ваттисен сăмахĕсем. Сăвă. Калав.

*Ачалăх (4 сехет)*

**Виталий Шемекеев** «Футболист пулатăп»

**Николай Ишентей** «Çапăçман ачасем»

**Альбина Юрату** «Кукаçи»

**Нина Пăрчăкан** «Ĕçчен Петĕр»

**Роза Шевлепи** «Ют хăяр»

**Петĕр Ялкир** «Ĕмĕт пысăк»

***Литература пĕлĕвĕн кўртĕмĕ.*** Итлекен, вулакан рольне ăса хывни. Хайлав ячĕ, авторĕ. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ, тĕп сăнарсем. Фольклорăн вак жанрĕсем: ваттисен сăмахĕсем. Сăвă. Калав.

*Чăваш çĕршывĕ – тăван çĕршыв (4 сехет)*

**Зоя Сывлăмпи** «Чăваш чĕлхи»

**Иван Малкай** «Тăван тавралăх»

**Геннадий Волков** «Ылтăн çĕр»

**Ара Мишши** «Юратнă хула»

***Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ.*** Итлекен, вулакан рольне ăса хывни. Хайлав ячĕ, авторĕ. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ, тĕп сăнар. Фольклорăн вак жанрĕсем: ваттисен сăмахĕсем. Сăвă. Калав. Рифма. Танлаштару.

***Çут çанталăк тĕнчи (6 сехет)***

**Николай Ларионов-Йĕлмел** «Хуралçă кушак»

«Вĕçкĕн çерçи», «Кушакпа Çерçи» **юмахсем**

**Людмила Симонова** «Тăпăртăк качака»

«Тилĕпе Тăрна» **(юмах)**

**Герасим Харлампьев** «Кӳлĕ хĕрринче»

**Ольга Тургай** «Çулçă»

**Николай Ытарай** «Йытăпа кушак»

**ОльгаТургай** «Юлташпа вăйсăрри те вăйлă»

**Альбина Юрату** «Вăрман»

**Александр Савельев-Сас** «Тухтăр»

**Григорий Луч** «Тилĕ ташши»

**Александр Галкин** «Талпас Карсак»

***Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ.*** Итлекен, вулакан рольне ăса хывни. Хайлав ячĕ, авторĕ. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ, тĕп сăнар. Фольклорăн вак жанрĕсем: ваттисен сăмахĕсем. Йăла-йĕрке, чĕр чунсем çинчен калакан, асамлă юмахсем. Автор тата халăх юмахĕсем. Тĕрлĕ жанрлă хайлавсем.

***Сивĕ хĕл çитрĕ (6 сехет)***

**Александр Пăртта** «Хĕл юмахĕ»

**Надежда Ильина** «Хĕл çитрĕ»

**Уйăп Мишши** «Хĕл çитрĕ»

**Арсений Тарасов** «Чуна хывнă илем»

**Александр Кăлкан** «Юр çăвать»

**Слован Савкай** «Елкăра»

**Герасим Харлампьев** «Уйăпсем»

**Герасим Харлампьев** «Çăткăн чакак»

**Григорий Луч** «Кукăр сăмса»

***Литература пĕлĕвĕн кўртĕмĕ.*** Итлекен, вулакан рольне ăса хывни. Хайлав ячĕ, авторĕ. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ, тĕп сăнар. Фольклорăн вак жанрĕсем: ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем. Сăвă. Калав. Танлаштару. Сăпатлантару.

***Манăн çемье (4 сехет)***

**Всилий Давыдов-Анатри** «Юратнă анне»

**Геннадий Мальцев** «Асанне хăçан канать-ши?»

**Николай Симунов** «Турат вăррисем»

**Людмила Николаева** «Пĕчĕк пулăшакан»

**Лев Толстой** «Пахчаçăпа унăн ывăлĕсем»

**Вячеслав Ар-Серги** «Аслашшĕн вуннăмĕш пўрни»

***Литература пĕлĕвĕн кўртĕмĕ.*** Итлекен, вулакан рольне ăса хывни. Хайлав ячĕ, авторĕ. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ. Рифма. Фольклорăн вак жанрĕсем: ваттисен сăмахĕсем. Танлаштару. Сăвă. Калав. Притча.

***Эпир - туслă ачасем (6 сехет)***

**Слован Савкай** «Çулла»

**Елен Нарпи** «Çумламан йăран»

**Лидия Сарине** «Кашкăрпа Пакша»

**Геннадий Мальцев** «Пытанма юратакан»

**Геннадий Волков** «Пуç пӳрнене те юлташ кирлĕ»

**Геннадий Волков** «Суяпа инçе каяймăн»

**Василий Сухомлинский** «Пан улми»

***Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ.*** Итлекен, вулакан рольне ăса хывни. Хайлав ячĕ, авторĕ. Хайлав теми, тĕп шухăшĕ. Жанр. Фольклорăн вак жанрĕсем: ваттисен сăмахĕсем. Сăвă. Юмах. Пьеса.

## Литература вулав урокĕсене тема тата сехет тăрăх пайланин тĕслĕхĕ (пурĕ 34 сехет)

| **Урок теми** | **Сехет шучĕ** | **Урокăн шалаш тытăмĕ** | **Ачасен тĕп ĕç-хĕлĕ** |
|---|---|---|---|
| ***1. Асран кайми çу кунĕсем.*** | **4** | | |
| 1.1. Çу кунĕсем хыççăн.<br><br><br><br><br>1.2. Çу кунĕсен пархатарĕ.<br><br><br><br><br>1.3. Çуллахи каникул. | **1**<br><br><br><br><br>**1**<br><br><br><br><br>**1** | **Петĕр Çăлкуç** «Эс чăвашла пĕлетĕн-и».<br>**Анатолий Смолин** «Пулăра».<br><br>**Юрий Вирьял** «Çырмари концерт»<br>**Георгий Орлов** «Çуллахи вăрманта»<br><br>**Уйăп Мишши** «Çуллахи каникул», | «Литература вулавĕ» кĕнекепе паллашаççĕ, тытăмне тишкереççĕ. Пай темипе паллашаççĕ, ку пайра мĕн çĕнни пĕлессине, мĕн тума вĕренессине пĕлеççĕ, мĕн çинчен вулассине ăнкараççĕ. Вĕрентекен чăвашла вуланине итлеççĕ, хăйсем те чăвашла вулаççĕ. Хайлавпа çыхăннă ыйтусене хуравлаççĕ. |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1.4. Мĕн тусассăн лайăх, мĕн тусассăн япăх. | **1** | «Шыва кĕни»<br><br>**Ольга Савандеева**<br>«Микула пичче кучченеçĕ» | Хайлав авторĕпе паллашаççĕ. Кĕнекери ӳкерчĕксене тишкереççĕ, вĕсем пулăшнипе хайлава туллинрех ăнланаççĕ. Хайлавăн планне тăваççĕ, план тăрăх каласа пама вĕренеççĕ. Ваттисен сăмахĕсемпе паллашаççĕ. Çуллахи каникулта мĕн туни çинчен калаçаççĕ, каласа параççĕ. Хайлавсен жанрĕсене пĕлеççĕ. Хăйсен вулавне хаклама вĕренеççĕ. |
| ***2. Ачалăх.*** | 4 | | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 2.1. Выляса пурăнма вĕренетпĕр.<br><br><br><br><br><br>2.2. Вĕренетпĕр ĕçлеме.<br><br><br><br><br><br><br><br>2.3. Лайăх çын пуласчĕ. | 2<br><br><br><br><br><br>1<br><br><br><br><br><br><br><br>1 | **Виталий Шемекеев** «Футболист пулатăп»<br>**Николай Ишентей** «Çапăçман ачасем»<br><br><br>**Альбина Юрату** «Кукаçи»<br>**Нина Пăрчăкан** «Ĕçчен Петĕр»<br><br><br>**Роза Шевлепи** «Ют хăяр»<br>**Петĕр Ялкир** «Ĕмĕт пысăк» | Пай темипе паллашаççĕ. Ку пайра мĕн çĕнни пĕлессине, мĕн тума вĕренессине пĕлеççĕ, мĕн çинчен вулассине ăнкараççĕ.<br>Вĕрентекен вуланине итлеççĕ, хăйсем те чăвашла вулаççĕ. Пĕлекен сăмахсем, ўкерчĕкĕсем тăрăх хайлавăн содержанине ăнланма тăрăшаççĕ.<br>Хайлавăн тĕп шухăшне палăртаççĕ.<br>Хайлавсене сăвăласа та, сăвăламасăр та калăплама май пуррине палăртаççĕ, прозăлла хайлавсем-калавсем итлеççĕ. Калав илемлĕ хайлавăн пĕр тĕсĕ пулнине ăша хываççĕ.<br>Рольпе вулаççĕ, хăйсен вулавне хаклаççĕ. Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлеççĕ.<br>Асатте, кукаçи çинчен калав тăваççĕ. |
| **3. *Чăваш çĕршывĕ – тăван çĕршыв.*** | 4 | | |
| 3.1. Тăван чĕлхе.<br><br><br><br><br><br>3.2. Ылтăн çĕр. | 1<br><br><br><br><br><br>2 | **Зоя Сывлăмпи** «Чăваш чĕлхи»<br>**Иван Малкай** «Тăван тавралăх»<br><br>**Геннадий Волков** «Ылтăн çĕр» | Пай темипе паллашаççĕ. Ку пайра мĕн çĕнни пĕлессине, мĕн тума вĕренессине пĕлеççĕ, мĕн çинчен вулассине ăнкараççĕ.<br>Вĕрентекен вуланине итлеççĕ. Сасăпа, ăшра вулаççĕ. Пĕлекен сăмахсем тăрăх хайлавăн |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 3.3. Юратнă хула. | 1 | **Ара Мишши** «Юратнă хула» | содержанине тавçăраççĕ. Хайлавăн темине, тĕп шухăшне палăртаççĕ. Ваттисен сăмахĕсемпе паллашаççĕ, вĕсен тытăмне сăнаççĕ, вăлтса каланине ăнланаççĕ. Сăвăри йĕрке вĕçĕсем пĕр пек янăранине палăртаççĕ. Сăвăсенче поэтсем тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине сăнаççĕ. Литературăри танлаштару мелĕпе паллашаççĕ. Хайлавсенче танлаштару мелĕпе усă курнă вырăнсене тупса вулаççĕ. Шупашкар çинчен пĕлтерӳ хатĕрлеççĕ. |
| **4.*Çут çанталăк тĕнчи*** | 6 | | |
| 4.1. Чĕр чун тĕнчи.<br><br>4.2. Халăх юмахĕсенчи çерçи сăнарĕ.<br><br>4.3. Тиллит-тиллит тилĕ тус. | 1<br><br>1<br><br>1 | **Людмила Симонова** «Тăпăртăк качака» **Николай Ларионов-Йĕлмел** «Хуралçă кушак» **Герасим Харлампьев** «Кӳлĕ хĕрринче»<br><br>«Вĕçкĕн çерçи», «Кушакпа Çерçи» юмахсем<br><br>«Тилĕпе Тăрна» юмах **Григорий Луч** «Тилĕ | Пай темипе паллашаççĕ. Ку пайра мĕн çĕнни пĕлессине, мĕн тума вĕренессине пĕлеççĕ, мĕн çинчен вулассине ăнкараççĕ. Вĕрентекен вуланине итлеççĕ. Вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе усă кураççĕ. Пĕлекен сăмахсем тăрăх хайлавăн содержанине тавçăраççĕ. Калав мĕн çинчен пулнине, калав темине уçăмлаççĕ. Калав темипе унта мĕн калани, ячĕ мĕнле çыхăннине, калав ятĕнче унăн теми палăрнине сăнаççĕ. Хайлава тивĕçтерекен ваттисен сăмахĕсене |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 4.4. Чĕр чун тĕнчинчи туслăх.<br><br>4.5. Кĕске хӳре, чалăш куç.<br><br>4.6. Вăрман пуянлăхĕ. | 1<br><br>1<br><br>1 | ташши»<br><br>**Николай Ытарай** «Йытăпа кушак»<br>**ОльгаТургай** «Юлташпа вăйсăрри те вăйлă»<br><br>**Александр Савельев-Сас** «Тухтăр»<br>**Александр Галкин** «Талпас Карсак»<br><br>**Альбина Юрату** «Вăрман»<br>**Ольга Тургай** «Çулçă» | вĕрентекен пулăшнипе суйласа илеççĕ. Юмахсен виçĕ тĕсĕпе (йăла-йĕрке, чĕр чунсем çинчен çырнă, асамлă юмахсем) паллашаççĕ. Чĕр чунсем çинчен çырнă юмахсене вулаççĕ, вĕсен уйрăмлăхĕсене асăрхаççĕ. Хайлавсен жанрĕсене палăртаççĕ. Халăх юмахĕсемсĕр пуçне автор юмахĕсем пулнине пĕлеççĕ, вĕсене вулаççĕ, тишкереççĕ. Хайлавсенче танлаштарусене тупаççĕ. Хайлавăн пĕр-пĕр пайне илемлĕ вулама вĕренеççĕ. Пĕр-пĕрин вулавне палартнă виçесемпе усă курса хаклаççĕ. |
| **5. Сивĕ хĕл çитрĕ** | 6 | | |
| 5.1. Хĕл юмахĕ.<br><br>5.2. Илеме курма вĕренер.<br><br>5.3. Хĕл уявĕ. | 1<br><br>1 | **Александр Пăртта** «Хĕл юмахĕ»<br>**Надежда Ильина** «Хĕл çитрĕ»<br><br>**Уйăп Мишши** «Хĕл çитрĕ»<br>**Арсений Тарасов** «Чуна хывнă илем»<br><br>**Александр Кăлкан** | Пай темипе паллашаççĕ, ку пайра мĕн тума вĕренессине пĕлеççĕ, мĕн çинчен вулассине ăнкараççĕ. Вĕрентекен вуланине итлеççĕ, хăйсем те чăвашла текстсене сасăпа, ăшра вулаççĕ. Пĕр темăпах темиçе автор хайлавсем ăслама пултарнине, анчах кашни автор темăна хăйне май уçса панине, хăйĕн туйăмне çырса кăтартнине |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | 1 | «Юр çăвать» **Слован Савкай** «Елкăра» | ăнкараççĕ. Хайлав сăнарсăр пулма пултарайманнине чухлаççĕ. Сăвă тата проза уйрăмлăхĕсене асăрхаççĕ. |
| 5.4. Хĕллехи хăнасем – уйăпсем. | 1 | **Герасим Харлампьев** «Уйăпсем» | Çулталăк вăхăчĕсен илемне курма хăнăхаççĕ. Сăвăсенче ўкернĕ туйăмсене ăша хываççĕ. |
| 5.5. Çăткăн чакак. | 1 | **Герасим Харлампьев** «Çăткăн чакак» | Сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăм палăрнине сăнаççĕ. |
| 5.6. Кукăр сăмсаллă кайăк. . | 1 | **Григорий Луч** «Кукăр сăмса» | Калава вуласа ăнланма, ыйтусене хуравлама хăнăхаççĕ. Тупмалли юмахсампе паллашаççĕ, вĕсен тытăмне сăнаççĕ, вăлтса каланине ăнланаççĕ. Танлаштару тата сăпатлантару мелĕсене сăнаççĕ, ку мелсемпе хăйсен пуплевĕнче усă кураççĕ. Хайлав темине, тĕп шухăшне палăртаççĕ. Калава ят параççĕ. Текста пайсене уйăраççĕ, кашни пая ят параççĕ. Хатĕр планпа усă курса хайлав содержанине калаççĕ, ăна 97-мĕш страницăра панă |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | таблицăпа усă курса хаклаççĕ. |
| ***6. Манăн çемье.*** | 4 | | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 6.1. Чи çывăх çынсем.<br><br>6.2. Кил-çурт пурне те кирлĕ.<br><br>6.3. Ĕç çынна илем кӳрет.<br><br>6.4. Аслисен пурнăçĕ – пирĕншĕн тĕслĕх. | 1<br><br>1<br><br>1<br><br>1 | **Всилий Давыдов-Анатри** «Юратнă анне»<br>**Геннадий Мальцев** «Асанне хăçан канать-ши?»<br><br>**Николай Симунов** «Турат вăррисем»<br><br>**Людмила Николаева** «Пĕчĕк пулăшакан»<br>**Лев Толстой** «Пахчаçăпа унăн ывăлĕсем»<br><br>**Вячеслав Ар-Серги** «Аслашшĕн вуннăмĕш пӳрни» | Пай темипе паллашаççĕ. Ку пайра мĕн çĕнни пĕлессине, мĕн тума вĕренессине пĕлеççĕ, мĕн çинчен вулассине ăнкараççĕ.<br>Вĕрентекен вуланине итлеççĕ. Сасăпа, ăшра вулама хăнăхаççĕ. Пĕлекен сăмахсем тăрăх хайлавăн содержанине тавçăраççĕ.<br>Ваттисен сăмахĕсемпе паллашаççĕ, вĕсен тытăмне сăнаççĕ, вăлтса каланине ăнланаççĕ. Сăвăри йĕрке вĕçĕсем пĕр пек янăранине палăртаççĕ. Сăвăсенче поэтсем тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине сăнаççĕ.<br>Танлаштарусене тупаççĕ.<br>Пĕр-пĕрин вулавне хаклама хăнăхаççĕ. Хайлавăн жанрне, темипе тĕп шухăшне палăртаççĕ.<br>Калава рольпе вулаççĕ, пĕр-пĕрин вулавне хаклаççĕ. Ваттисене хисеплемелли çинчен калаçаççĕ, вĕсем çинчен каласа параççĕ. |
| **7. Эпир - туслă ачасем.** | 6 | | |
| 7.1. Çу кунĕсене усăллă ирттерер. | 1 | **Слован Савкай** «Çулла»<br>**Елен Нарпи** «Çумламан йăран» | Пай темипе паллашаççĕ, ку пайра мĕн çĕнни пĕлессине, мĕн тума вĕренессине пĕлеççĕ, мĕн çинчен вулассине |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 7.2. Юмах-халап юптарар.<br><br>7.3. Чĕр чун тĕнчинчи туссем.<br><br>7.4. Пĕрлĕхре – вăй.<br><br>7.5. Суяпа инçе каяймăн.<br><br>7.6. Кăмăла кура кăмăл. | 1<br><br>1<br><br>1<br><br>1<br><br>1 | **Лидия Сарине** «Кашкăрпа Пакша»<br><br>**Геннадий Мальцев** «Пытанма юратакан»<br><br>**Геннадий Волков** «Пуç пўрнене те юлташ кирлĕ»<br><br>**Геннадий Волков** «Суяпа инçе каяймăн»<br><br>**Василий Сухомлинский** «Пан улми» | ăнкараççĕ. Вĕрентекен вуланине итлеççĕ, чăвашла вулаççĕ. Пĕлекен сăмахсем тăрăх хайлавăн содержанине тавçăраççĕ. Калава вулаççĕ, ансат тишкереççĕ. Калав мĕн çинчен пулнине ăнланаççĕ, калав темине уçăмлаççĕ. Калав темипе унта мĕн калани, ячĕ мĕнле çыхăннине, калав ятĕнче унăн теми палăрнине сăнаççĕ. Хайлав содержанийĕпе çыхăннă ваттисен сăмахĕсене вĕрентекен пулăшнипе суйласа илеççĕ. Пьесăпа паллашаççĕ, ăна вулама вĕренеççĕ. Рольпе вуланине 131-мĕш страницăра панă таблицăпа усă курса хаклаççĕ. Панă планпа усă курса хайлав содержанине каласçĕ. Хайлав планне тăваççĕ, ăна 126-мĕш страницăри таблицăпа усă курса хаклаççĕ. Вĕрентес тĕллевпе çырнă хайлавсемпе ĕçлеççĕ. |

## Литература вулавĕн урокĕсене йĕркелессин уйрăмлăхĕсем

Тăваттăмĕш класра вĕренекенсене вулама „Литература вулавĕ“ кĕнекене жанр тĕлĕшĕнчен уйрăлса тăракан тĕрлĕ хайлавсем – калавсем, сăвăсем, юмахсем кĕртнĕ. Ачасене халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсемпе – ваттисен

сăмахĕсемпе, тупмалли юмахсемпе – паллаштармалли материал та пур вĕренӳ кĕнекинче.

Литература вулав урокĕсене 4-мĕш класра та, 1, 2, 3-мĕш классенчи пекех, вулав материалне, вĕренекенсен ӳсĕмне, пултарулăхне, вĕсен вулав пахалăхĕн шайне тĕпе хурса йĕркелемелле. Пĕтĕмĕшле илсен, литература вулав урокĕсем киле панă ĕçе тĕрĕсленипе кӳртĕм калаçуран пуçланаççĕ.

4-мĕш класра киле панă ĕçе тĕрĕслес ĕçе ачасене хăйсене анлăн хутшăнтармалла. Тĕслĕхрен, юнашар ларакан ачасем пĕр-пĕрне килте вулама вĕреннĕ хайлава вуласа параççĕ, таблицăпа усă курса харпăр хăй тата пĕр-пĕрин ĕçне хакласçĕ: кашни хăй вуланине хакласа таблицăна балл лартать, юнашар ларакан ача юлташĕ вуланине хаклать. Пăхмасăр вĕренме панă сăвва та пĕр парта хушшинче ларакан ачасем пĕр-пĕрне каласа параççĕ, хаклаççĕ, кайран ик-виç ача сăвва пĕтĕм класс илтмелле калать, ыттисем, вĕрентекенпе пĕрле вĕсем каланине йышăннă виçесемпе хаклаççĕ.

Кӳртĕм калаçăвăн тĕллевĕ – вĕренекенсене урокра вуламалли хайлавăн е хайлавсен содержанийĕсене ăнланма пулăшасси, ăнланма кирлĕ пĕлӳ парасси, хайлавсене вулас кăмăл-туйăма çуратасси, тимлĕ итлеме е вулама хатĕрлесси. Урокăн çак тапхăрĕнче вĕрентекен ачасене хайлавăн авторĕпе (урокра вуламалли хайлавсем темиçе пулсан – авторĕсемпе) паллаштарать: унăн пурнăçĕпе литературăри ĕçĕ-хĕлĕ çинчен кĕскен каласа парать, сăн ӳкерчĕкне, çыравçăн кĕнекисене кăтартать. Урокра 1, 2, 3-мĕш классенче паллашнă авторсен хайлавĕсем пулсан вĕрентекен ытти çыравçăсен сăн ӳкерчĕкĕсем хушшинче вĕсен сăнăсене тупма сĕнет. Унтан ачасем çыравçăсем çинчен мĕн пĕлнине каласа параççĕ, вĕрентекен хушса калать, 1, 2, 3-мĕш класра вуланă хайлавĕсене аса илтерет. Çапла майпа ачасен пĕлĕвĕ ӳсет, тавракурăмĕ анлăланать.

Кӳртĕм калаçăва тĕрлĕ майпа ирттерме пулать. Мелсене суйласа илнĕ чух вĕрентекенĕн ачасем урок темипе ку таранччен мĕн вулани-илтнине, курни-сăнанине шута илмелле, вĕренекенсене хăйсене калаçтарма тарăшмалла. Паллах, калаçăва тухăçлă йĕркелес тесен ыйтусемпе ĕçсене тĕрĕс, уçăмлă, логика тĕлĕшĕнчен çыхăнуллă лартмалла-хушмалла. Кунсăр пуçне, кӳртĕм калаçу вăхăтĕнче тупмалли юмахсемпе, пĕчĕк сăвăсемпе усă курни ачасен тимлĕхне, вĕсен вулас кăмăлне ӳстерме май парать. Çавăн пекех тĕрлĕ йышши курăм хатĕрĕсемпе усă курни те вĕрентекене кӳртĕм калаçăвăн тĕллевĕсене тухăçлăрах пурнăçлама пулăшать. Енчен те кӳртĕм калаçу урокăн пĕтĕмĕшле темипе çыхăннă пулсан, вулав умĕнхи ĕçсем уйрăм хайлавăн содержанийĕпе çыхăннă ĕçсем пулаççĕ. Ку ĕçсене кĕнекере панă йĕркепе туса ирттермелле. Ачасем хайлава вулас умĕн çакăн пек ĕçсем тăваççĕ: ятне вулаççĕ, ун патне панă ӳкерчĕке сăнаççĕ, словарьпе паллашаççĕ.

Вĕсем тăрăх хайлав мĕн çинчен пулма пултарни пирки хăйсен шухăшне калаççĕ. Унтан хайлава вĕрентекен е пĕр-пĕр ача вуланине итлеççĕ. Хăш-пĕр чухне вĕрентекен чарăнусем туса, вуланă май ачасене ыйтусем парса ĕçлеттерет, словарь ĕçне те вуланă май йĕркелеме пултарать. Паллах, кун пек ĕçлени вуламалли текст ачасемшĕн йывăртарах пулсан çеç вырăнлă. Çăмăлтарах хайлавсемпе ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра вуласа паллашаççĕ, унтан текста пайăн-пайăн черетпе сасăпа вулаççĕ. Вуланă хыççăн вĕрентекен ыйтусем парса текста тарăнрах, туллинрех ăнланма пулăшать, хайлав содержанийĕпе çыхăннă тĕрлĕ ĕç тутарттарать. 4-мĕш класра вĕрентекенĕн ыйтусемпе ĕçсене чăвашлах пама-хушма тăрăшмалла, ачасем ăнланмасан çеç вырăсла тепĕр хут калама юрать е хайлав хыççăн кĕнекере панă ĕçсем хушшинче шыраса тупма сĕнмелле.

Кашни урок вĕçĕнче ачасем урокра мĕн вуланине, мĕн тунине, мĕн çĕнни пĕлнине пĕтĕмлетеççĕ, хăйсен пĕлĕвĕсен, хăнăхăвĕсен шайне (илемлĕ вулама пĕлнине, ыйтусене хуравлама пултарнине, хайлав, сăнар çинчен каласа пама, ăнлантарма пултарнине тата ытти те) хаклаççĕ. Кĕнекере ачасен ĕçне мĕнле хакламаллин тĕсĕсене таблицăсем евĕр панă. Уйрăм пайсен пуçламăшĕнче панă ваттисен сăмахĕсем патне урок вĕçĕнче пĕтĕмлетӳ тунă чух таврăнма пултараççĕ, урокра вуланă кашни хайлав патне ваттисен сăмахĕсенчен хăшĕ шухăшĕпе çывăх пулнине калаççĕ. Пурнăçри мĕнле самантсенче вĕсемпе усă курни вырăнлă пулнине палăртаççĕ.

Юлашки урокра вĕрентекен ачасене мĕнле авторсене астуса юлни, мĕнле хайлавсем килĕшни çинчен калаçтарать, çулла чăвашла вулама манмалла марри çинчен асăрхаттарать. Вулама сĕннĕ хайлавсен е авторсен пĕчĕк списокне парсан та аван.

## Уроксем

**Пай: Асран кайми çу кунĕсем**

### 1-мĕш урок

**Тема:** Çу кунĕсем хыççăн.

**Урок тĕллевĕ:** 4-мĕш класри литература вулав урокĕсен пĕтĕмĕшле тĕллевĕсемпе задачисене палăртасси, Петĕр Çăлкуçăн «Эсĕ чăвашла пĕлетĕн-им?» калавĕпе тата Анатолий Смолинăн «Пулăра» сăввипе ĕçлесе чăвашла вулас, вуланă хайлавпа ĕçлес хăнăхусене аса илтесси.

**Пулмалли результатсем**: «Литература вулавĕ. 4 класс» вĕренӳ хатĕрĕ чăвашла çырнă илемлĕ литературăпа ĕçлемелли кĕнеке пулнине палăртни; унпа мĕнле усă курмаллине, йышăннă паллăсене ăнланни; ваттисен сăмахĕсенчи тарăн шухăша, хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртма, вуланине панă виçесене пăхăнса хак пама хăнăхса пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Петĕр Çăлкуçпа Анатолий Смолинăн сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен кĕнекисен выставки.

**Урок юхăмĕ**

1. Кӳртĕм калаçу.

*Вĕрентекен ачасене 4-мĕш класра литература вулав урокĕсенче чăваш ача-пăча литературин тата халăх сăмахлăхĕн паха тĕслĕхĕсемпе малалла паллашасси, чăвашла вулав хăнăхăвĕсене якатасси, текстпа ĕçлес ханăхусене аталантарасси çинчен пĕлтерет, çак ĕçсене «Литература вулавĕ. 4 класс» кĕнекепе ĕçлесе пурнăçласси çинчен калать, кĕнекене тишкерме ыйтать.*

— Мы уже опытные читатели. Скажите, пожалуйста, с чего мы начинаем знакомство с книгой? (*Читаем название, смотрим, кто автор. Рассматриваем иллюстрации. Если это учебная книга, изучаем систему условных знаков.)*

*Ачасем кĕнекене тишкереççĕ: авторĕсене асăнаççĕ, кĕнекере йышăннă паллăсемпе паллашаççĕ, çак паллăсене кĕнеке страницисенче шыраса тупаççĕ, ӳкерчĕксене сăнаççĕ, тупмалли тăрăх пайсен темисемпе паллашаççĕ.*

— Кĕнекесене 3-мĕш страницăна уçăр. Пĕрремĕш пай мĕн ятлă? *(Асран кайми çу кунĕсем).*
— Ӳкерчĕке сăнăр. Мĕн куратăр?
— Мĕн çинчен пулĕç-ши çак пайри хайлавсем?

2. Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлени.

*Ачасем ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ.*

— Ребята, вы уже заметили, что в наших учебниках каждый раздел начинается с пословиц. Как вы думаете, какую роль играют эти пословицы? Как они связаны с каждым разделом? *(Пословицы перекликаются с главной мыслью произведений, включенных в раздел. Они помогают глубже понять то, что хотели сказать авторы рассказов, стихотворений своим читателям.)*
— Какую смысловую нагрузку несёт первая пословица к этому разделу. Она же не про лето, не про отдых летом?

*Ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн вĕрентекен пĕтĕмлетет.*

— Действительно, эта пословица, наверное, относится не только к этому разделу. «Тăван чĕлхе – иксĕлми ăс-тăн çăл куçĕ». Эта пословица говорит нам о том, что нужно изучать родной язык, читать на родном языке, открывать его секреты и возможности. Можно сказать, что эта пословица о целях и задачах уроков литературного чтения на родном языке. Мы на этих уроках будем читать и слушать произведения чувашских писателей, знакомиться с новыми словами и выражениями, учиться у мастеров чувашского слова излагать свои мысли на родном языке.
— Прочитайте вторую пословицу. *(«Кашни япалан хăйĕн вăхăчĕ»)*
— Эта пословица как перекликается с темой раздела?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене итлет, вĕсене пĕтĕмлетет.*

*Çавăн пекех виççĕмĕш ваттисен сăмахĕпе ĕçлеççĕ.*

3. Петĕр Çăлкуçăн «Эсĕ чăвашла пĕлетĕн-им» калавĕпе ĕçлени.

— Атьăр пĕрремĕш калавпа паллашар. Вăл мĕн ятлă? Авторĕ кам? Эпир Петĕр Çăлкуçăн мĕнле хайлавĕсене вуланă?

*Ачасем Петĕр Çăлкуçăн вуланă хайлавĕсене аса илеççĕ, 6-мĕш страницăра çăравçă çинчен кĕскен çырса панине вулаççĕ. Вĕрентекен Петĕр Çăлкуçăн сăн ӳкерчĕкне, унăн кĕнекисене кăтартать.*

— Калав патне панă ӳкерчĕке сăнăр. Словарьпе паллашăр. Ку калав мĕн çинчен пулма пултарать-ши? Какое предположение о содержании рассказа вы бы сделали?

*Ачасем хăйсен шухăшĕсене калаççĕ, унтан калава пайăн-пайан вулаççĕ. Вĕрентекен ыйтусем парса мĕн вуланине ăнланма пулăшать.*

— О чём узнали из первого абзаца о герое рассказа?
— Во сколько пришёл в школу рассказчик? Что он там увидел?
— Какие разговоры можно было услышать от детей до начала уроков в первый день учёбы?
— Кого начал искать герой рассказа?
— С кем он решил заговорить?
— Какой конфуз вышел в ходе беседы детей?
— Как вы думаете, почему дети не узнали друг друга?

*Вуласа тухнă хыççăн вĕрентекен ыйтать?*

— От чьего имени ведётся рассказ в произведении? В каком месте стало понятно, что рассказывает Миша Хураçкин?
— Как зовут его друзей?

— Прочитайте ещё раз последний абзац рассказа. Как вы понимаете эти слова?
— Петĕр Çăлкуç назвал рассказ «Эсĕ чăвашла пĕлетĕн-им?» Как вы думаете, почему?
— Автор для заголовка взял слова из рассказа. Ещё какие слова из рассказа могли бы подойти для названия? Почему вы так считаете?
— Давайте перечитаем разговор трёх друзей. Как меняется тон речи героев в ходе беседы?
— В группах договоритесь, как нужно читать слова каждого героя. Потренируйтесь в чтении и продемонстрируйте классу ваше видение выразительного чтения этого кусочка рассказа.

*Ачасем пĕр вăхăт ушкăнсенче илемлĕ вулама хатĕрленеççĕ. Унтан кашни ушкăн мĕнле хатĕрленнине кăтартса ытти ачасене вуласа парать. Кашнин вулавне хаклаççĕ.*

4. Анатолий Смолинăн «Пулăра» сăввипе ĕçлени.

— Малалла тепĕр хайлавпа паллашăпăр. Унăн авторĕ кам?

*Ачасем Анатолий Смолин çинчен 8-мĕш страницăра çырса панине вулаççĕ, вĕрентекен çыравçă çинчен каласа панине итлеççĕ. Унтан ачасем сăвва вулас умĕн панă ĕçсене тăваççĕ, сăвăпа хăйсем тĕллĕн вуласа паллашаççĕ, кĕнекере панă ыйтусене хуравлаççĕ, ĕçсене тăваççĕ.*

5. Киле ĕç пани.
— Анатолий Смолинăн «Пулăра» сăввине кĕнекере панă виçесене пăхăнса илемлĕ вулама хатĕрленмелле.
6. Урока пĕтĕмлетни.
— Мĕнле çыравçăсен хайлавĕсемпе паллашрăмăр?
— Эсир Петĕр Çăлкуçпа Анатолий Смолинăн литературăри ĕçĕсенче мĕнле пĕрпеклĕх куртăр? *(Они оба были не только писателями, но и переводчиками. Переводили произведения русских писателей на чувашский язык и чувашских авторов на русский.)*
— Сегодня мы читали о летнем отдыхе детей. А вы как отдыхали? Что могли бы рассказать на эту тему о себе?

## 2-мĕш урок

**Тема:** Çу кунĕсен пархатарĕ.

**Урок тĕллевĕ:** Юрий Вирьялăн «Çырмари концерт» сăввипе тата Георгий Орловăн «Çуллахи вăрманта» калавĕпе ĕçлесе чăваш чĕлхин пуянлăхне, илемне кăтартса парасси, вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртма пултарни; хайлава пĕлтерĕшлĕ пайсем çине уйăрма, план тума пĕлни; планпа

усӑ курса содержание каласа пама хӑнӑхни; чӑваш чӗлхин уйрӑмлӑхӗсемпе пуянлӑхне асӑрхани; илемлӗ хайлаври сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе усӑ курса калаҫма хӑнӑхса пыни; вуланине панӑ виҫесене пӑхӑнса хак пама пултарни.

**Кирлӗ хатӗрсем:** вӗренӳ кӗнеки, Юрий Вирьялӑн тата Георгий Орловӑн сӑн ӳкерчӗкӗсем, вӗсен кӗнекисен выставки.

**Урок юхӑмӗ**

1. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.

*Сӑвва илемлӗ вулама вӗреннине кӗнекери 9-мӗш страницӑри таблицӑпа усӑ курса хакламалла. Таблицӑна тӑваттӑмӗш юпа хушсан аван. Ӑна «Оценка одноклассника» ят памалла. Вӗрентекен таблицӑн ҫӗнӗ вариантне кашни ача валли хатӗрлет. Юнашар ларакан ачасем пӗр-пӗрне киле панӑ сӑвва вуласа параҫҫӗ. Кашни ача малтан таблицӑна хӑй вуланине хакласа балл лартать, унтан вӑл вуланине унпа юнашар ларакан юлташӗ хаклать.*

2. Кӳртӗм калаҫу.

— Ҫулла… Мӗнле илемлӗ, пархатар вӑхӑт! Пулӑ тыт, шыва кӗр, вӑрмана ҫӳре, чечексемпе килен, ҫырла-кӑмпа тат… Ӑшӑ хӗвелӗ савса пӑхать, йывӑҫӗ-курӑкӗ ешерет, кайӑкӗ-кӗшӗкӗ юрлать… Эпӗ халӗ сире сӑвӑ вуласа паратӑп. Тимлӗ итлӗр. Ҫут ҫанталӑкӑн мӗнле ӳкерчӗкне сӑнласа панӑ-ши автор ку сӑвӑра?

3. Юрий Вирьялӑн «Ҫырмари концерт» сӑввипе ӗҫлени.

   *Вӗрентекен сӑвва вуласа панӑ хыҫҫӑн ачасене ыйтусем парать:*

   - Сирӗн куҫ умне мӗнле ӳкерчӗк тухса тӑчӗ?

   - Эсир ҫулла шапасем юрланине илтнӗ-и?

   - Кӗнекесене 9-мӗш страницӑна уҫӑр, сӑвва тупӑр. Мӗн ятлӑ вӑл?

   - Кам ҫырнӑ-ши ку сӑвва? Эпир сирӗнпе ку авторӑн хайлавӗсене вуланӑ-и?

*Ачасем Юрий Вирьялӑн вуланӑ хайлавӗсене аса илеҫҫӗ. Ҫыравҫӑ ҫинчен мӗн пӗлнине каласа параҫҫӗ. Вӗрентекен хушса калать, ҫыравҫӑн кӗнекисене кӑтартать. Ҫапла ӗҫленӗ хыҫҫӑн ачасем сӑвва вулаҫҫӗ, кӗнекере панӑ ыйтусене хуравлаҫҫӗ, ӗҫсене тӑваҫҫӗ.*

— Лягушки особенно громко и дружно поют в мае, когда пруды и озёра полностью вскрываются ото льда. Действительно, это не заметить и пройти мимо невозможно.

*Шапасен ҫурхи юррине аудио ҫырса хатӗрленине итлеттерсен аван.*

— Вы послушали лягушачий концерт в аудиозаписи, послушали стихотворение в моём чтении, обсудили настроение этого стихотворения. Дома, пожалуйста, потренируйтесь в выразительном чтении, и оцените своё чтение по критериям, предложенным в нашей таблице. А на следующем уроке продемонстрируете ваше чтение всему классу.

4. Георгий Орловăн «Çуллахи вăрманта» калавĕпе ĕçлени.
*Ачасем вулав умĕнхи ĕçсене тăваççĕ, калав авторĕ кам пулнине калаççĕ. Вĕрентекен кĕскен Георгий Орлов çинчен каласа хăварать, унăн кĕнекисене кăтартать. Ун хыççăн ачасене пĕрремĕш абзаца ăшра вулама хушать.*

— Как называли июнь наши предки?
— Çĕртме – месяц пара.
— Как, по мнению автора, ещё можно назвать июнь? Вы с ним согласны? Почему?

*Ачасем иккĕмĕш абзаца та ăшра вулаççĕ.*

— Какую картину вы представили?

*Малалла ачасем калава пайăн-пайăн сасăпа вулаççĕ. Вуланă май вĕрентекен вĕсене ыйтусемпе парса ĕçлеттерет:*

— В лесу в каком месте оказался рассказчик? Что он там нашёл?
— Как описывает подберёзовик рассказчик? Найди в тексте и прочитай.
— Что узнали о подберёзовике из следующего абзаца?
— Как понял рассказчик песню пеночки?
— Что он услышал в куковании кукушки?
— От чего стало смешно рассказчику?

*Масла кăмпи çинчен калакан икĕ абзаца вĕрентекен хăй вулать.*

- Как вы думаете, почему рассказчик, увидев перевёрнутый копытом лося гриб, начал ещё искать?

— Сколько ещё маслят он нашёл?
— Какие названия есть у маслят в чувашском языке?
— В каком месте нужно искать эти грибы?

*Малаллахи тепĕр абзаца ачасем ăшра вулаççĕ.*

— Какую картину вы нарисовали в своём воображении, прочитав этот абзац?

*Юлашки абзаца вĕрентекен вулать.*

— На что наткнулся рассказчик, когда уже шёл домой?

— Как вы думаете, почему первые два предложения в этом абзаце восклицательные?
— Почему трудно было заметить белый гриб?
— Почему свою последнюю находку герой считает счастьем? Как он это объясняет?
— На сколько частей можно разделить рассказ?
— Работая в группах, придумайте заголовок к каждой части. Подготовьте пересказ, пользуясь своим планом.

*Ачасем ушкӑнсенче хушнӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ, хӑйсем тунӑ калав планӗпе паллаштараҫҫӗ, ун тӑрах кӗскен каласа параҫҫӗ.*

5. Урока пӗтӗмлетни.

— Мӗнле хайлавсем вуларӑмӑр? Авторӗсем камсем?
— Ҫуллахи кунсен пархатарӗ мӗнре?
— Тупсӑмне тупӑр: *Пӗчӗкскер, хитрескер, ҫӗр мӑкӑртса тухнӑскер, пурҫӑн тутӑр ҫыхнӑскер.*

6. Киле ӗҫ пани.
   «Ҫырмари концерт» сӑвва илемлӗ вулама вӗренсе килмелле.
   Кӑмпа ҫинчен тупмалли юмах шухӑшласа тупмалла.

## 3-мӗш урок

**Тема:** Ҫуллахи каникул.

**Урок тӗллевӗ:** Уйӑп Мишшин «Ҫуллахи каникул» тата «Шыва кӗни» сӑввисемпе ӗҫлесе илемлӗ вулав ӑсталӑхне аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавӑн темипе тӗп шухӑшне палӑртма, автор курӑмне чухлама, вуланине панӑ виҫесене пӑхӑнса хак пама хӑнӑхса пыни.

**Кирлӗ хатӗрсем:** вӗренӳ кӗнеки, Уйӑп Мишшин сӑн ӳкерчӗкӗ, унӑн кӗнекисен выставки.

### Урок юхӑмӗ

1. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.

*Малтан юнашар ларакан ачасем пӗр-пӗрне киле панӑ сӑвва вуласа параҫҫӗ, иртнӗ урокра усӑ курнӑ таблицӑпа пӗр-пӗрин вулавне хаклаҫҫӗ, унтан темиҫе ача сӑвва пурне те илтмелле вуласа парать. Вӗсен вулавне вӗрентекенпе пӗрле пӗтӗм класс хаклать.*

2. Кӳртӗм калаҫу.

— Ҫуллахи каникула эсир мӗнле ирттертӗр? Кам каласа парасшӑн?

*Ачасем каникулта мӗн туни, ӑҫта канни ҫинчен калаҫҫӗ.*

— Паян эпир урокра çуллахи каникул вăхăчĕпе çыхăннă икĕ сăвă вулăпăр. Вĕсен авторĕ - Уйăп Мишши. Ун хайлавĕсене эпир маларахри классенче вуланăччĕ-ха. Мĕн калама пултаратăр эсир Уйăп Мишши çинчен?

*Ачасене итленĕ хыççăн кĕнекере Уйăп Мишши çинчен çырса кăтартнине вулаççĕ.*

3. Уйăп Мишшин «Çуллахи каникул» сăввипе ĕçлени.

*Ачасем малтан вулав умĕнхи ĕçсене тăваççĕ, унтан вĕрентекен сăвва вуланине итлеççĕ, кайран кĕнекере панă ыйтусемпе ĕçлеççĕ.*

— Какая картина возникает перед глазами при чтении этого стихотворения?
— Какими словами описывает автор лето? Как бы описали вы?
— Прочитайте последнюю строфу стихотворения? К чему призывает автор?
— Назовите тему и главную мысль стихотворения.
— С каким настроением нужно читать это стихотворение?
— Какие ещё составляющие выразительного чтения мы знаем?
— В парах выделите ключевые слова, подумайте, как будете менять тон при чтении разных строк. Постарайтесь передать настроение автора. Подготовьте выразительное чтение этого стихотворения.

*Ачасем малтан икшерĕн ĕçлесе сăвва илемлĕ вулама хатĕрленеççĕ, унтан ытти ачасене вуласа параççĕ, пĕр-пĕрин вулавне хаклаççĕ.*

4. «Шыва кĕни» сăвăпа ĕçлени.

— Уйăп Мишшин тепĕр сăввипе ĕçлĕпĕр. Унăн ятне вулăр, сăвă патне панă ÿкерчĕке пăхăр. Мĕнле шутлатăр, мĕн çинчен-ши вăл?

*Ачасен шухăшĕсене итленĕ хыççăн вĕрентекен сăвва вулать, унтан ыйтусем парса ĕçлеттерет.*

— Как описывается в стихотворении летний день? Прочитайте.
— Как описывает автор воду? Найдите в тексте стихотворения.
— Какое настроение у детей? Какие слова использует автор, чтобы передать настроение детей? *(вĕçтерсе анатпăр, шăмпăр-шăмпăр шывĕ сирпĕнет анчах, пит аван-çке)*
— Как автор относится к забаве детей? Разделяет ли он их настроение?
— Какие составляющие выразительного чтения мы знаем?
— Потренируйтесь в выразительном чтении стихотворения. Своё чтение продемонстрируйте классу.

5. Киле ĕç пани.

— Уйăп Мишшин «Шыва кĕни» сăввине пăхмасăр калама вĕренмелле.

6. Урока пĕтĕмлетни.

— Паян урокра камăн хайлавĕсене вуларăмăр?
— Вĕсене мĕнле жанрпа çырнă?
— Уйăп Мишши çинчен мĕн пĕлтĕр?

**4-мĕш урок**

**Тема:** Мĕн тусассăн лайăх, мĕн тусассăн япăх.

**Урок тĕллевĕ:** Ольга Савандеевăн «Микула пичче кучченеçĕ» калавĕпе ĕçлесе хайлаври ĕç-пуç çинчен каласа пама вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртма, автор курăмне чухлама, калавăн планне тума, план тăрăх каласа пама, вуланине панă виçесене пăхăнса хак пама хăнăхса пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Ольга Савандеевăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн кĕнекисен выставки.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.

*Ачасем Уйăп Мишшин «Шыва кĕни» сăввине пăхмасăр каласа параççĕ.*

2. Кӳртĕм калаçу.

*Вĕрентекен урок темине доска çине çырса хурать, ачасене ăна вуласа пама ыйтать.*

— Мĕн тусассăн лайăх, мĕн тусассăн япăх. Как вы понимаете это выражение? Какие мысли родились у вас при чтении темы урока?
— Какие поступки, по-вашему мнению, хорошие?
— Было ли вам когда-нибудь стыдно за какой-либо свой поступок?
— Паян эпир Ольга Савандеева çырнă хайлавпа паллашăпăр. Хайлав мĕн ятлă?
— Мĕнле жанрпа çырнă-ши ăна? *(Калав, юмах пулма пултарать, мĕншĕн тесен сăвăласа çырман. Хайлавăн ятне пăхсан юмах мар пек туйăнать.)*

3. Ольга Савандеевăн «Микула пиччен кучченеçĕ» калавĕпе ĕçлени.

*Вĕрентекен хайлава ачасене пайăн-пайăн вулаттарать. Ыйтусем парса ĕçлеттерет.*

— От чьего имени ведётся рассказ в этом произведении?
— Почему девочка Праски, по мнению рассказчицы, зачастила к ним в гости?
— Что предложила Праски однажды рассказчице?
— Каким способом девочки попали в сад деда Микулы?

— Каким способом они набрали яблоки?
— Как отнёсся к поступку девочек дед?
— С каким чувством девочки пошли в дом к дедушке?
— Как поступил дед? Что он сказал девочкам на прощанье?
— Прочитайте последний абзац. Как вы понимаете эти строки?
— Почему лица девочек горели как огонь?
— Как вы думаете, почему дед не стал ругать девочек? Ведь они поступили плохо, своровали яблоки в чужом саду.
— Мы перед чтением этого произведения задались вопросом, в каком жанре он написан. Можете теперь определить жанр прочитанного текста?
— На сколько частей можно разделить этот рассказ?
— В группах составьте план этого рассказа.

*Ачасем ушкӑнсенче калавӑн планне тӑваҫҫӗ, кайран тунӑ плансенчен чи вырӑнлине суйласа илеҫҫӗ е темиҫе ушкӑн ӗҫӗнчен суйласа илсе пӗр план тӑваҫҫӗ, кайран ун тӑрӑх калавӑн содержанине каласа параҫҫӗ.*

4. Киле ӗҫ пани.
   Калаври хӑвӑра килӗшнӗ вырӑна ӳкермелле.
5. Урока пӗтӗмлетни.

— Паян урокра мӗнле хайлав вуларӑмӑр? Унӑн авторӗ кам?
— Ку калава тата мӗнле ят пама пулать?
— Автор вулавҫӑсене мӗн каласшӑн пулнӑ-ши? Мӗне вӗрентесшӗн пулнӑ?

## Пай: Ачалӑх

### 5, 6-мӗш уроксем

**Тема:** Выляса пурӑнма вӗренетпӗр.

**Урок тӗллевӗ:** Виталий Шемекеевӑн «Футболист пулатӑп» сӑввипе тата Николай Ишентейӗн «Ҫапӑҫман ачасем» калавӗпе ӗҫлесе ӑнланса вулас ӑсталӑха аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавӑн темине тата тӗп шухӑшне палӑртма, автор курӑмне чухлама, сӑнарсен ӗҫӗсене ӑнланса хаклама, вуланине панӑ виҫесене пӑхӑнса хаклама хӑнӑхса пыни.

**Кирлӗ хатӗрсем:** вӗренӳ кӗнеки, Виталий Шемекеевӑн, Николай Ишентейӗн сӑн ӳкерчӗкӗсем, вӗсен кӗнекисен выставки.

### Урок юхӑмӗ

1. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.
   *Килте ӳкерсе килнӗ ӳкерчӗксен куравне йӗркелеме юрать. Ачасем хӑйсем мӗн ӳкернине каласа параҫҫӗ.*

2. Кӳртӗм калаҫу.
   - Паян эпир ҫӗнӗ пысӑк темӑпа (пайпа) ҫыхӑннӑ хайлавсем вулама пуҫлӑпӑр. Кӗнекесене 21-мӗш страницӑна уҫӑр, пай ятне вулӑр.
- Мӗнле вӑхӑт вӑл – ачалӑх? Какие ассоциации рождает у вас слово «детство»?
- Ӳкерчӗке сӑнӑр. Ӳнерҫӗ ачалӑха мӗнле ӳкерсе кӑтартнӑ? Как видит детство художник?
- Вы согласны, что детство – это игры напролёт?

*Ачасен хуравӗсене итленӗ хыҫҫӑн вӗрентекен пӗтӗмлетет.*

- Конечно, в детстве дети очень любят играть. В детстве через игру мы открываем мир, учимся понимать, что хорошо, что плохо; пробуем себя в разных ролях; даже какую-то серьёзную работу нам в детстве легче сделать, если в неё включать какие-нибудь игровые моменты, вообразить, например, героем сказки или любимой книги. Но мы в детстве не только играем, но и учимся, занимаемся любимыми делами, развиваем себя. В этом разделе мы познакомимся с произведениями о детях, об их взаимоотношениях со сверстниками и со взрослыми, о детских мечтах.
- Как вы думаете, почему писатели пишут на тему «Детство»? Чем им интересна эта тема?

3. Ваттисен сӑмахӗсемпе ӗҫлени.
- Прочитайте пословицы способом «птичий базар» (вполголоса). Приготовьтесь читать с правильной логической интонацией.

*Ачасем ваттисен сӑмахӗсене тӗрӗс чарӑнусемпе, сасса кирлӗ пек улӑштарса вулаҫҫӗ, пурнӑҫра хӑҫан, мӗнле самантсенче вӗсемпе усӑ курни вырӑнлӑ пулнине калаҫҫӗ.*

4. Виталий Шемекеевӑн «Футболист пулатӑп» сӑввипе ӗҫлени.

*Ачасем малтан словарьпе паллашаҫҫӗ, унтан сӑвва ҫурма сасӑпа вулаҫҫӗ. Кайран вӗрентекен ачасене сӑвӑ хыҫҫӑн панӑ ыйтусемпе ӗҫлеттерет.*

5. Николай Ишентейӗн «Ҫапӑҫман ачасем» калавӗпе ӗҫлени.
- Калава вулама тытӑниччен словарьпе паллашар.

*Ачасем словарьпе паллашаҫҫӗ, унтан вӗрентекен ачасене калава пайӑн-пайӑн вулаттарать, ыйтусем парса калава тарӑнрах ӑнланма пулӑшать.*

- Почему мама испугалась, увидев сына?
- Что ответил Дима на вопрос мамы о том, что с ним произошло?
- Какие предположения делает мама по поводу случившегося на стадионе?

— Как описывает Дима потасовку между ним и Çеруш? Найдите в тексте и прочитайте.
— Почему Дима удивился предложению мамы о необходимости помириться с Çеруш?
— Как вы думаете, почему рассказ называется «Çапăçман ачасем»?
— Какую характеристику дали бы вы главному герою рассказа?
— Как относится автор к своему герою?
— В рассказе описано, в каком виде пришёл домой Дима. Могли бы вы представить, в каком виде явился домой другой герой рассказа, Çеруш?
— Можно ли сказать, что в этом рассказе присутствует юмор? Почему?
— Какие ещё юмористические произведения мы читали на уроках литературного чтения?
— Какие слова мамы похожи на пословицы? Прочитайте. *(Вăйăран вăкăр сиксе тухма пултарать. Вăрçма – вăй, çураçма çепĕç кăмăл кирлĕ.)*

6. Киле ĕç пани.

— В рассказе много эмоциональных моментов: мама испугалась, увидев растрёпанного сына; услышав объяснения Димы, она рассердилась; Дима невозмутимо объясняет маме, что с ним приключилось; потом он удивлён предложению мамы помириться с Çеруш. Предлагаю дома выбрать особо понравившийся вам эпизод из рассказа и подготовиться его читать, передавая эмоции и чувства героев.

7. Урока пĕтĕмлетни.

— Мĕнле хайлавсем вуларăмăр?
— Вĕсен авторĕсем камсем? Эсир вĕсем çинчен мĕн каласа пама пултаратăр?

## 7-мĕш урок

**Тема:** Вĕренетпĕр ĕçлеме.

**Урок тĕллевĕ:** Альбина Юратун «Кукаçи» тата Нина Пăрчăканăн «Ĕçчен Петĕр» сăввисемпе ĕçлесе илемлĕ, сасса кирлĕ пек улăштарса вулас ăсталăха аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: панă сăмахсем çине тайăнса урок темине калăплама, хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртма, автор курăмне чухлама, сăнарсен ĕçĕсене ăнланса хак пама, вуланă хайлаври матариалпа харпăр хăй пуплевне йĕркеленĕ чух усă курма, вуланине панă виçесене пăхăнса хаклама хăнăхса пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Альбина Юратун, Нина Пăрчăканăн сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен кĕнекисен выставки.

## Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.

*Ачасем хӑйсем суйласа илнӗ калав пайӗсене вулаççӗ, пӗр-пӗрин вулавне хаклаççӗ.*

2. Кӳртӗм калаçу.

*Доска е экран çинче таблица:*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Эпир | ӗçлемешкӗн юрататпӑр.<br>савӑт-сапа çӑватпӑр.<br>пӳлӗмре тирпейлетпӗр.<br>пахчара ӗçлетпӗр.<br>чечексене шӑваратпӑр.<br>хушнине тӑватпӑр.<br>вӗренетпӗр ӗçлеме.<br>Кахалланмастпӑр. | Вӑл | шуçӑмпа пӗрле тӑрать.<br>тутлӑ пӑтӑ пӗçерет.<br>пӳрте-çурта тасатать.<br>картишӗнче тирпейлет.<br>пахча-çимӗç ӳстерет.<br>пире шкула ӑсатать.<br>чирлесессӗн сыватать.<br>ӗçлемешкӗн вӗрентет. |

— Ачасем, вулар-ха таблицӑри предложенисене. Мӗн калама пултаратӑр эсир ку предложенисем çинчен? Что объединяет эти предложения? *(Все предложения о действиях людей.)*
— По какому принципу они разделены на две группы? *(В первой группе действия выполняют говорящие, а во второй группе говорится о действиях какого-то человека.)*
— Кто может «прятаться» под ЭПИР? *(Дети)*
— Каким словом можно заменить слово ВӐЛ? Кто это может быть?

*Ачасем чи малтанах АННЕ теме пултараççӗ. Вӗрентекен ачасене калаçтарса ВӐЛ сӑмах вырӑнӗнче аслисене пӗлтерекен ытти сӑмахсем те пулма пултарни çинчен калать.*

— Можно, используя эти предложения, составить рассказ?

*Ачасем панӑ предложенисемпе усӑ курса калав тӑваççӗ.*

— Какова основная мысль нашего рассказа? *(Мы учимся работать. Дети учатся работать.)*
— Тема нашего урока связана с основной мыслью нашего рассказа. Как бы вы ее сформулировали?
— Çапла вара, паянхи урок теми – «Вӗренетпӗр ӗçлеме». Паян эпир урокра Альбина Юрату тата Нина Пӑрчӑкан çырнӑ сӑвӑсемпе ӗçлӗпӗр.

3. Альбина Юратун «Кукаçи» сӑввипе ӗçлени.
   - Кӗнекесене 27-мӗш страницӑна уçӑр, «Кукаçи» ятлӑ сӑвва тупӑр.
   - Ку сӑвва кам çырнӑ?

*Вӗрентекен Альбина Юрату çинчен каласа парать, унӑн кӗнекисене кӑтартать.*

— Кам вӑл кукаçи?

— Ӳкерчӗк ҫинче мӗн куратӑр? *(Кукашшӗпе мӑнукӗ пахчара ӗҫлеҫҫӗ. Кукашшӗ кӗреплепе турать, мӑнукӗ шӑварать.)*
— Сӑвӑ патне панӑ словарьпе паллашӑр.
*Ачасем словарьпе хӑйсем тӗллӗн ӗҫлесе паллашаҫҫӗ.*
— Мы знаем тему урока, рассмотрели иллюстрацию и познакомились со словарём к стихотворению. Попробуем предположить, о чём или о ком может быть стихотворение Альбины Юрату.

*Ачасен хуравӗсене итленӗ хыҫҫӑн вӗрентекен сӑвва вулать.*

— Кто герои стихотворения? Наши предположения о главных героях подтвердились?
— Где происходят действия, описанные в стихотворении?
— Какую картину вы себе представили, когда слушали стихотворение?
— Самостоятельно прочитайте стихотворение и подумайте, на какие части его можно разделить? *(Первые три строфы описывают утро в семье. Мама готовит кашу, дед с внучкой собираются завтракать, ждут, когда приготовится каша. Две последние строфы описывают, как внучка обещает помогать дедушке в огороде.)*
— Ещё раз прочитайте первые три строфы. Что вы можете сказать о взаимоотношениях в этой семье?
— За что благодарит деда внучка? Как написано об этом в стихотворении?
— За что заслуживает похвалы, по её собственному мнению, внучка? Прочитайте.
— Назовите тему стихотворения.
— Какова главная мысль этого произведения?
— Прочитайте пословицы, данные в задании 6 на странице 28. Какая из них подходит к содержанию стихотворения?

*Малалла ачасем сӑвва илемлӗ вулама вӗренеҫҫӗ: кашни строфана мӗнле вуламаллине тишкереҫҫӗ, палӑртса вуламалли сӑмахсене, хӑш вырӑнта сасса мӗнле улӑштармаллине, хӑш вырӑнта чарӑнусем тумаллине палӑртаҫҫӗ. Кайран сӑвва сасӑпа вулаҫҫӗ, вуланине йышӑннӑ виҫесене пӑхӑнса хакласҫҫӗ.*

4. Нина Пӑрчӑканӑн «Ӗҫчен Петӗр» сӑввипе ӗҫлени.

*Вӗрентекен Нина Пӑрчӑкан ҫинчен кӗскен каласа парать. Унтан ачасем сӑвва вулаҫҫӗ, ун патне панӑ ӗҫсене пурнӑҫлаҫҫӗ.*

5. Киле ӗҫ пани.
— Подготовьте рассказ о своём дедушке: какой он, что вы с ним любите делать, чему он вас учит.
6. Урока пӗтӗмлетни.
— Паян урокра мӗнле хайлавсем вуларӑмӑр? Вӗсен авторӗсем камсем?
— Вуланӑ хайлавсем сирӗнте мӗнле камӑл-туйӑм ҫуратрӗҫ?

## 8-мĕш урок

**Тема:** Лайăх çын пуласчĕ.

**Урок тĕллевĕ:** Роза Шевлепин «Ют хăяр» калавĕпе тата Петĕр Ялкирĕн «Ĕмĕт пысăк» сăввипе ĕçлесе хайлавсенчи ĕç-пуç çинчен каласа пама вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртма, калавăн планне тума, план тăрăх каласа пама, вуланине панă виçесене пăхăнса хак пама вĕренсе пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Роза Шевлепин тата Петĕр Ялкирĕн сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен кĕнекисен выставки.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.

*Ачасем аслашшĕ (кукашшĕ) çинчен каласа параççĕ. Вĕрентекен вĕсен калавĕсене пĕтĕмлетет, асатте-асаннесем хăйсен мăнукĕсене яланах ыррине çеç сунни, вĕсенчен ĕçчен, пултаруллă çынсем ӳстерме тăрăшни çинчен калать.*

2. Кӳртĕм калаçу.
   - Паян урокра эпир чăваш ача-пăча çыравçисем Петĕр Ялкир тата Роза Шевлепи çырнă хайлавсемпе паллашăпăр.

*Ачасем Петĕр Ялкир çинчен мĕн пĕлнине аса илсе калаççĕ, кĕнекере çырса панине вулаççĕ. Вĕрентекен Роза Шевлепи çинчен хăй каласа парать, кĕнекисене кăтартать.*

3. Роза Шелепин «Ют хăяр» калавĕпе ĕçлени.

— Роза Шевлепин хайлавне тупăр. Вăл мĕн ятлă?
— Ку хайлава мĕнле жанрпа çырнă-ши?
— Ӳкерчĕке сăнăр. Ун тăрăх хайлаври геройсем камсем пулнине палăртма тăрăшăр.
— Арçын ачасем çинчен мĕн калама пултаратăр? Темĕнле айăпа кĕнĕ пек туйăнаççĕ вĕсем. Мĕн тунă-ши ачасем?
— Словарьпе паллашăр. Словарьти сăмахсем пире пулăшрĕç-и? Мĕнле айăпа кĕнĕ-ши ачасем? Атьăр калава вуласа пĕлер.

*Ачасем калава черетпе вулаççĕ. Вĕрентекен вуланă май ыйтусемпе ĕçлеттерет.*

— Что узнали из первого абзаца?
— От чьего имени ведётся рассказ?

— Что узнали из второго абзаца?

*Виççĕмĕш абзаца вуланă хыççăн вĕрентекен ыйтать.*

— Что произошло однажды?
— Как вы понимаете последнее предложение в третьем абзаце? (*Хамăр та сисмерĕмĕр, карта хушăкĕнчен ют пахчана кĕрсе те тăтăмăр.)*
— Как можно неожиданно для себя оказаться в чужом огороде?

*Ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн вĕрентекен пĕтĕмлетет.*

— Наверняка, детям очень хотелось попасть в этот огород. Наверное, они много раз заглядывали туда. Однажды, когда проходили мимо и увидели дыру в заборе, не подумав, что поступают плохо, залезли в этот богатый огород.
— Что вынесли дети из огорода?
— Как отреагировала бабушка на поступок детей?
— Что сказала бабушка детям?
— Как вы понимаете последние две строчки рассказа?
— Почему бабушка так говорит?
— Какую главную мысль хотел донести до своего читателя автор?

*Ачасем вĕрентекенпе пĕрле калава виç-тăват пая пайлаççĕ, кашни пайне ят парса план тăваççĕ. План тăрăх калав содержанине каласа параççĕ. Каласа панине 32-мĕш страницăра панă виçесемпе хаклаççĕ.*

4. Петĕр Ялкирĕн «Ĕмĕт пысăк» сăввипе ĕçлени.

— Какой урок преподала детям бабушка Володи в рассказе «Ют хăяр»?
— А могут быть другие члены семьи примером для подражания?
— Давайте прочитаем стихотворение Петра Ялгира «Ĕмĕт пысăк». На кого там равняется герой стихотворения?

*Ачасем сăвăпа хăйсем тĕллĕн паллашаççĕ. Унтан черетпе сасăпа вулаççĕ.*

— На кого же равняется лирический герой стихотворения? Кем работают его родные?
— Как он рассуждает о выборе будущей профессии? Прочитайте.
— Кем он решает стать? Прочитайте.
— Как вы понимаете последние строчки стихотворения?
— Кем бы каждый из вас хотел стать в будущем?

*Ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн вĕрентекен пĕтĕмлетсе калать:*

— Все ваши родные хотят, чтобы вы выбрали интересную для себя профессию и, главное, стали хорошими людьми. Все в ваших руках. Чтобы сбылась заветная мечта, надо много трудиться, хорошо учиться.
— С каким настроением нужно читать это стихотворение?

*Ачасем икшерӗн ӗçлесе сăвва илемлӗ вулама хатӗрленеççӗ, хăш сăмахсене сасăпа уйăрса вуламаллине, ăçта чарăнусем тумаллине палăртаççӗ.*

5. Киле ӗç пани.

— Научиться читать стихотворение «Ӗмӗт пысăк», соблюдая паузы и меняя интонацию в нужных местах, и оценить своё чтение по таблице.

6. Урока пӗтӗмлетни.

— Паян урокра мӗнле хайлавсем вуларăмăр?

— Вӗсем ачасене мӗнле пулма вӗрентеççӗ?

## Пай: Чăваш çӗршывӗ – тăван çӗршыв

### 9-мӗш урок

**Тема:** Тăван чӗлхе.

**Урок тӗллевӗ:** Зоя Сывлăмпин «Чăваш чӗлхи» сăввипе ӗçлесе илемлӗ вулас ăсталăха аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: тăван чӗлхене хисеплеме, унпа вырăнлă усă курма, хайлавăн темипе тӗп шухăшне палăртма, автор курăмне чухлама, вуланине панă виçесене пăхăнса хак пама хăнăхни; илемлӗ вулас ăсталăх аталанни.

**Кирлӗ хатӗрсем:** вӗренӳ кӗнеки, Зоя Сывлăмпин тата Иван Малкайăн сăн ӳкерчӗкӗсем, вӗсен кӗнекисен выставки.

### Урок юхăмӗ

1. Киле панă ӗçе тӗрӗслени.
   *Темиçе ача сăвва сасăпа вулать, ыттисем вӗсен вулавне таблицăпа усă курса хаклаççӗ. Вӗрентекен ачасен ӗçне йӗркелет, кирлӗ пулсан – пулăшать.*
2. Кӳртӗм калаçу.
   - Кӗнекесене 35-мӗш страницăна уçăр, çӗнӗ пысăк тема (пай) ятне вулăр.

— Все мы с вами живём в огромной, прекрасной стране – в России, но у каждого из нас есть своя малая родина. Для нас с вами малой родиной является Чувашия.

— Чăваш çӗршывӗ – пирӗн тăван çӗршыв. Кунта пирӗн тăван кил вырнаçнă, пирӗн юратнă çывăх çынсем пурăнаççӗ. Илемлӗ пирӗн тăван тавралăх. Мăнаçлă Атăл шывӗ хӗррипе хуласем, ялсем ларса тухнă. Сӗм вăрмансем, сарлака уй-хирсем, тӳрем çарансем, çырма-çатра – пурте пур пирӗн тăван çӗршывра. Чăваш енре тӗрлӗ халăх çыннисем пӗр-пӗринпе туслă, шăкăл-шăкăл калаçса пурăнаççӗ, анчах та халăхăн ытларах пайӗ – чăвашсем. Мӗн каланă-ха чăвашсем çинчен Иван

Яковлевич Яковлев, чăваш халăхне çутта кăларакан̆ě? Вăл каланине вулар-ха.

*Доска е экран çинче Иван Яковлев каланă сăмахсем:*

*ЧĂВАШСЕН ÇĔР ПИН СĂМАХ, ÇĔР ПИН ЮРĂ, ÇĔР ПИН ТĔРĔ.*

— Как вы понимаете слова чувашского просветителя Ивана Яковлевича Яковлева?
— Действительно, наш богатый напевный язык ласкает слух даже не знающего чувашский язык человека, а чувашские народные песни завораживают то своей мелодичностью и созерцательностью, то глубоким драматизмом, то весёлым плясовым задором. Чувашской двусторонней вышивкой восхищаются самые лучшие мастера этого дела во всём мире.
— Вы, конечно, догадались, что в этом разделе мы будем читать произведения о нашем чувашском крае.
— Какие произведения о своей малой родине мы уже читали? Кто авторы этих произведений?
— Сегодня на уроке прочитаем стихотворение Зои Сывлăмпи. *Вĕрентекен Зоя Сывлăмпи çинчен каласа парать. Унăн кĕнекисене кăтартать.*

3. Зоя Сывлăмпи çырнă «Чăваш чĕлхи» сăвăпа ĕçлени.

*Малтан вулав умĕнхи ĕçсене тăваççĕ, унтан вĕрентекен сăвва вулать, кайран ачасем вĕрентекен пулăшнипе словарьти сăмахсемпе автор сăвăра мĕнле «усă курнине» тĕпчеççĕ.*

— В каком месте автор использует первое словосочетание из словаря? Прочитайте. *(Чĕкеç вĕçевĕ пек хитре.)*
— Как вы понимаете эту строчку?
— Какой он – полёт ласточки? *(Стремительный, быстрый, ловкий, без остановок, красивый.)*
— Почему чувашскую речь, на ваш взгляд, поэт сравнивает с полётом ласточки? *(Автор считает, что чувашская речь так же красива, как и полёт ласточки.)*
— Прочитайте второе словосочетание из словаря. Как в стихотворении оно звучит? *(Чун-чĕрене кӳрен киленĕç.)*
— Как понимаете эту фразу? *(чувашская речь приносит наслаждение, приятно её слушать.)*

*Словарьти ытти сăмахсемпе те çакăн пек ĕçлеççĕ, автор тăван чĕлхемĕрĕн хăватне, пуянлăхне, илемне кăтартса памашкăн шăпах вырăнлă сăмахсемпе, танлаштарусемпе усă курнине палăртаççĕ.*

— Ребята, вы заметили, как бережно, внимательно автор использует каждое слово, чтобы передать свои чувства, свое отношение к родному языку.
— Рассмотрите, пожалуйста, иллюстрацию. Удалось ли художнику передать чувства автора стихотворения?

*Вĕрентекен ачасем каланине пĕтĕмлетет:*

— Да, конечно, иллюстрация такая же светлая, как и стихотворение. Здесь и полёт ласточек, и сияющее солнце, и голубое небо, и золотое хлебное поле, и радушная девушка с караваем. И красота, и радушие, и мощь – всё это есть в нашем языке.
— Какие сравнения автор использует для того, чтобы показать красоту родного языка? Прежде чем ответить на этот вопрос, прочитаем разъяснение, данное в книге на странице 38.
*Ачасем кĕнекере танлаштару çинчен çырса ăнлантарнине вулаççĕ, кайран сăвăра танлаштарусене тупаççĕ.*
— Что желает своему родному языку автор? Прочитайте.
— Какова тема и какова основная мысль стихотворения? *(Тема – родной язык. Основная мысль – родной язык красив, могуч, любим и пусть он живёт в веках.)*
— Как бы вы прочитали это стихотворение?

*Ачасем сăвăри кашни шухăша мĕнле вуламалли, сасса хăш вырăнта мĕнле улăштармалли пирки канашлаççĕ, вуласа пăхаççĕ. Кайран сасăпа вулаççĕ, хăйсен вулавне хаклаççĕ.*

4. Киле ĕç пани.
— Предлагаю вам дома самостоятельно поработать со стихотворением Ивана Малкая «Тăван тавралăх»: прочитать стихотворение, выполнить задания к нему. Если захотите, то можете выучить наизусть.
5. Урока пĕтĕмлетни.
— Паян урокра мĕн турăмăр? Мĕн çĕнни пĕлтĕмĕр?
— Зоя Сывлăмпин сăвви сирĕнте мĕнле кăмăл-туйăм çуратрĕ? Чăваш чĕлхи ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр тесен пирĕн мĕн тумалла-ши?

**10, 11-мĕш уроксем**

**Тема:** Ылтăн çĕр.

**Урок тĕллевĕ:** Геннадий Волковăн «Ылтăн çĕр» хайлавĕпе ĕçлесе ачасене чăваш халăхĕн историйĕпе кăсăклантарасси, тăван халăхăмăр çинчен пĕлнине анлăлатасси.

**Пулмалли результатсем**: тăван халăхăмăрăн историйĕпе кăсăкланас туйăм çурални; хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртни; автор курăмне чухлани; ăшра тата сасăпа вулас ăсталăхсем аталанни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Геннадий Волковăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн кĕнекисен выставки.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.

2. Кӳртĕм калаçу.

*Вĕрентекен Геннадий Никандрович Волков сăн ӳкерчĕкне кăтартать, ачасем ун çинчен мĕн пĕлнине ыйтса пĕлет. Кайран ачасем Геннадий Никандрович çинчен кĕнекере панă материала вулаççĕ, вĕрентекен хушса каланине итлеççĕ, паллă педагогăн кĕнекисемпе паллашаççĕ.*

— Паян урокра эпир Геннадий Никандрович Волковăн тепĕр хайлавĕпе паллашăпăр. Мĕн ятлă вăл?
— Мĕнле çĕр çинчен-ши ку хайлав? Как вы думаете, о какой земле пойдёт речь в этом произведении?

3. Геннадий Волковăн «Ылтăн çĕр» хайлавĕпе ĕçлени.

— Это произведение большое. Оно разделено в нашем учебнике на три части. Мы с этим произведением будем работать в течение двух уроков.
— Сначала познакомимся со словарём к первой части. Изучив его, какое предположение о содержании произведения вы бы сделали?

*Ачасем хăйсен шухăшĕсене калаççĕ, унтан текста пайăн-пайăн вулаççĕ. Пĕрремĕш абзаца вуланă хыççăн вĕрентекен çакăн пек ыйтусем парать.*

— Когда происходили события, описанные в этом произведении? *(«Ĕлĕк-авал» сказано в рассказе. Значит, давным-давно, в стародавние времена.)*
— Какое событие будет описываться в произведении? *(Приезд послов на чувашскую землю.)*
— С какой целью приехали послы? *(Государство, откуда приехали послы, захотело наладить дружественные связи с чувашами.)*

*Иккĕмĕш абзаца вулама пуçлаççĕ.*

— О чём собирается рассказать автор дальше? *(О причинах, побудивших иностранцев установить с чувашским государством дружественные отношения.)*

*Иккĕмĕш абзаца вуласа тухаççĕ.*

— Какие причины, побудившие иностранцев установить с чувашским государством дружественные отношения, называет автор? Прочитайте это место ещё раз.

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене доска çине çырса хурать.*

1) Чăвашсем ĕçчен те сăпайлă пулнă.
2) Чăваш çĕршывĕ илемлĕ вырăнта вырнаçнă.
3) Чăвашсен сăмахĕ-юмахĕ, юрри-сăвви, тĕлĕнмелле хӳхĕм тĕррисем илĕртнĕ.

— Как вы понимаете слова ĕçчен и сăпайлă?
— Как относились чуваши к родной земле? Прочитайте это место.

*Вĕрентекен хайлаври шухăшсене кĕскетсе çырса хурать.*

Чăвашсемшĕн вĕсен çĕрĕнчи:

1) хăмăшĕ, хăяхĕ – пурçăн;
2) курăкĕ чи ешĕлли;
3) тӳпи чи сенкерри;
4) хĕвелĕ чи сарри;
5) Атăлĕ – чи анли, чи асли, чи тарăнни.

— Как можно характеризовать народ, который так относится к своей земле?
— Прочитайте последнее предложение. Как вы его понимаете?
— Изучим словарь ко второй части.
— О чём может быть рассказано во второй части? Какие предположения вы делаете, исходя из словаря к нему?
— Прочитайте эту часть про себя.

*Ачасем ку пая хăйсем тĕллĕн ăшра вулаççĕ.*

— Подтвердились наши предположения?
— Чем занимались послы на чувашской земле? Прочитайте.
— Где жил чувашский царь?
— В группах ответьте на вопрос: «Что удивляло и восхищало послов на чувашской земле?»

*Ачасем ушкăнсенче ыйтăва хуравлама хатĕрленеççĕ. Пĕрремĕш хатĕрленсе çитнĕ ушкăн хăйĕн ĕçĕпе паллаштарать. Ытти ушкăнсем вĕсен хуравĕ çумне хушса калаççĕ.*

— Как почивали послов у чувашского царя?
— Чем их одарили?
— Как характеризует такой приём послов чувашского царя и народ?

*Виççĕмĕш пайне вĕрентекен вулать. Вуланă май чарăнусем туса ыйтусем парать, ăнланма йывăртарах вырăнсене ăнлантарса пырать.*

- О чём узнали из первого абзаца? *(Гости собрались уезжать.)*
- Что удивило гостей в поведении провожающих? *(Послов попросили остановиться до того, как они вступили на корабль)*
- Что сделали с башмаками гостей провожающие их люди?
- Как они объяснили послам свои действия?
- Какими словами описывает автор отношение древних чувашей к своей родной земле? За что они благодарны ей?
- Как вы понимаете эти слова: «Чăваш çĕрĕ пирĕншĕн атте те, анне те, тăван пичче те. Ку çĕр сăпайлă та таса. Тăван çĕрĕн тусанĕ те тăван, пылчăкĕ те пылак. Унăн нÿрлĕ тăмĕ – ылтăн, типĕ чулĕ – кĕмĕл».
- Какой народ – чуваши? Назовите основные черты чувашского народа.
- Определим жанр этого произведения. Как вы думаете, это рассказ, сказка или легенда?
- Какова тема этой легенды?
- Какую основную мысль хотел донести до читателя автор, пересказав эту легенду?

4. Урока пĕтĕмлетни.

- «Ылтăн çĕр» хайлава кам çырнă? Эсир Геннадий Никандрович Волков çинчен килтисене мĕн каласа пама пултаратăр?
- «Ылтăн çĕр» хайлав сирĕнте мĕнле кăмăл-туйăм çуратрĕ?
- Хайлаври хăш цитатăсем сире килĕшрĕç?

5. Киле ĕç пани.

- Выучить наизусть понравившиеся цитаты. Например:

  *Чăваш çĕрĕ пирĕншĕн атте те, анне те, тăван пичче те.*

  *Ку çĕр сăпайлă та таса.*

  *Тăван çĕрĕн тусанĕ те тăван, пылчăкĕ те пылак.*

  *Унăн нÿрлĕ тăмĕ – ылтăн, типĕ чулĕ – кĕмĕл.*

## 12-мĕш урок

**Тема:** Юратнă хула.

**Урок тĕллевĕ:** Ара Мишшин «Юратнă хула» калавĕпе ĕçлесе ачасен чăвашла вулав ăсталăхне аталантарасси, Шупашкар хулин историйĕпе кăсăклантарасси.

**Пулмалли результатсем**: тĕп хула çинчен çĕнни пĕлни; хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртни; автор курăмне чухлани; ăшра тата сасăпа вулас ăсталăха туптани.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Ара Мишшин сăн ӳкерчĕкĕ, унăн кĕнекисен выставки.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.

*Ачасем килте вĕреннĕ цитатăсене пăхмасăр каласа параççĕ, вĕрентекен вĕсен ĕçне пĕтĕмлетет, тăван çĕре, тăван халăха юратмалли, упрамалли çинчен калать.*

2. Кӳртĕм калаçу.

— «Ылтан çĕр» легендăра каланă тăрăх чăвашсен патши ăçта пурăннă?
— Виçĕ Кӳлĕ текен вырăн авалхи чăвашсен тĕп хули пулнă ĕнтĕ. Халĕ вара чăваш çĕршывĕн тĕп хули мĕн ятлă?
— Çапла, Чăваш Енĕн тĕп хули – илемлĕ Шупашкар. Кĕнекесене 47-мĕш страницăна уçăр, сăн ӳкерчĕке сăнăр. Мĕн куратăр эсир ку сăн ӳкерчĕкре?
— Эсир ку вырăнта пулса курнă-и? Килĕшет-и ку вырăн сире?
— Шупашкар хулинче тата хăш вырăнсем сире килĕшеççĕ?

3. Ара Мишши çырнă «Юратнă хула» калавпа ĕçлени.

— Паян урокра эпир хамăрăн тĕп хуламăр çинчен калав вулăпăр, юратнă хуламăр çинчен нумай çĕнни пĕлĕпĕр.
— Калав мĕн ятлă? Ăна çыраканĕ кам?

*Вĕрентекен кĕскен Ара Мишши çинчен каласа парать, унăн кĕнекисемпе паллаштарать.*

*Калава ачасем абзацăн-абзацăн черетпе вулаççĕ. Содержание лайăхрах ăнланма пулăшас тĕллевпе вĕрентекен ыйтусем парса ĕçлеттерет:*

— О чём объявила учительница Мария Николаевна детям?
— Что посоветовала мама Насте?
— Как вы понимаете выражение «кăсăклантарса ячĕ»?
— Когда первый раз упомянут город Чебоксары в летописях? Как вы думаете, до 1469 года существовал город Чебоксары, или он возник именно в упомянутом году?
— Конечно, он был и раньше. Ведь в летописи говорится уже о существующем городе.
— Какое предположение делают некоторые учёные о времени возникновения Чебоксар? *(Некоторые учёные утверждают, что город возник ещё в XIII веке.)*
— Чем памятен 1551 год для чувашского народа? *(Чуваши добровольно вошли в состав Российского государства.)*

— Как отразилось присоединение чувашских земель к Российскому государству на судьбе города Чебоксары? *(После присоединения к Российскому государству Чебоксары обнесли кремлёвской стеной, построили крепость.)*
— Что сказано в рассказе о количестве проживающих в городе людей в разное время?
— Как менялся статус города Чебоксары в течение последних двух веков? *(1920 г. – столица Чувашской автономной области. 1925 г. – столица Чувашской АССР. 1992 г. – столица Чувашской Республики.)*

*Юлашки виçĕ абзаца ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра вулаççĕ. Пурте вуласа тухнă хыççăн ыйтусемпе ĕçлеççĕ.*

— Кому благодарна Настя за свой хороший ответ на уроке? Прочитайте.
— В рассказе Ара Мишши сказано, что в городе много школ, детских садов, высших учебных заведений. Прочитайте это место.
— Какие профессиональные и высшие учебные заведения есть в нашей столице?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетсе Шупашкарти ятарлă тата аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсене экран çине кăларса кăтартать, вĕсем çинчен каласа парать.*

— О каких учреждениях культуры говорится в рассказе? Какой театр мы видим на фотографии, представленной на странице 47?
— Ещё какие театры работают в нашей столице?
— Какие музеи есть в Чебоксарах? Здание какого музея видно на фотографии? *(Чувашского национального музея)*

*Вĕрентекен ачасене культура объекчĕсем çинчен калаçтарнă вăхăтра Шупашкарти театрсене, музейсене сăнлакан ӳкерчĕксене кăтартать.*

— Какие спортивные комплексы и стадионы есть в Чебоксарах?
— Действительно, Чебоксары красивый, старинный город. В нашей столице бывает много туристов из других городов и из других стран. Все, кто побывал в Чебоксарах, называют его красивым, уютным городом. Всем он нравится своим гостеприимством, ухоженностью, красотой.

4. Киле ĕç пани.
   - 48-мĕш страницăри 3-мĕш ĕçе тумалла.
5. Урока пĕтĕмлетни.

— Что нового узнали о Чебоксарах?
— Что ещё можно было бы добавить в текст?
— Что хотел донести до своего читателя автор этого рассказа?
— Какие чувства возникли у вас в ходе работы над этим произведением?

**Пай: Çут çанталăк тĕнчи**

**13-мĕш урок**

**Тема:** Чĕр чун тĕнчи.

**Урок тĕллевĕ:** Людмила Симоновăн «Тăпăртăк качака» сăввипе тата Николай Ларионов-Йĕлменĕн «Хуралçă кушак», Герасим Харлампьевăн «Кўлĕ хĕрринче» калавĕсемпе ĕçлесе ăнланса вулас ăсталăха аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртни; автор курăмне чухлани; сăнарсен ĕçĕсене ăнланни; вуланине панă виçесене пăхăнса хаклани.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренў кенеки, Людмила Симоновăн, Николай Ларионов-Йĕлмелĕн тата Герасим Харлампьевăн сăн ўкерчĕкĕсем, вĕсен кĕнекисен выставки.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе терĕслени.
   *Ачасем Шупашкар çинчен хăйсен аякри тусĕсене каласа панă пек каласа параççĕ, вĕрентекен вĕсен калавĕсене хаклать.*
2. Кўртĕм калаçу.

— Паян урокра çĕнĕ пысăк темăпа хайлавсем вулама пуçлăпăр. Мĕнле тема-ха вăл?

*Ачасем пай темине вулаççĕ, унтан вĕрентекен пай патне панă ўкерчĕк тăрăх калаçу йĕркелет, ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлеттерет.*

— Çут çанталăк тĕнчи тĕрлĕ енлĕ. Çыравçăсем ача-пăча валли ку темăпа нумай сăвă-калав, юмах-халап çырнă. Вĕсенчен хăшне-пĕрне эпир вуланă. Аса илер-ха вĕсене. Çут çанталăк тĕнчи çинчен мĕнле хайлавсем вуланă эпир? Вĕсен авторĕсем камсем?
— Ваттисем çут çанталăк çинчен мĕн каланине вулăр. Ку ваттисен сăмахĕсене эсир мĕнле ăнланатăр?
— Паян вара тата виçĕ хайлавпа паллашăпăр.

*Вĕрентекен экран çине урок темине, урокра ĕçлемелли хайлавсен тата вĕсене çыракансен ячĕсене кăларать.*

**Чĕр чун тĕнчи**

Людмила Симонова, «Тăпăртăк качака»

Николай Ларионов-Йĕлмел, «Хуралçă кушак»

Герасим Харлампьев, «Кӳлĕ хĕрринче»

— Прочитайте тему урока.
— Чĕр чун тĕнчи нумай енлĕ. Значит, все три произведения, наверное, о животных.

*Вĕрентекен хайлавсен авторĕсен сăн ӳкерчĕкĕсене кăтартать, вĕсем çинчен кĕскен каласа парать.*

3. Людмила Симоновăн «Тăпăртăк качака» сăввипе ĕçлени.

*Вĕрентекен сăвва вуласа парать, ыйтусем парса ĕçлеттерет:*

— Назовите жанр прослушанного произведения.
— Кто рассказчик? От чьего имени ведётся рассказ?
— Похоже ли это стихотворение на сказку?
— Какое настроение вызвало у вас это стихотворение?
— Как вы думаете, почему в качестве танцующего героя автор изобразил козу, а не какое-либо другое животное? *(Наблюдательный автор в повадках и поведении козы разглядел те качества, которые нужны танцору: лёгкость в движениях, цокающие копыта и т.п.)*
— Прочитайте стихотворение друг другу, оцените свое чтение.

4. Николай Ларионов-Йĕлмелĕн «Хуралçă кушак» калавĕпе ĕçлени.

- Кĕнекесене 50-мĕш страницăна уçăр, хайлав ятне вулăр.

*Ачасем калав ятне вулаççĕ, ӳкерчĕке сăнаççĕ, словарьпе паллашаççĕ, калав мĕн çинчен пулма пултарни пирки шухăшлаççĕ, хăйсен шухăшне калаççĕ, унтан вĕрентекен вуланине итлеççĕ, ыйтусемпе ĕçлеççĕ:*

— Правильно ли мы предположили о содержании рассказа?
— Сколько героев в этом произведении?
— Почему кошке дали кличку Чăрсăр? Найдите в тексте описание кошки и прочитайте.
— С каким животным его сравнивает автор?
— Как ведёт себя Чăрсăр со знакомыми и как поступает с чужими людьми?
— Чем занимается Чăрсăр днём, что делает ночью?
— Что приключилось однажды ночью в курятнике? Прочитайте.
— Как бы вы ответили на вопрос автора в конце рассказа?
— Почему рассказ назван «Хуралçă кушак»? Как по-другому можно назвать этот рассказ?
— Как автор относится к своему герою? А вы как относитесь?

5. Герасим Харлампьевăн «Кӳлĕ хĕрринче» калавĕпе ĕçлени.

*Калавпа ачасем словарь ĕçĕ хыççăн хăйсем тĕллĕн ăшра вуласа паллашаççĕ.*

— О чём рассказывается в произведении?
— В каком жанре оно написано?

— Назовите тему рассказа.
— Прочитайте, как описывается природа в рассказе.
— Найдите и прочитайте место, где описывается первая встреча рассказчика с утками.
— Почему утки улетели? Прочитайте.
— Прочитайте как описывает автор вторую встречу рассказчика с утками.
— Что изменилось в поведении уток?
— Чем объясняется в рассказе такое поведение уток?
— Какова основная мысль этого произведения?
— Кто написал этот рассказ?
— Прочитайте информацию о Герасиме Харлампьеве, данную на странице 62.

*Ачасем кӗнекере панӑ статьяна вулаççӗ, урокра вуланӑ ытти хайлавсен авторӗсене те аса илсе çирӗплетеççӗ.*

6. Килӗ ӗç пани.

— Придумайте герою рассказа «Кӳлӗ хӗрринче» имя и подготовьте пересказ от третьего лица.

7. Урока пӗтӗмлетни.

— Сегодня мы прочитали три произведения. Что их объединяет?
— Чему они учат своего читателя? *(Быть внимательными, наблюдательными. Любить и беречь природу.)*

## 14-мӗш урок

**Тема:** Халӑх юмахӗсенчи çерçи сӑнарӗ.

**Урок тӗллевӗ:** «Вӗçкӗн çерçи» тата «Кушакпа Çерçи» юмахсемпе ӗçлесе чӗр чунсем çинчен çырнӑ юмахсен уйрӑмлӑхӗсемпе паллаштарасси.

**Пулмалли результатсем**: юмахсене виçӗ ушкӑна (чӗр чунсем çинчен çырнӑ, йӑла-йӗрке, асамлӑ юмахсем) уйӑрнине пӗлни; чӗр чунсем çинчен çырнӑ юмахсене уйӑрма, сӑнарсен ӗçӗсене ӑнланма, палӑртуллӑ вулама, вуланине панӑ виçесене пӑхӑнса хаклама пултарни.

**Кирлӗ хатӗрсем:** вӗренӳ кӗнеки, чӗр чунсем çинчен çырнӑ юмахсен пуххи.

### Урок юхӑмӗ

1. Киле панӑ ӗçе тӗрӗслени.
   *Малтан пӗрле ларакан ачасем «Кӳлӗ хӗрринче» калавӑн содержанине виççӗмӗш сӑпатран пӗр-пӗрне каласа параççӗ, унтан 1-2 ача доска умне тухса калать.*
2. Кӳртӗм калаçу.

— Пуян пирĕн тăрăх кайăксемпе. Вĕсенчен хăшĕсем пирĕн пата çуркунне вĕçсе килеççĕ те сивĕ кунсем çитсен ăшă енне вĕçсе каяççĕ. Хăшĕ-пĕри хĕл каçма пирĕн пата вĕçсе килет. Хĕлĕн-çăвĕн пирĕнпе пĕрлех пурăнакан, ниçта та вĕçсе кайман кайăксем те чылай пирĕн тăрăхра. Эпир вĕсене кашни кун куратпăр, килти кайăк-кĕшĕк пекех вĕсем пирĕншĕн. Çавăнпа та-и, тен, ку кайăксем халăх сăмахлăхĕнче те анлă тĕл пулаççĕ. Паян урокра эпир икĕ хайлавпа паллашăпăр. Вĕсен ячĕсене вулар-ха.

*Ачасем доска е экран çинчи хайлавсен ячĕсене вулаççĕ.*

- Мĕнле кайăк çинчен-ши ку хайлавсем?

— Кĕнекесене уçса çак хайлавсене тупăр, жанрне палăртăр.

*Ачасем ку хайлавсем юмахсем пулнине çирĕплетсе калаççĕ. (Название произведения «Вĕçкĕн çерçи» помогает догадаться, что это сказка. Кроме того, художник изобразил воробья в рубахе и в позе хвастающегося человека. Второе произведение дано с подзаголовком «Юмах». Значит, это сказка.)*

- Ку юмахсен авторĕсем пур-и?

— Апла пулсан, ку юмахсем мĕнле юмахсем?

— Мĕнле шутлатăр, юмахсене халăх хăçан тата мĕншĕн шутласа кăларнă-ши?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет.*

— Халăх юмахĕсем тахçан авалах çуралнă. Паллах, чи малтанах кашни юмаха кам та пулин шутласа кăларнă. Пĕрремĕш хут каласа параканăн юмахĕ вырăнлă, илемлĕ пулсан, ăна итлекенсем астуса юлнă, ытти çынсене каласа панă. Вăхăт иртнĕçем çак юмах кам ăсĕнче çурални, пĕрремĕш хут ăна кам каласа пани манăçнă. Кашни çĕнĕрен каласа параканĕ хăйĕнчен мĕн те пулин хушнă, хăш-пĕр вырăнсене улăштарнă. Çапла халăх юмахĕсем пулса кайнă.

— Эсир мĕнле халăх юмахĕсем пĕлетĕр?

3. Юмахсен тĕсĕсемпе паллашни.

— Эсир аса илнĕ юмахсене темиçе ушкăна уйăрма пулать. Мĕнле ушкăнсем-ши вĕсем? Кĕнекесене 54-мĕш страницăна уçăр та юмахсене мĕнле пысăк ушкăнсене уйăрма пулни çинчен çырса панине вулăр.

*Ачасем юмахсем çинчен çырса панине вулаççĕ, кайран юмахсен кашни тĕсĕ мĕнле уйрăмлăхсемпе палăрнине каласа параççĕ.*

— Мĕнле шутлатăр, паян вулакан юмахсем хăш ушкăна кĕреççĕ-ши? Мĕншĕн çапла шутланине ăнлантарса парăр. *(Раздел называется «Çут çанталăк тĕнчи», сами сказки называются «Вĕçкĕн çерçи» и «Кушакпа*

*çерçи», поэтому можно сделать предположение, что это будут сказки о животных.)*

4. «Вĕçкĕн çерçи» юмахпа ĕçлени.

*Ачасем юмахпа хăйсем тĕллĕн ăшра вуласа паллашаççĕ.*

— Пĕр çерçи мĕнле мухтаннă? Тупса вулăр.
— Çерçисем мĕншĕн вĕçсе тарса пĕтнĕ?
— Юлашки абзаца вулăр. Эсир мĕнле шутлатăр, вĕçкĕн çерçи ăçта кайса кĕнĕ? Мĕншĕн вăл каялла вĕçсе килмен?
— Юмахăн тĕсĕ çинчен мĕн калама пултаратăр? (*Ку чĕр чунсем çинчен калакан юмах, мĕншĕн тесен юмахри сăнарсем кайăксем: çерçисем, хурчка. Çерçисем çынсем пекех калаçаççĕ. Сăнарсен хăтланăвĕсем, вĕсен кăмăл уйрăмлăхĕсем çынсеннипе пĕрешкел.)*
— Вĕçкĕн çерçи сăнарĕнче эсир мĕнле çынна куратăр?
— Халăх çакăн пек çынсем çине мĕнле пăхать?
— Ку юмахăн моралĕ мĕнле? Вăл вулакана мĕне вĕрентет?

*Малалла ачасем юмаха илемлĕ вулама хатĕрленеççĕ.*

— Юмахăн пуçламăшне мĕнле вуламалла? *(Юмах пуçламăшĕнче вулаканăн итлекене юмахпа кăсăклантарса ямалла, хăйне итлеме хатĕрлемелле, çавăнпа ытарлă, сасса кирлĕ пек улăштарса вуламалла.)*

*Темиçе ача юмах пуçламăшне вулать, ыттисем камăн вулавĕ лайăхрах пулнине палăртаççĕ.*

— Вĕçкĕн çерçин монологне мĕнле вулană пулăттăр? *(Вĕçкĕнленсе, мăнаçланса вуламалла.)*

*Ачасем вуласа пăхаççĕ, камăн вулавĕ вырăнлăрах пулнине палăртаççĕ.*

— Хурчăка вĕçсе килнĕ вырăна, сирĕн шутпа, мĕнле вуламалла? (*Хумханса, сасăпа тем япăххине сиснине палăртса вуламалла)*

*Вуласа пăхаççĕ, чи лайăх вулакана палăртаççĕ.*

— Юлашки абзаца мĕнле вулană пулăттăр?

*(Лăпкă сасăпа, вĕçкĕнленни, капайчăкланни ырă патне çитерменнине кăтартса вуламалла.)*

*Темиçе ача вуласа кăтартать. Мĕнле вулани вырăнлăрах пулнине сӳтсе яваççĕ.*

*Юлашкинчен чи лайăх вулакансем юмаха пĕтĕмĕшле вулаççĕ.*

5. «Кушакпа çерçи» юмахпа ĕçлени.

— «Кушакпа çерçи» юмахăн тĕп сăнарĕсем мĕнсем-ши?

*Ачасем хăйсен шухăшне калаççĕ, унтан юмахпа ăшра вуласа паллашаççĕ.*

— Ку юмах хăш ушкăна кĕрет? Мĕншĕнне ăнлантарăр.
— Ӳкерчĕке сăнăр. Ӳнерçĕ юмахри хăш вырăна сăнласа панă?
- Кушакпа Çерçи калаçăвне вуласа парăр.
— Юмахри сăнарсем урлă çынсен мĕнле енĕсене кăтарса панă?
— Ку юмах мĕне вĕрентет?
— Юлашки предложение вулăр. Кушакăн чăнах та çакăн пек йăла пур-ши?
*Çапла ĕçленĕ хыççăн ачасем юмаха рольсемпе вулаççĕ, вуланине хаклаççĕ.*

6. Киле ĕç пани.

— Вуланă юмахсенчен пĕрне каласа пама хатĕрленмелле.
7. Урока пĕтĕмлетни.
— Урокра мĕнле юмахсем вуларăмăр? Вĕсем мĕнле юмахсем?
— Юмахсен тата мĕнле тĕсĕсем пур?
— Чĕр чунсем çинчен çырнă юмахсем ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?

## 15-мĕш урок

**Тема:** Тиллит-тиллит тилĕ тус.

**Урок тĕллевĕ:** «Тилĕпе тăрна» юмахпа тата Георгий Лучăн «Тилĕ ташши» калавĕпе ĕçлесе хайлаври сăнарсене хак пама вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсен жанрне палăртма, чĕр чунсем çинчен çырнă юмахсене ытти юмахсенчен уйăрма пĕлни; сăнарсен ĕçĕсене тишкерес-ăнланас, сăнарсене хаклас хăнăхусене çирĕплетни; рольпе вулас, вуланине панă виçесене пăхăнса хаклас, вуланине каласа парас ăсталăхсене аталантарни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, чĕр чунсем çинчен çырнă юмахсен пуххи, Георгий Лучăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Киле панă ĕçе тĕрĕсленине пултаруллă калавçăсен (сăмах-юмах ăстисен) конкурсĕ пек ирттерме юрать.*
2. Кӳртĕм калаçу.
— Тупсăмне тупăр:

Вăрăм хӳрипе сулать,

Çивĕч шăлне кăтартать.

Пĕтĕм халап-юмахра

Чеелĕхпе палăрать.

— Çапла, ку тилĕ. Эсир пĕлекен мĕнле хайлавсенче тилĕ тĕл пулать?
— Эсир асăннă хайлавсенче тилле мĕнле сăнласа панă? *(Тилĕ илемлĕ, шукăль тумлă, вăрăм çемçе хӳреллĕ, йăрă, чее, чылай чух усал кăмăллă.)*
— Паян тилĕ çинчен калакан хайлавсемпе паллашăпăр. Ку хайлавсенче тилле мĕнле сăнласа панă-ши?

3. «Тилĕпе Тăрна» юмахпа ĕçлени.

— Хайлава вуличчен пĕлекен мелсемпе усă курса хайлав содержанийĕ, унăн жанрĕ çинчен тавçăрар-ха. *(Ку хайлав – юмах. Çапла шухăшлама пире хайлав ячĕ тата ун патне панă укерчĕк май параççĕ. Юмахăн авторне кăтартман, апла пулсан ку халăх юмахĕ. Юмах тилĕпе тăрна çинчен ĕнтĕ. Ӳкерчĕке пăхсан темшĕн тилли тăрна çине ларса вĕçме шутланă.)* Мĕншĕн-ши? Атьăр-ха хайлава вуласа пĕлер.

*Ачасем юмахпа хăйсем тĕллĕн ăшра вуласа паллашаççĕ, унтан ыйтусене хуравлаççĕ.*

— Тиллĕн мĕн тума вĕренес килнĕ?
— Тилĕ Тăрнаран мĕнле пулăшу ыйтнă?
— Пĕрремĕш хутĕнче вĕçме вĕренме хăтланни мĕнпе вĕçленнĕ? Тилĕ вĕçме вĕренейнĕ-и? Çак вырăна тупса вуласа парăр.
— Иккĕмĕш хутĕнче ĕç мĕнпе вĕçленнĕ?
— Юмахăн моралĕ мĕнле? Юмах вулакана мĕне вĕрентет?
— Ку мĕнле юмах? Юмахсен хăш ушкăнне кĕрет вăл?

*Малалла ачасем юмаха рольпе вулаççĕ, хăйсем вуланине хаклаççĕ.*

4. Георгий Лучăн «Тилĕ ташши» калавĕпе ĕçлени.

— Кĕнекесене 76-мĕш страницăна уçăр. Мĕнле хайлав панă унта? Хайлавăн авторĕ кам?

*Вĕрентекен Георгий Луч çинчен каласа парать, унăн кĕнекисене кăтартать.*

— Хайлав ячĕ мĕнле шухăшсем çуратать? Чĕр чунсем ташлаççĕ-ши вара?
— Ӳкерчĕке сăнăр. Мĕн калама пултаратăр ăна сăнанă хыççăн?
— Мĕнле жанрпа çырнă-ши автор ку хайлава? Атьăр вуласа палăртар.

*Ачасем черетпе вулаççĕ. Вĕрентекен ыйтусем парса ачасене мĕн вуланине тарăнрах ăнланма пулăшать. Пĕрремĕш абзаца вуланă хыççăн вĕрентекен ыйтать:*

— Как ведёт себя лиса?

*Тепĕр ачи иккемĕш абзаца вулать.*

— Какую картину вы представили?

*Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш абзаца вулаççĕ.*

— Как ведёт себя лиса? Опишите её действия.

— Чем можно объяснить такое поведение лисы? Что, на ваш взгляд, она учуяла?

*Пиллӗкмӗш абзаца вулаҫҫӗ.*

— Добилась лиса своей цели?

*Тепӗр икӗ абзаца вулаҫҫӗ.*

— Как вы думаете, почему лиса не уходит? Ведь она съела одну мышку.

*Малалла кашни абзаца вуланӑ хыҫҫӑн вӗрентекен ачасене ҫак ыйтусемпе каласҭарать:*

— Как вы представляете лисью пляску?
— Что заставляло, по мнению автора, лису плясать?
— Почему мыши выскакивали из норы после танца лисы?
— Как вы думаете, легко давалась лисе охота на мышей? Найдите доказательство в тексте.
— Хайлавӑн жанрне палӑртӑр. Ку юмах е калав?
— Калавӑн теми тата тӗп шухӑшӗ мӗнле?
— Калава мӗнле вуламалла-ши? Пӗр пек сасӑпа е сасса улӑштармалла? Улӑштармалла пулсан, хӑш вырӑнта тата мӗнле?

*Ачасем вӗрентекен пулӑшнипе калава мӗнле вуламаллине палӑртаҫҫӗ. Йышӑннӑ пек вуласа кӑтартаҫҫӗ.*

5. Киле ӗҫ пани.
— «Тилӗпе Тӑрна» юмаха каласа пама е «Тилӗ ташши» калава илемлӗ вулама хатӗрленмелле.
6. Урока пӗтӗмлетни.
— Мӗнле хайлавсем вуларӑмӑр?
— Тилле мӗнле сӑнласа панӑ вуланӑ хайлавсенче?
— Халиччен вуланӑ хайлавсемпе танлаштарсан тилӗ сӑнарӗнче мӗнле пӗрпеклӗх тата мӗнле уйрӑмлӑх асӑрхарӑр?

**16-мӗш урок**

**Тема:** Чӗр чун тӗнчинчи туслӑх.

**Урок тӗллевӗ:** Николай Ытарайӑн «Йытӑпа кушак» юмахӗпе тата Ольга Туркайӑн «Юлташпа вӑйсӑрри те вӑйлӑ» калавӗпе ӗҫлесе хайлава тишкерес хӑнӑхусене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлав ячӗ, ӳкерчӗксем, словарьти сӑмахсем ҫине тайӑнса хайлав темине палӑртма пӗлни; чӗр чунсем ҫинчен ҫырнӑ юмахсене ытти юмахсенчен уйӑрни; сӑнарсен ӗҫӗсене тишкерсе ӑнланас, вуланине панӑ

виçесене пăхăнса хаклас, рольпе вулас, вуланине каласа парас ăсталăхсене туптани.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, чĕр чунсем çинчен çырнă юмахсен пуххи, Николай Ытарайăн тата Ольга Туркайăн сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен хайлавĕсен пуххи.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
2. Кӳртĕм калаçу.

— Доска çинче ваттисен сăмахĕсем. Вĕсене вулăр, мĕнле ăнланнине каласа парăр.

ТУСЛĂХРА ВĂЙ.
ÇИЛ СĂРТ-ТĂВА ИШЕТ, СĂМАХ – ТУСЛĂХА.

— Эсир мĕнле шутлатăр, чĕр чунсем хушшинче туслăх пур-ши?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн урок темине калать.*

— Паянхи урок теми – «Чĕр чун тĕнчинчи туслăх».
— Чĕр чунсем хушшинчи туслăх çинчен çырнă кĕнекесем вуланă-и эсир?

*Кунта Михаил Пляцковский, Владимир Сутеев, Владимир Дуров тата ытти вырăс çыравçисен хайлавĕсем çинчен калаçма пулать. Чăвашла хайлавсенчен Анатолий Ыхран «Туслашни» калавне аса илни вырăнлă. Ăна пĕрремĕш класра вуланă.*

— Паян эпир Николай Ытарайăн «Йытăпа Кушак» тата Ольга Туркайăн «Юлташпа вăйсăрри те вăйлă» хайлавĕсемпе паллашăпăр.

*Вĕрентекен çыравçăсем çинчен кĕскен каласа парать, вĕсен кĕнекисене кăтартать, вуланă хайлавĕсене аса илтерет.*

3. Николай Ытарайăн «Йытăпа Кушак» юмахĕпе ĕçлени.

*Хайлава вуличчен ачасем вĕрентекенпе пĕрле тĕрлĕ мелпе усă курса хайлав содержанийĕ, унăн жанрĕ мĕнле пулма пултарнине тавçăрма тăрăшаççĕ, унтан вĕрентекен хайлава вуланине итлеççĕ.*

— Мĕнле чĕр чунсене пĕрле пурăнма чĕннĕ авалхи Этем?
— Малтан Йытăпа Кушак Этем патĕнче мĕнле пурăннă?
— Мĕн пирки вĕсем тавлашса кайнă? Вĕсен тавлашăвне рольпе вуласа парăр.
— Тавлашу мĕн çуратнă? Кун çинчен автор мĕнле çырса кăтартать? Тупса вулăр.
— Пирĕн вăхăтри кушаксемпе йытăсен пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăнăвĕсем çинчен хайлавра мĕн каланă? Вуласа парăр.

— Хайлавӑн жанрне палӑртӑр.
— Мӗнле юмах ку?
— Юмахӑн тӗп шухӑшӗ мӗнле-ши?

4. Ольга Туркайӑн «Юлташпа вӑйсӑрри те вӑйлӑ» калавӗпе ӗҫлени.

— Хайлава вуличчен ун ҫинчен мӗн калама пултаратӑр?

*Ачасене итленӗ хыҫҫӑн вӗрентекен калава черетпе вулаттарать. Ыйтусем парса ӑна тарӑнрах ӑнланма пулӑшать:*

— Кто рассказчик в этом произведении?
— Что мы узнали из первого абзаца?
— Почему, по мнению сына, к скворечнику не прилетают птицы?
— Что на это отвечает отец?
— Как объясняет отец то обстоятельство, что скворец к гнезду прилетел один?
— Оправдалось обещание отца?
— Что происходило в семье скворцов летом и осенью?
— Кто занял скворечник после отлёта скворцов на юг?
— Как вели себя воробьи около скворечника весной?
— Как отреагировали воробьи на прилёт скворца к их скворечнику?
— Почему в борьбе за скворечник победу одержали воробьи?
— Какова главная мысль этого произведения? В каких предложениях текста она заключена? Прочитайте.
— Хайлавӑн ячӗ час-часах унӑн темине уҫса парать. Ку калав ячӗ ҫинчен мӗн калама пулать? Вӑл калавӑн темипе ҫыхӑннӑ-и?

*Ачасем вӗрентекенпе пӗрле калав ячӗ унӑн тӗп шухӑшне уҫса панине палӑртаҫҫӗ.*

— Хайлав ячӗ, апла пулсан, хайлавӑн тӗп шухӑшӗпе те ҫыхӑнма пултарать.

5. Урока пӗтӗмлетни.

— Урок пуҫламӑшӗнче эпир икӗ ваттисен сӑмахӗпе паллашрӑмӑр. Вӗсенчен хӑшӗ «Йытӑпа Кушак» юмахӑн, хӑшӗ «Юлташпа вӑйсӑрри те вӑйлӑ» калавӑн тӗп шухӑшне уҫса парать?
— Урокра вуланӑ хайлавсем тӑрӑх мӗнле пӗтӗмлетӳ тума пулать? Чӗр чунсен тӗнчинче туслӑх, пӗр-пӗрне пулӑшасси пур-ши? Эсир хӑвӑр ҫавнашкал пулӑмсене асӑрхаман-и?

*Ачасен хуравӗсене итленӗ хыҫҫӑн вӗрентекен пӗтӗмлетет, киле ӗҫ парать.*

— Чӗр чунсем те пӗр-пӗрне пулӑшаҫҫӗ. «Юлташпа вӑйсӑрри те вӑйлӑ» калав туслӑхра вӑй пулнине кӑтартса парать. «Йытӑпа кушак» юмах вара пӗчӗк кӑлтӑк, шутламасӑр каланӑ сӑмах туслӑха ӗмӗрлӗхе аркатма пултарнине ҫирӗплетет.

6. Киле ӗҫ пани.

- Чӗр чунсен пурнӑҫӗнчи хӑвӑр асӑрханӑ пулӑмсем ҫинчен каласа пама хатӗрленӗр.

## 17-мӗш урок

**Тема:** Кӗске хӳре, чалӑш куҫ.

**Урок тӗллевӗ:** Александр Савельев-Сасӑн «Тухтӑр» сӑввипе тата Александр Галкинӑн «Талпас Карсак» юмахӗпе ӗҫлесе хайлавсенчи сӑнарсене хак пама пӗлнине ҫирӗплетесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлава тишкерме пултарни; чӗр чунсем ҫинчен ҫырнӑ юмахсене ытти юмахсенчен уйӑрма пӗлни; сӑнарсен ӗҫӗсене ӑнланас, хак парас, вуланине панӑ виҫесене пӑхӑнса хаклас, каласа парас ӑсталӑхсене туптани.

**Кирлӗ хатӗрсем:** вӗренӳ кӗнеки, чӗр чунсем ҫинчен ҫырнӑ юмахсен пуххи, Александр Савельев-Сасӑн тата Александр Галкинӑн сӑн ӳкерчӗкӗсем, вӗсен хайлавӗсен пуххи.

### Урок юхӑмӗ

1. Киле панӑ ӗҫе тӗрӗслени.
   *Ачасем хӑйсем чӗр чунсен пурнӑҫне сӑнаса мӗн курни-асӑрхани ҫинчен каласа параҫҫӗ.*
2. Кӳртӗм калаҫу.
   - Мӗнле чӗр чун ҫинчен ҫакӑн пек калаҫҫӗ:

КӖСКЕ ХӲРЕ, ЧАЛӐШ КУҪ.

ҪУЛЛА СӐРӐ, ХӖЛЛЕ ШУРӐ.

- Эсир мулкачсем ҫинчен мӗнле хайлавсем вуланӑ?
- Авторсем мулкача мӗнле сӑнлаҫҫӗ?
- Халӑх юмахӗсенче мулкач мӗнле?
- Паян урокра мулкач ҫинчен тата икӗ хайлав вулӑпӑр. Авторӗсем ку хайлавсенче мулкача мӗнлерех сӑнласа панӑ-ши?

3. Александр Савельев-Сасӑн «Тухтӑр» сӑввипе ӗҫлени.
- Кӗнекесене 74-мӗш страницӑна уҫӑр. Пӗрремӗш хайлав «Тухтӑр» ятлӑ. Унӑн авторӗ кам?
- Эсир Александр Савельев-Сасӑн мӗнле хайлавӗсене вуланӑ?

*Вӗрентекен Александр Савельев-Сас ҫинчен кӗскен аса илтерет, унӑн кӗнекисене кӑтартать. Ҫапла ӗҫленӗ хыҫҫӑн сӑвва вуласа парать, ыйтусемпе ӗҫлеттерет:*

- Мулкач ҫурине мӗн пулнӑ? Вуласа парӑр.

- Чи малтан вăл мĕнрен пулăшу ыйтать? Вуласа парăр.
- Унтан мĕн патне каять? Ун çинчен автор мĕнле çырать?
- Мулкач çурине мĕн пулăшма пултарнă?
- Сăвă мĕнпе вĕçленет?
- Сăвăра юмах паллисем пур-и?
- Сăвăра автор мулкач çурине мĕнле сăнланă? *(Мулкач çури малтан, ури ыратнă чух, нăйкăшать, пулăшу ыйтать. Ури тӳрленсен вăл савăнăçлă сиккелет, хытă чупать, хуса тытма та çук. Мулкач çури кирек мĕнле ача пекех çăмăл, вăр-вар, хаваслă, выляса аманма та пултарать.)*
- Ку сăвăра миçе сăнар? Рольпе вулама миçе «артист» кирлĕ? Сăвăри пур герой та калаçать-и? *(Упапа ула такка калаçмаççĕ. Сăвва рольпе вулама виçĕ «артист» кирлĕ: мулкач çури, пăши тата автор.)*
- Сăнарсен сăмахĕсене, сирĕн шутпа, мĕнле вуламалла?

*Ачасем кашни сăнарăн сăмахĕсене мĕнле вуламаллине сӳтсе яваççĕ, темиçе ача вуласа кăтарть, ыттисем вĕсем вуланинчен чи вырăнлине палăртаççĕ, унтан сăвва рольпе вулаççĕ.*

3. Александр Галкинăн «Талпас Карсак» юмахĕпе ĕçлени.
— Кĕнекесене 79-мĕш страницăна уçăр, хайлав ятне вулăр. Словарьпе усă курса хайлав ятне вырăсла куçарăр.
— Ку хайлав авторĕ кам? Вуланă-и эпир унăн хайлавĕсене?

*Вĕрентекен автор çинчен каласа парать.*

— Ӳкерчĕке сăнăр. Мĕн курнине каласа парăр.
— Эсир мĕнле шутлатăр, «Талпас карсак» мĕнле жанрлă хайлав?
— Ку хайлав мĕнле мулкач çинчен-ши? Юмаха вуласа паратăп. Итлĕр.

*Вĕрентекен вулать. Вуланă май ыйтусем парса хăш-пĕр вырăнсене лайăхрах ăнланма пулăшать:*

— Почему зайца-русака прозвали «Катăк Тута»?
— Какую проблему обсуждали зайцы однажды на поляне?
— Как менялась речь Катăк Тута на собрании? Как вы понимаете фразу «хĕрӳленсех кайнă»?
— Как Катăк Тута предложил решить проблему борьбы с волком?
— Что произошло во время похода на волка?
— Как повёл себя Катăк Тута, когда услышал, что волк рядом?
— Чем оказалось на самом деле то, что зайцы приняли за волка?
— Какое прозвище получил Катăк Тута после этого случая? Как к нему теперь относятся его собратья?

*Малалла ачасем юмахри хăш-пĕр вырăна палăртуллă вулаççĕ.*

— Катăк Тута пухура каланă сăмахсене тупăр. Ăшра вулăр.

— Мĕншĕн ытти мулкачсем Катăк Тутана ĕненнĕ?
— Çапла, Катăк Тута хĕрӳллĕн, ĕнентермелле калаçнă. Пирĕн тĕллев: мулкач сăмахĕсене итлекенсене чĕнсе, ĕнентерсе вуласа памалла.

*Ачасем вулаççĕ, пĕр-пĕрин вулавне хаклаççĕ.*

— Мулкачсем тункатаран хăрана вырăна тупăр. Ăшра вулăр.
— Мĕнле вуламалла-ши ку вырăна?
*Ачасем ку вырăна мулкачсем пăлханса, хăраса ӳкнине кăтартма тарăшса вулаççĕ.*
— Александр Галкин çырнă юмахри мулкач сăнарĕ çинчен мĕн калама пулать?
— Ку юмахăн теми мĕнле? Тĕп шухăшне палăртăр.

4. Киле ĕç пани.

— Эсир мĕнле шутлатăр, Катăк Тутана çакăн пек пулса тухнă хыççăн мулкачсем хушшинче пурăнма çăмăл-ши?
— Паллах, йывăр. Ман шутпа, Катăк Тута хăй те çакна ăнланать. Ытти мулкачсем унран кулаççĕ, вăл мĕн каланине текех итлемеççĕ. Катăк Тутан ытти мулкачсем ăна хисеплеччĕр, ун çинчен хăйсен шухăшне улăштарччăр тесен мĕн тумалла-ши? Килте çакăн çинчен шухăшласа çитес урокра каласа пама хатĕрленĕр.

*Калав пуçламăшне класра пĕрле шухăшласа тума юрать. Килте кашни ăна малалла тăстăр.*

5. Урока пĕтĕмлетни.

— Урокра мĕнле хайлавсемпе паллашрăмăр?
— Вĕсенче мулкачсене мĕнле сăнласа панă?

## 18-мĕш урок

**Тема:** Вăрман пуянлăхĕ.

**Урок тĕллевĕ:** Альбина Юратун «Вăрман» сăввипе тата Ольга Туркайăн «Çулçă» юмахĕпе ĕçлесе вулавçă ăслайĕсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлаври геройсен хăтланăвĕсене ăнлантарас тата хаклас, хайлав темине тата тĕп шухăшне палăртас, текстра сăнарлă сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсене асăрхас, вĕсене ăнланас ăсталăхсем аталанни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Альбина Юратун тата Ольга Туркайăн сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен кĕнекисем.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе терĕслени.

*Ачасем Катăк Тута малашлăхĕ çинчен хăйсем мĕн шухăшланине каласа параççĕ.*

2. Кÿртĕм калаçу.

— Доска çинче тупмалли юмахсем. Мĕн-ши вĕсен тупсăмĕ?

1) Çулла симĕс кĕпепе, хĕлле шурă кĕрĕкпе.
2) Кашни чĕр чунăн ку пÿртре хăйĕн килĕ пур: хăшĕн йывăç тăрринче, хăшĕн тĕмсем айĕнче, хăшĕн çырма тĕпĕнче.

— Çапла, ку вăрман. Паянхи урок теми – «Вăрман пуянлăхĕ?»

3. Альбина Юратун «Вăрман» сăввипе ĕçлени.

*Сăвва вĕрентекен вулать, ачасене ыйтусем парса ĕçлеттерет.*

— Сăввăн малтанхи йĕркисенче вăрманăн мĕнле пуянлăхĕ çинчен каланă? Вуласа парăр.
— Пĕчĕк ăман мĕнле пысăк ĕç тăвать? Сăвăра ун çинчен мĕн çырнă?
— Упана поэт мĕнле сăнланă? Вуласа парăр.
— Йывăç çинче пурăнакан чĕр чунсем çинчен мĕн калать çыравçă?
— Тăрнана кампа танлаштарать поэт?
— Сăвăри мĕнле йĕркесем, сирĕн шутпа, хайлавăн тĕп шухăшне уçса параççĕ?
— Ку сăвăра танлаштарса каланисем пур. Тупăр-ха вĕсене. Вуласа парăр.
— Çак сăвва çыракан поэт çинчен эсир мĕн каланă пулăттăр? Унăн мĕнле хайлавĕсене эсир пĕлетĕр?
— «Вăрман» сăвва мĕнле кăмăлпа вуламалла-ши? Ушкăнсенче канашласа илемлĕ вулама хатĕрленĕр.

*Ачасем ушкăнсенче палăртса вуламалли сăмахсене тупаççĕ, хăш вырăнта сасса мĕнле улăштармаллине сÿтсе яваççĕ. Илемлĕ вуласа пама хатĕрленеççĕ. Унтан кашни ушкăнтан пĕр ача вуланине итлеççĕ.*

4. Ольга Туркайăн «Çулçă» хайлавĕпе ĕçлени.

*Хайлавпа паллашиччен ачасем пĕлекен мелсемпе усă курса унăн содержанийĕ мĕн çинчен пулма пултарнине тавçăрма тăрăшаççĕ. Унтан хайлава вĕрентекен вулать, ачасем итлеççĕ.*

— Сирĕн шухăшсем-тавçăрусем тĕрĕс пулчĕç-и?
— Мĕн çинчен пулчĕ ку хайлав? Хăвăр ăнланнине кĕскен вырăсла каласа парăр.
— Хайлаври ĕçсем çулталăкăн хăш вăхăтĕнче пулнă?
— Хайлаври геройсене аса илер-ха. Тĕп геройĕ хăшĕ?
— Вĕрене çулçине автор мĕнле сăнласа парать? Текстра тупса вулăр.
— Вĕренепе ытти йывăççсем мĕншĕн куляннă?
— Вĕрене çулçи мĕн çинчен ĕмĕтленнĕ? Унăн ĕмĕчĕ пурнăçланнă-и?
— Юман çулçи каланă сăмахсене тупса вулăр. Мĕнле ăнланатăр эсир вăл каланине?

— Вĕрене çулçине кам юман çулçи асăрхаттарнă шăпаран хăтарнă?
— Хайлавăн жанрне палăртăр.
— Ăна çыраканĕ кам?

*Вĕрентекен 66-мĕш страницăра юмахсем çинчен ăнлантарса çырса панине вулама сĕнет, унтан кĕскен Ольга Туркай çинчен аса илтерет.*

— Ку юмахăн моралĕ мĕнле? Автор хăйĕн вулаканĕсене мĕн каласшăн пулнă-ши çак юмахпа?

5. Киле ĕç пани.

— «Вăрман» сăвва илемлĕ вулама хатĕрленмелле. Кăмăл пулсан пăхмасăр калама вĕренме юрать.

6. Урока пĕтĕмлетни.

— Урокра паян камсен хайлавĕсемпе паллашрăмăр?
— Пирĕн тăрăхри вăрмансем мĕнпе пуян?
— Çут çанталăк пуянлăхĕ ан иксĕлтĕр тесен пирĕн мĕн тумалла?

## Пай: Сивĕ хĕл çитрĕ

## 19-мĕш урок

**Тема:** Хĕл юмахĕ.

**Урок тĕллевĕ:** Александр Пăрттан «Хĕл юмахĕ» сăввипе тата Надежда Ильинан калавĕпе ĕçлесе ачасене илемлĕ литература чĕлхине сăнама-тишкерме вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсене итлесе, вуласа ăнланма, ăса хывма, илемлĕх мелĕсене курма, текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсене ăнланма вĕренсе пыни; илемлĕ, палăртуллă вулама хăнăхни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ хатĕрĕ, Александр Пăрттан тата Надежда Ильинан сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Киле панă ĕçе тĕрĕсленине пултаруллă вулавçăсен конкурсĕ пек ирттерме юрать.*
2. Кӳртĕм калаçу.
   Çĕнĕ пай темипе паллаштарни.

*Вĕрентекен кĕнекере панă тупмалли юмахсене вулать, ачасем вĕсен тупсăмĕсене пĕлме тăрăшаççĕ. Кайран кĕнекене уçса пай темине вулаççĕ, ӳкерчĕке сăнаççĕ.*

— Çыравçăсемпе ӳнерçĕсене, сирĕн шутпа, хĕл мĕнпе илĕртет?

— Эсир хĕле мĕншĕн юрататăр?
— Хĕл çинчен эсир мĕнле хайлавсем вуланă?
— Паян хĕл илемне сăнлакан çĕнĕ хайлавсемпе паллашăпăр.

3. Александр Пăртта çырнă «Хĕл юмахĕ» сăвăпа ĕçлени.
   *Ачасем сăвăпа çурма сасăпа вуласа паллашаççĕ, словарьпе усă курса ăнланман вырăнсене куçараççĕ. Унтан вĕрентекен сăвва илемлĕ вуласа парать, ыйтусемпе ĕçлеттерет:*

— Автор юр пĕрчисем çинчен мĕн калать? Вĕсене мĕнпе танлаштарать?
— Çĕр çине витекен юра автор мĕнпе танлаштарать? Вуласа парăр.
— Иккĕмĕш строфари сăмахсене эсир мĕнле ăнланатăр? Мĕншĕн «шурă юр – телей пĕрчи» (*пĕрчĕ* в данном случае *отдельная частичка*)?
— Пас тытнă йывăççене автор мĕнле сăнлать? Вуласа парăр.
— Сăвăри юлашки йĕркесене мĕнле ăнланатăр?
— Сăвăра сăнарлă сăмах çаврăнăшĕсем, танлаштарусем нумай. Тупса вулар-ха вĕсене.
— Сăвва илемлĕ вулама хатĕрленĕр.

*Ачасем ушкăнсенче палăртса вуламалли сăмахсене тупаççĕ, сасса хăш вырăнта мĕнле улăштармаллине сӳтсе яваççĕ, кайран сăвва сасăпа вулаççĕ, хăйсен вулавне хаклаççĕ.*

4. Надежда Ильинан хайлавĕпе ĕçлени.

*Хайлава ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра вулаççĕ. Унтан вĕрентекен ыйтусем парса ĕçлеттерет:*

— Виталик ирхине вăрансан мĕн асăрханă?
— Мĕншĕн пӳрт çак ир илемлĕрех, çутăрах пек туйăннă ачана?
— Хайлавăн темине тата тĕп шухăшне палăртăр.
— Ку калава мĕнле ят пама пулать?
— Калавра евĕрлев сăмахĕсене (сас-чĕве сăнлакан сăмахсене) тупса вулăр.
— Мĕнле туйăмпа вуламалла ку хайлава?
   *Ыйтусене хуравланă, ĕçсене пурнăçланă хыççăн ачасем икшерĕн ĕçлесе калава илемлĕ вулама хатĕрленеççĕ, кайран 1-2 ача сасăпа вулать, ыттисем вĕсен вулавне хаклаççĕ.*

5. Киле ĕç пани.

Александр Пăрттан «Хĕл юмахĕ» сăввине пăхмасăр калама вĕренмелле.

6. Урока пĕтĕмлетни.

— Сирĕн шутпа, çыравçăсем мĕншĕн хĕл çинчен çыраççĕ?
— Сире хĕл килĕшет-и? Пĕрремĕш хут юр çуни сирĕнте мĕнле кăмăл-туйăм çуратрĕ? Каласа парăр.

**20-мĕш урок**

**Тема:** Илеме курма вĕренер.

**Урок тĕллевĕ:** Уйăп Мишшин «Хĕл çитрĕ» сăввипе тата Арсений Тарасовăн «Чуна хывнă илем» калавĕпе ĕçлесе ачасене хĕле сăнлакан тĕрлĕ жанрлă илемлĕ литература хайлавĕсемпе кăсăклантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсене итлесе, вуласа ăнланма, ăса хывма, илемлĕх мелĕсене курма, текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсене ăнланма вĕренсе пыни; илемлĕ, палăртуллă вулама хăнăхни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кенеки, Уйăп Мишшин тата Арсений Тарасовăн сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен хайлавĕсен пуххи.

## Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Киле панă сăвва ачасем черетпе вулаççĕ.*

2. Кӳртĕм калаçу.

— Сивĕ хĕл илемне çыравçăсем мĕнле сăнланине çак урокра ытти хайлавсене вуласа сăнăпăр. Паян эпир Уйăп Мишши тата Арсений Тарасов çырнă хайлавсемпе паллашăпăр.

*Вĕрентекен Уйăп Мишши тата Арсений Тарасов çинчен кĕскен каласа парать, вĕсен кĕнекисене кăтартать.*

3. Уйăп Мишшин «Хĕл çитрĕ» сăввипе ĕçлени.
   *Сăвва вĕрентекен вулать.*

— Мĕнле кăмăл-туйăм çуралчĕ сирĕн ку сăвва итленĕ хыççăн? Мĕншĕн?
  — Сăвăри мĕнле сăмахсем хаваслăх, савăнăç туйăмне палăртаççĕ? Тупса вулăр. *(пит аван çке, шавлăн выляса кулма, вĕçнĕ евĕр ярăнма, çав хаваслăха)*
  — Пĕрремĕш строфана вулăр. Ӱнерçĕ пулнă пулсан çак йĕркесене мĕнле ӳкерсе кăтартнă пулăттăрччĕ-ши эсир?
  — Иккĕмĕш строфана вулăр. Мĕн калама пултаратăр геройăн кăмăл-туйăмĕ пирки? *(Ачаваскать, унăн хăвăртрах йĕлтĕр сырса тусĕпе пĕрле хирелле вĕçтерес килет.)*
  — Виççĕмĕш строфана вулăр. Ача мĕншĕн савăнать?
  — Юлашки строфана вулăр. Эсир ача чĕнсе каланипе килĕшетĕр-и? Хĕллехи кунсене мĕнле ирттеретĕр?

*Çапла ĕçленĕ хыççăн ачасем хăйсем тĕллĕн сăвва илемлĕ, сасса кирлĕ пек улăштарса вуласа пăхаççĕ, унтан сасăпа вуласа параççĕ, кашнин вулавне хаклаççĕ.*

4. Арсений Тарасовăн «Чуна хывнă илем» калавĕпе ĕçлени.

*Калава ачасем хӑйсем тӗллӗн ӑшра вулаççӗ.*

— Калаври ӗç-пуç хăçан пулса иртет? *(Пӗрремӗш хӗл кунӗнче.)* Калаври йӗркесемпе хӑвӑр хурава çирӗплетӗр.
— Ашшӗ ывӑлне пӗрремӗш хӗл кунне мӗнле ирттерме сӗнет? Ашшӗн сӑмахӗсене текстра тупса вуласа парӑр. Вӑл мӗнле илем çинчен калать?
— Ача юрпа витӗннӗ аслӑ уя мӗнпе танлаштарать?
— Ашшӗпе ывӑлӗ хушшинче уйра, йӗлтӗр йӗрӗ çинче мӗнле калаçу пулса иртнӗ? Ашшӗ ывӑлне мӗншӗн ырланӑ?
— Каçхине ача мӗн тунӑ?
— Мӗншӗн ашшӗне ывӑлӗн ӗçӗ килӗшмен?
— Вӑл ывӑлне мӗнле тӗслӗх илсе кӑтартнӑ? Ашшӗн сӑмахӗсене тупса вуласа парӑр.
— Ывӑлӗ ашшӗн сӑмахӗсене мӗнле йышӑннӑ? Вӑл мӗнле пӗтӗмлетӳ тунӑ? Вуласа парӑр.
— Калав ятне эсир мӗнле ӑнланатӑр?
— Ку хайлавӑн тӗп шухӑшне палӑртӑр.

*Вӗрентекен пӗтӗмлетет.*

— Хайлавӑн тӗп шухӑшӗ унӑн ячӗпе пӗр килет. Илеме курма пӗлмелле, ӑна чуна хывмалла, пур ӗçре те çакна пӑхӑнса пымалла, пур япалана та, ӗçе те илемлӗ тума тӑрашмалла.

5. Киле ӗç пани.

— Хӗлле пушӑ вӑхӑта мӗнле ирттерни çинчен каласа пама хатӗрленмелле.

6. Урока пӗтӗмлетни.

— Урок темине аса илер-ха. *Илеме курма пӗлер* тенине эсир мӗнле ӑнланатӑр?

## 21-мӗш урок

**Тема:** Хӗл уявӗ.

**Урок тӗллевӗ:** Александр Кӑлканӑн «Юр çӑвать» тата Слован Савкайӑн «Ёлкӑра» сӑввисемпе ӗçлесе ачасен илемлӗ вулав хӑнӑхӑвӗсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсене итлесе, вуласа ӑнланма, ӑса хывма, илемлӗ вулама, вуланине хаклама, илемлӗх мелӗсене курма-асӑрхама, ӑнланма хӑнӑхса пыни.

**Кирлӗ хатӗрсем:** вӗренӳ кӗнеки, Александр Кӑлканӑн тата Слован Савкайӑн сӑн ӳкерчӗкӗсем, вӗсен хайлавӗсен пуххи.

## Урок юхӑмӗ

1. Киле панӑ ӗçе тӗрӗслени.

*Ачасем хӗлле пушӑ вӑхӑтра мӗн туни çинчен каласа параççӗ.*

2. Кӳртӗм калаҫу.

— Ҫапла, эпир хӗлле йӗлтӗрпе, конькипе ярӑнса, юрпа выляса савӑнатпӑр, хӗл илемӗпе киленетпӗр. Ҫапах та чи савӑнӑҫлӑ туйӑмсем пирӗн пурин те Ҫӗнӗ Ҫул уявӗпе ҫыхӑннӑ. Паян урокра хӗл илемӗ, Ҫӗнӗ Ҫул ҫинчен ҫырнӑ икӗ сӑвӑпа паллашӑпӑр. Кӗнекесене 91-92-мӗш страницӑсене уҫӑр. Ку сӑвӑсен авторӗсем камсем?

*Вӗрентекен ачасене Александр Кӑлканӑн тата Слован Савкайӑн сӑн ӳкерчӗкӗсене кӑтартать. Ачасем Александр Кӑлкан ҫинчен кӗнекере ҫырса панипе вуласа паллашаҫҫӗ, Слован Савкай ҫинчен вӗрентекен каласа панине итлеҫҫӗ, авторсен кӗнекисен выставкине сӑнаҫҫӗ.*

3. Александр Кӑлканӑн «Юр ҫӑвать» сӑввипе ӗҫлени.

— Сӑвӑ мӗн ятлӑ?

— Ӳкерчӗке сӑнӑр, мӗн курни-сӑнанине каласа парӑр.

— Сирӗн шутпа, сӑвӑ мӗн ҫинчен-ши?

*Сӑвва вӗрентекен вулать.*

— Камсене тата мӗн тума чӗнсе калать лирикӑллӑ герой?

— Пӗрремӗш йӗркесене вулӑр. Сирӗн куҫ умне мӗнле ӳкерчӗк тухса тӑчӗ?

— Иккӗмӗш строфана вулӑр. Кунта ачасене мӗн тума чӗнеҫҫӗ?

— Виҫҫӗмӗш строфари иккӗмӗш йӗркене эсир мӗнле ӑнланатӑр?

— Виҫҫӗмӗш строфара ачасене ӑҫта чӗнеҫҫӗ?

— Александр Кӑлканӑн сӑвви эпир халиччен вуланӑ мӗнле хайлава аса илтерет? Мӗнле пӗрпеклӗхсем куратӑр эсир Уйӑп Мишшин «Хӗл ҫитрӗ» тата Александр Кӑлканӑн «Юр ҫӑвать» сӑввисенче?

— Александр Кӑлканӑн «Юр ҫӑвать» сӑввинче мӗнле йӗркесем темиҫе хут тӗл пулаҫҫӗ?

— Ку уйрӑмлӑх халӑх сӑмахлӑхӗн мӗнле жанрне аса илтерет? *(Халӑх юррисенче пӗр йӗркене темиҫе хут калани час-часах тӗл пулать.)*

— Ҫапла, ку сӑвӑпа та юрӑ хывнӑ. Ачасем Ҫӗнӗ Ҫул уявӗнче ку юрра тӑтӑш юрлаҫҫӗ. (*Ачасене юрра юрласа памалла е итлеттермелле. Юрлама вӗрентсен те аван.)*

— Сӑвӑри чӗнсе калакан вырӑнсене тупӑр. Ҫав йӗркесене мӗнле вуламалла пек туйӑнать сире? Вуласа кӑтартӑр.

— Сӑвва хӑвӑр тӗллӗн илемлӗ вулама хатӗрленӗр, унтан черетпе сасӑпа пурте илтмелле вулӑпӑр.

*Ачасем сӑвва вулаҫҫӗ, кашнин вулавне хаклаҫҫӗ.*

4. Слован Савкайӑн «Ёлкӑра» сӑввипе ӗҫлени.

— Ку сӑвӑ мӗн ҫинчен-ши? Мӗншӗн ҫавӑн пек шутлатӑр?

— Сӑвва хӑвӑр тӗллӗн вулӑр.

— Сӑвӑ содержанийӗ ҫинчен ӑна вуличчен шухӑшлани тӗрӗс пулчӗ-и?

— Асламӑшӗ ачасене ӑҫта кайма чӗнет? Вуласа парӑр.

- Мăнукĕ ёлкăна çитсенех мĕн çинчен шутлать? *(Халь паллайĕç-ши пире?)* Мĕнле шутлатăр, мĕншĕн çавăн пек шухăш пырса кĕрет ачан пуçне?
- Ёлкăна ачасем мĕнле тумсемпе пынă?
- Тилĕ çинчен калакан йĕркесене мĕнле ăнланатăр?
- Юр пике çинчен мĕн каланă? Мĕншĕн Юр пикен уттине автор «юхса çӳрет» сăмахсемпе сăнлать?
- Лирикăллă герой хăй çинчен мĕн калать? Мĕнле куратăр эсир ăна? *(Ача мулкач тумĕпе, çавăнпа мулкач пек хăтланма тăрăшать. Хусканăвĕсемпе, хăйне тыткаланипе мулкача сăнлама хăтланать.)*
- Асламăшĕ ёлкăра хăйне мĕнле тыткалать? Вуласа парăр.
- Сăввăн кашни йĕркине мĕнле вуламалли çинчен шухăшласа пăхăр, илемлĕ вулама хатĕрленĕр.

*Сăвва вулаççĕ, вуланине хаклаççĕ.*

5. Киле ĕç пани.
- Икĕ сăвăран пĕрне пăхмасăр калама вĕренмелле.
6. Урока пĕтĕмлетни.
- Паян урокра мĕнле хайлавсемпе паллашрăмăр? Вĕсен жанрне палăртăр.
- Авторĕсем камсем? Вĕсем çинчен мĕн пĕлтĕр?

## 22-мĕш урок

**Тема:** Хĕллехи хăнасем – уйăпсем.

**Урок тĕллевĕ:** Герасим Харлампьевăн «Уйăпсем» калавĕпе ĕçлесе ачасене вуланă хайлавăн содержанине туллин каласа пама вĕрентесси, кайăксен хĕллехи пурнăçне сăнама хăнăхтарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлава вуласа ăнланма, ăса хывма, планпа, хатĕр виçесемпе усă курса содержание туллин каласа пама хăнăхни; текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсемпе харпăр хăй пуплевĕнче усă курма пултарни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Герасим Харлампьевăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Киле панă ĕçе тĕрĕсленине илемлĕ вулав конкурсĕ пек иртterme юрать.*
2. Кӳртĕм калаçу.
- Тупмалли юмахăн тупсăмне пĕлĕр:
  Шур хурăнсем хушшинче

Йӗм-йӗм хӗрлӗ пилешсем.

Яштак пилешсем ҫинче

Савӑнаҫҫӗ …

(кайӑксем, чӗкеҫсем, уйӑпсем, кӑсӑясем)

— Аялта панӑ сӑмахсенчен хӑшӗсем сӑвӑ вӗҫне юрӑхлӑ? *(кайӑксем, уйӑпсем)*
— Ытти сӑмахсене мӗншӗн йышӑнмастӑр? *(Чӗкеҫсем пирӗн патра ҫулла пурӑнаҫҫӗ, ҫулла пилеш ҫырлисем хӗрлӗ мар. Унсӑр пуҫне чӗкеҫ пилеш ҫырли ҫимест, хурт-кӑпшанкӑ ҫиет. Кӑсӑясем тӑватӑ сыпӑклӑ сӑмах. Сӑвва пӑсас мар тесен пире виҫӗ сыпӑклӑ сӑмах кирлӗ.)*

3. «Уйӑп» калавпа ӗҫлени.

— Кӗнекесене 94-мӗш страницӑна уҫар-ха. Паян вуламалли хайлав мӗн ятлӑ? Эсир мӗнле шутлатӑр, ку хайлав мӗн ҫинчен-ши?
— Уйӑпсем ҫинчен эсир мӗн пӗлетӗр?
— Эсир мӗнле шутлатӑр, ку мӗнле жанрпа ҫырнӑ хайлав-ши? Мӗншӗн апла шутлатӑр? *(Хайлава сӑвӑласа ҫырман, апла пулсан ку проза. Хайлав патне панӑ ӳкерчӗк ҫинче кайӑксене чӑн пурнӑҫри пек ӳкерсе кӑтартнӑ, апла пулсан ку юмах та мар пулӗ. Ку хайлава калав теме пулать пулӗ.)*

*Вӗрентекен калава вулать, вуланӑ май ыйтусем парса пырать:*

— Пӗрремӗш абзацран мӗн пӗлтӗр?
— Павел Петрович ачасене ӑҫта кайма чӗнет?
— Калаври ӗҫ-пуҫ хӑҫан пулса иртнӗ?
— Ҫула тухиччен вӗрентекен ачасене мӗн ҫинчен асӑрхаттарнӑ? Мӗнле шутлатӑр, мӗншӗн ҫакӑн пек калаҫу ирттерет-ши Павел Петрович?
— Вӑрман ҫывӑхне ҫитсен Павел Петрович ачасенчен мӗн ыйтнӑ?
— Ачасем унӑн ыйтӑвне мӗнле хуравланӑ?
— Хӗрлӗ пӑнчӑсен тупсӑмне ачасем мӗнле пӗлнӗ?
— Уйӑпсен пурнӑҫӗ ҫинчен мӗн пӗлтӗр?
— Мӗншӗн уйӑпсем пӗрре йывӑҫ ҫине вӗҫсе хӑпарнӑ, тепре юр ҫине вӗҫсе аннӑ?
— Юлашки абзаца эсир мӗнле ӑнланатӑр?
— Герасим Харлампьев ку калавпа хӑйӗн вулавҫисене мӗн каласшӑн пулнӑ-ши? Калавӑн тӗп шухӑшӗ, сирӗн шутпа, мӗнле?
— 97-мӗш страницӑра калавӑн планне панӑ. Вулар-ха ӑна.
— План тӑрӑх калав миҫе пая пайланать? Пӗрремӗш пайне мӗнле ят панӑ?
— Хӑвӑр тӗллӗн ӑшра вуласа калавӑн пӗрремӗш пайне палӑртӑр. Вуласа парӑр.
— Иккӗмӗш пайӗ мӗн ятлӑ? Ҫак пая вуласа парӑр.

— «Уйăпсем» пая тупса вулăр.
— Юлашки пайне вуласа парăр. Ăна мĕнле ят панă?
— Кирек мĕнле хайлав та виçĕ пайран тăрать. Пĕрремĕш пайĕ – пуçару. Вăл кĕске пай. Унăн тĕллевĕ: вулакана калавăн тĕп пайне ăнланма хатĕрлесси, калаçăва пуçласа ярасси. Ку пайра кĕскен ĕç-пуç ăçта, кампа пулса иртнине палăртаççĕ.
Иккĕмĕш пайĕ чи пысăкки. Вăл ĕç-пуç пĕтĕмĕшле мĕнле пулса иртнине каласа кăтартать. Ку пай – тĕп пай.

Виççĕмĕш пайĕнче – пĕтĕмлетӳ, мĕн çырса кăтартнине хаклани, мораль.

— Планăн хăш пункчĕ калавăн пуçару пайĕпе çыхăннă-ши?
— Калавăн тĕп пайĕ чи пысăкки терĕмĕр. Калавăн планне тунă чух тĕп пайăн содержанине уçса пама темиçе пункт та палăртма пулать. Хатĕр планри хăш пунктсем калавăн тĕп пайне уçса пама пулăшаççĕ-ши?
— Пĕтĕмлетĕве хăш пунктра тумалла?
— 97-мĕш страницăра таблица пур. Унта хайлав содержанине каласа парас пултарулăха хакламалли виçесене çырса панă. Пурĕ пилĕк виçе. Кашни виçе хушнă пек каласа парсан пурĕ 25 балл пуçтарма пулать.
— Пĕрремĕш виçене эсир мĕнле ăнланатăр? (*Планăн кашни пунктне уçса памалла.)*
— Иккĕмĕш виçепе каласа панин хăш енне хакламалла? *(Калавра мĕн пулса иртнине тĕплĕн, ним сиктермесĕр каласа пама пултарнине.)*
— Виççĕмĕш виçе каласа параканăн ĕçне хăш енчен хаклама май парать? *(Каласа панă чух автор сăмахĕсемпе, вăл усă курнă илемлĕх мелĕсемпе усă курма пултарнирне.)*
— Тăваттăмĕш виçепе мĕн хакламалла? (*Чăрăнусем тумасăр, айккинчен пулăшу кĕтмесĕр каласа пама пултарнине.)*
— Пиллĕкмĕш виçе мĕнле каласа пама ыйтать? (С*ăмахсене тĕрĕс каламалла, предложенисене чăваш чĕлхи законĕсене пăхăнса калăпламалла.)*
— Планпа тата таблицăпа усă курса «Уйăп» калавăн содержанине каласа пама хатĕрленĕр. Калав пĕчĕк мар, çавăнпа та ĕçе çăмăллатăпăр. Кашни ачан планăн пĕр пунктне уçса памалла пулать. Текста пĕтĕмĕшле каласа паман пирки пĕрремĕш виçене паянлăха шута илместпĕр.

*Вĕрентекен класри ачасене тăвата ушкăна пайлать. Кашни ушкăна планăн пĕр пунктне уçса пама хатĕрленме хушать.*

— Юлашки тăвата виçене тепĕр хут лайăх вулăр. Кашни ушкăн хăйĕн пайне каласа пама хатĕрленет, уншăн пурĕ 20 балл пухма пултарать.

*Пĕр вăхăт хушши хатĕрленнĕ хыççăн ачасем черетпе текст содержанине каласа параççĕ.*

4. Киле ĕç пани.

— Таблицăри виçесене пăхăнса планăн тепĕр пунктне уçса пама хатĕрленмелле. Урокра ĕçленĕ пункта илме юрамасть.

5. Урока пĕтĕмлетни.

— Паян урокра мĕнле хайлав вуларăмăр? Унан авторĕ кам? Герасим Харлампьевăн тата мĕнле хайлавĕсене эпир сирĕнпе вуланă?

— Уйăпсем çинчен мĕн çĕнни пĕлтĕр?

— Урокра мĕн тума вĕрентĕмĕр?

## 23-мĕш урок

**Тема:** Çăткăн чакак.

**Урок тĕллевĕ:** Герасим Харлампьевăн «Çăткăн чакак» калавĕпе ĕçлесе ачасене вуланă текст тăрăх калаçма хăнăхтарасси, кайăксен пурнăçне сăнама, хĕллехи вăхăтра вĕсене пулăшма вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсене вуласа ăнланма, ăса хывма, содержание каласа пама пултарни; текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсене ăнланма хăнăхса пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Герасим Харлампьевăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Ачасем пĕр-пĕрин калавне таблицăпа усă курса хăйсемех хаклаççĕ.*
2. Кӳртĕм калаçу.

— Тупсăмне пĕлĕр:

Мĕнле кайăкан хӱри

Хăйĕнчен те вăрăм-ши?

Çак кайăк пит çаталти,

Ун ятне пĕлетĕр-и?

— Мĕнле кайăк çинчен вăрăм хӱреллĕ çатăлти тесе калама пулать?

— Чакак çинчен эсир мĕн пĕлетĕр?

*Вĕрентекен ачасене чакак çинчен калаçтарать. Калаçăва туллинрех йĕркелеме текст хатĕрлет, ăна темиçе пая уйăрса ушкăнсене валеçсе парать. Кашни ушкăн хăйне лекнĕ пая вуласа ыттисене каласа парать.*

- Чакак вăрманта пурăнать. Йăвине çӳллĕ йывăç çинче çавăрать. Вăрман тăрăх вĕçсе çӳренĕ чух чакак чарăнма пĕлмесĕр çатăлтатать, йăви патне çывхарсан – шăпăрт, никама та ун тĕлне пĕлтересшĕн мар.

- Чакак тĕрлĕ хурт-кăпшанкăпа апатланать. Кайăксен çăмартисене питĕ юрататъ, вĕсене кайăксен йăвисенчен вăрлать. Çавăнпах пулĕ халăхра чакака вăрă тесе шутлаççĕ.

- Чакака хĕл хăратмасть. Хăй валли апат вăл кирек хăш вăхăтра та тупма пултарать. Хĕлле хурт-кăпшанкă, кайăксен çăмартисем, паллах, çук, çавăнпа чакак вăрмантан çын пурăнакан вырăналла вĕçсе килет. Ăçта хытă çăкăр татки, ăçта шăмă çумĕнче юлнă какай тупса кăшлать. Çавăн пек тăранса пурăнать те.

- Чакак перекетлĕ кайăк. Тупнă апатран мĕн çисе ярайманнине малашлăх валли пытарса хурать, йăвине сĕтĕрет. Унсăр пуçне чакак ялтăркка япаласене пуçтарма юратать. Унăн йăвинче канихвет чĕркенĕ хутсем, шăрçа, ялтăркка теттесем тупма пулать.

3. Герасим Харлампьевăн «Çăткăн чакак» калавĕпе ĕçлени.

*Ачасем калава черетпе вулаççĕ. Вуланă май ыйтусене хуравлаççĕ.*

- Пирĕн патăрта хĕл каçакан кайăксем яла вĕçсе килме пуçланин сăлтавĕ, лирикăлла герой (каласа паракан) шухăшĕпе, мĕнре?
- Герой кайăксене мĕншĕн хĕрхеннĕ?
- Калавра мĕне «сĕтел» тенĕ?
- Аш татăкĕсене мĕнле кайăксем валли хурса панă герой? *(Кăсăясем валли)*
- Аш татăкĕсем сырăш çинче мĕншĕн хăвăрт пĕтнĕ-ши? Çакăн пирки каласа паракан мĕн шутлать?
- Унăн шухăшĕ çирĕпленнĕ-и?
- Какая вăрлаканĕ мĕнле кайăк?
- Эсир мĕнле шутлатăр, чакак, çын ăна сăнама тытăнсан, мĕншĕн карта юпи çине вĕçсе каять?
- Каласа паракан чакак çăткăнлăхне шута илсе мĕн шутласа тупнă?
- Кĕрпе усăсăр саланса пĕтесрен вăл мĕнле вăрттăнлăхпа усă курнă?
- Юлашки абзаца эсир мĕнле ăнланатăр?
- Урок пуçламăшĕнче чакак çинчен калаçнинне аса илĕр-ха. Унта каланă хăш шухăшсене Герасим Харлампьевăн калавĕ çирĕплетсе парать?

*Кашни ушкăна хăйсем урок пуçламăшĕнче вуланă пайри шухăшсене çирĕплетекен вырăнсене Герасим Харлампьевăн калавĕнче тупса вуласа пама сĕнме юрать. (какай юратать – хурт-кăпшанкă çиет; йăви патĕнче*

*шавламасть – çын курсан пытарса хунă какайĕ патĕнчен вĕçсе каять; çăткăн кайăк; çисе ярайман апата малашлăх валли пытарать)*

- Мĕншĕн калава «Çăткăн чакак» тесе ят панă?
- Çăткăн сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр?
- Калава тепĕр хут хăвăр тĕллĕн вуласа тухăр. Унăн темине тата тĕп шухăшне калăплăр.

4. Киле ĕç пани.

Вуланă текстпа усă курса хăвăр хĕлле кайăксене мĕнле пулăшни çинчен каласа пама хатĕрленĕр.

5. Урока пĕтĕмлетни.
   - Урокра камăн калавĕпе паллашрăмăр? Герасим Харлампьевăн тата мĕнле хайлавĕсене пĕлетĕр?
   - Паян вуланă калав мĕн ятлă? Калав ячĕпе эсир килĕшетĕр-и?

## 24-мĕш урок

**Тема:** Кукăр сăмсаллă кайăк.

**Урок тĕллевĕ:** Георгий Лучăн «Кукăр сăмса» калавĕпе ĕçлесе ачасен текстпа ĕçлес хăнăхăвĕсемпе ăслайĕсене аталантарасси, кайăксен хĕллехи пурнăçне сăнама хăнăхтарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсене вуласа ăнланма, ăса хывма, тишкерме пĕлни; план тума, унпа усă курса вуланă хайлав содержанине каласа пама хăнăхни; хайлаври сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсемпе пуплевре усă курма пултарни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Георгий Лучăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

## Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Ачасем хăйсем кайăксене мĕнле пулăшни çинчен каласа параççĕ.*
2. Кӳртĕм калаçу.

- Тупсăмне пĕлĕр:
  Тĕлĕнтермĕш кайăк ку:

  Сăмси кукăр, пăх та кур!

  Хĕлле йăва çавăрать,

  Чăрăш йĕкел шĕкĕлчет,

  Чĕпписене ӳстерет.

— Мĕнле кайăк хĕлле чĕпĕ кăларать?
— 103-мĕш страницăра панă ӳкерчĕксенче кукăр сăмсана тупăр. Эсир ку кайăк çинчен мĕн пĕлетĕр?
*Вĕрентекен ачасене кукăр сăмса çинчен калаçтарать. Калаçăва туллинрех йĕркелеме, иртнĕ урокри пекех, текст хатĕрлет, ăна темиçе пая уйăрса ушкăнсене валеççе парать. Кашни ушкăн хăйне лекнĕ пая вуласа ыттисене каласа парать.*

- Кукăр сăмсана çурçĕр попугайĕ теççĕ. Мĕншĕн çапла ят панă-ха ăна? Кукăр сăмса попугай пекех йывăç вулли тăрăх хăпарма питĕ ăста иккен, тата унăн сăмси попугай сăмси евĕр кукăр.

- Кукăр сăмса – пĕртен-пĕр хĕлле чĕпĕ кăларакан кайăк. Тулта сивĕ шатăртатать. Вăтăр градуса та çитет. Кукăр сăмса йăвинче вара чĕпĕсем çитĕнеççĕ. Сивĕрен те хăрамаççĕ-çке!

- Мĕншĕн хăрас! Çемçе тĕкпе сарнă йăвара ăшă. Апат – чăрăш йĕкелĕн вăрринчен хатĕрленĕ пăтă. Хĕл варринче йĕкел ăшĕнчи вăрăсем тутланса, çулланса çитеççĕ. Кукăр сăмса чĕпписем вĕсене питĕ юратаççĕ. Тăрсан-тăрсан йывăç хуппи айĕнче пĕрер хурт та тупма пулать. Çапла вара, чĕпĕ ӳстерме май пурах.

3. Георгий Лучăн «Кукăр сăмса» калавĕпе ĕçлени.

*Ачасем калава черетпе вулаççĕ. Вуланă май ыйтусене хуравлаççĕ.*

*Пĕрремĕш абзаца вуланă хыççăн вĕрентекен ыйтать:*

— Калаври ĕççем хăçан пулса иртеççĕ?
— Каласа паракан̆ĕ (рассказчик), сирĕн шутпа, кам?

*Иккĕмĕш абзаца вуланă хыççăн:*

— Эсир мĕнле шутлатăр, мĕн тĕлĕнтернĕ-ши ачана?
— Çтаппан мучи кам пулнă? *(Вăрман хуралçи)*

*Малалла вуланăçем вĕрентекен ачасене çакăн пек ыйтусем парса калаçтарать:*

— Ачана мĕн тĕлĕнтернĕ? *(Хĕллехи вăрманта кайăк чĕппи пулни.)*
— Эсир мĕн шутлатăр, мĕншĕн мучи куçне чеен хĕссе кулнă-ши? *(Мĕншĕн тесен вăл, паллах, ача тупнă чĕпĕ мĕнле кайăк чĕппи пулнине пĕлет, тĕлĕннĕ пек тăвать çеç.)*
— Мĕнле кайăк чĕппи-ши ку?
— Кайăк чĕппи юр çине мĕнле лекнĕ-ши?
— Мĕнле сăмахсемпе ятлать мучи чĕппе?

— Пуҫтах сăмаха эсир мĕнле ăнланатăр? Ку сăмах йăваран ӳкнĕ чĕппе хаклама вырăнлă-ши?
— Мучи ачана кукăр сăмсасем ҫинчен мĕн каласа парать?
— Кукăр сăмсасен йăви мĕнле йывăҫ ҫинче пулнă?
— Кукăр сăмса чĕпписене мĕншĕн хĕлле кăларать? Ун ҫинчен пире хăш ушкăн вуласа панăччĕ? Аса илер-ха.
— Ҫтапан мучи ҫинчен эсир мĕн калама пултаратăр?
— Мучин пĕчĕк тусĕ ҫинчен мĕн калама пулать?
— Ку калав сирĕнте мĕнле туйăмсем ҫуратрĕ?
— Калава тепĕр хут вулăр. Мĕнле пайсем ҫине уйăрма пулать-ши ăна? Шухăшласа пăхăр. Кашни пайĕ валли ят шутласа тупăр.

*Ачасем калава черетпе вулаҫҫĕ, план тăваҫҫĕ, ҫав план тăрăх мĕн вуланине каласа параҫҫĕ.*

— Калавăн авторĕ кам?

*Ачасем Григорий Луч ҫинчен калакан статьяна вулаҫҫĕ. Вĕрентекен ҫыравҫă ҫинчен хушса калать.*

4. Киле ĕҫ пани.

— Тунă планпа усă курса 97-мĕш страницăра панă виҫесене пăхăнса калав содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

5. Урока пĕтĕмлетни.

— Кукăр сăмса ҫинчен ку урокра ҫĕнни мĕн пĕлтĕр?
— Мĕнле кайăксем пирĕн патăрта хĕл каҫаҫҫĕ? Эсир вĕсене сивĕ хĕл кунĕсенче мĕнле пулăшатăр?
— Кайăксем ҫинчен вуланă хайлавсене, вĕсен авторĕсене аса илĕр.

**Пай: Манăн ҫемье**

**25-мĕш урок**

**Тема:** Чи ҫывăх ҫынсем.

**Урок тĕллевĕ:** Василий Давыдов-Анатрин «Юратнă анне» сăввипе тата Геннадий Мальцевăн «Асанне хăҫан канать-ши?» калавĕпе ĕҫлесе ачасен вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма пултарни; текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах ҫаврăнăшĕсене асăрхани, вĕсене ăнланни; калавăн содержанине сăпатне улăштарса каласа пама хăнăхни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Василий Давыдов-Анатрин тата Геннадий Мальцевăн сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен хайлавĕсен пуххисем.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕҫе тĕрĕслени.

2. Çĕнĕ пай темипе паллаштарни.

*Вĕрентекен кĕнекере панă ваттисен сăмахĕсене вулать. Вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарма сĕнет. Кĕнекене уçса пай темине вулама хушать, ÿкерчĕкпе ĕçлеттерет.*

3. Кÿртĕм калаçу.

— Çыравçăсенчен чылайăшĕ, чăвашсен кăна мар, ытти халăхсен те, час-часах çемье, кил-йышри çынсем хушшинчи çыхăну-хутшăну çинчен çыраççĕ. Мĕншĕн кăсăклантарать-ши çак тема çыравçăсене? Мĕнле шутлатăр?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет.*

— Кашни çыннăн тăван кил-йыш пур. Кашни хăйĕн ачалăхне астăвать, ача чухне мĕнле, кампа вылянине, мĕнпе кăсăкланнине, ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ хăйне мĕнле юратнине, ăс парса вĕрентсе ÿстернине аса илет. Çыравçăсем те çаплах ĕнтĕ. Вĕсен вара çак ăшă та хаклă туйăмсене вулакансене каласа парас кăмăл çуралать. Çапла майпа кил-йышпа çыхăннă хайлавсем çырăнаççĕ.
— Сирĕн те каласа памалли пур пулĕ ĕнтĕ. Мĕн каласа панă пулăттăр эсир хăвăрăн çемйĕр çинчен?
— Паян урокра Василий Давыдов-Анатрин «Юратнă анне» сăввине тата Геннадий Мальцевăн «Асанне хăçан канать-ши?» калавне вулăпăр.
— Хайлав ячĕсем сире мĕн çинчен калаççĕ? Камсем çинчен пулĕç-ши вĕсем?
  Çапла, аннепе асанне çинчен вулăпăр паян. Вĕсем пирĕншĕн чи çывăх çынсем, çавăнпа та паянхи урок теми те – «Чи çывăх çынсем».

4. Василий Давыдов-Анатрин «Юратнă анне» сăввипе ĕçлени.

— Василий Давыдов-Анатри çинчен эсир мĕн пĕлетĕр? Унăн мĕнле хайлавĕсене астăватăр?
— Сăвăпа хăвăр тĕллĕн çурма сасăпа вуласа паллашăр, ăна мĕнле кăмăлпа вуламалли çинчен шутласа пăхăр.

*Ачасем малтан сăвва вулаççĕ, унтан пĕр-пĕринпе канашласа сăввăн кашни строфине мĕнле кăмăлпа вуламаллине палăртма тăрăшаççĕ, кайран пĕрер строфан черетпе сасăпа вулаççĕ.*

— Амăшĕ хăйĕн ачисене юратни çинчен каласа пама автор мĕнле сăмахсемпе усă курать? *(юратса, ачашласа, йăпатса, лăпка-лăпка)*
— Çак сăмахсене эсир мĕнле ăнланатăр?

*Вĕрентекен ачасене сăмах пĕлтерĕшĕсене ăнланма пулашать.*

юратать – любит

ачашлать – холит, лелеет

йăпатать – тешит, успокаивает, радует

лăпкать – ласкает

— Пĕрремĕш строфан тăваттăмĕш йĕркине (Çунат пиллет, вĕçтерет) мĕнле ăнланатăр?
— Иккĕмĕш строфан тăваттăмĕш йĕркине (Куçне хупмасть каççерен) мĕнле ăнланмалла?
— Ку сăввăн теми мĕнле-ши? Тĕп шухăшĕ, сирĕн шутпа, мĕнле?

*Ачасем черетпе сăвва вулаççĕ. Кашнин вулавне хаклаççĕ. Чи вырăнлă вулава палăртаççĕ.*

5. Геннадий Мальцевăн «Асанне хăçан канать-ши?» калавĕпе ĕçлени.

*Вĕрентекен Геннадий Мальцев çинчен каласа парать, кĕнекисене кăтартать. Унтан «Асанне хăçан канать-ши?» калава ăшра вулама хушать. Вуласа паллашнă хыççăн ыйтусем парса ĕçлеттерет:*

— Ку калавра каласа паракан̆ĕ кам?
— Вăл пире кам çинчен каласа парать? Мĕн тĕлĕнтерет ачана?
— Асламăшĕ кун каçа тунă ĕçсене каласа тухăр.
— Ачан калав вĕçĕнче мĕнле шухăш çуралать? Ачан çак шухăшĕ çинчен эсир мĕн шутлатăр?
— Ку калавпа пире автор мĕн каласшăн пулнă-ши?
— Калаври ачана эсир мĕнле сăнласа панă пулăттăр? Ăна эсир мĕнле куратăр?
— Ачана ят парăр та калав содержанине виççĕмĕш сăпатран каласа кăтартăр.

*Пĕр ача калава виççĕмĕш сăпатран каласа парать, ыттисем йăнăшсем пулсан тÿрлетеççĕ.*

6. Киле ĕç пани.

*Вĕрентекен ачасене киле ĕç суйласа илме май парать: «Юратнă анне» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле е «Асанне хăçан канать-ши» калава виççĕмĕш сăпатран каласа пама хатĕрленмелле.*

7. Урока пĕтĕмлетни.

— Паян вуланă хайлавсем камсем çинчен пулчĕç?
— Тата кама чи çывăх çын теме пулать?
— Сирĕншĕн чи çывăх çын кам?

**26-мĕш урок**

**Тема:** Кил-çурт пурне те кирлĕ.

**Урок тĕллевĕ:** Николай Симунов çырнă «Турат вăррисем» калав тăрăх ачасен текстпа ĕçлес хăнăхăвĕсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлава вуласа ăнланма, ыйтусене хуравлама пултарни; рольпе вулас ăсталăх аталанни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Николай Симуновăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
2. Кӳртĕм калаçу.

— Иртнĕ урокра эпир кĕнекери мĕнле пысăк темăпа хайлавсем вулама пуçларăмăр?
— Çемье, кил-çурт çыннăн çеç пулать-ши?
— Çынсем чĕр-чунсене, кайăк-кĕшĕке «пӳрт-çурт» тума пулăшнă тĕслĕхсем пĕлетĕр-и эсир?
— Паян урокра эпир кил-çурт пур чĕр чуна та кирли, кил-çурт çавăрас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен хайлав вулăпăр.

*Вĕрентекен урок темине доска çине çырса хурать.*

3. Николай Симунов çырнă «Турат вăррисем» калавпа ĕçлени.

— Хайлав ятне вулăр. Унăн авторĕ кам?
*Вĕрентекен автор çинчен кĕскен каласа парать.*
— Николай Симуновăн кĕнекере панă хайлавĕ мĕн çинчен-ши?
*Ачасем вулав умĕнхи ĕçсене пурнăçлаççĕ, калав мĕн çинчен пулма пултарни çинчен хăйсен шухăшĕсене палăртаççĕ.*
*(Ӳкерчĕк çинче кураксем йăва çавăраççĕ, апла пулсан хайлаври ĕçсем çуркунне пулса иртеççĕ. Калав «Турат вăррисем» ятлă. Ӳкерчĕк çинче кураксем йăвисене туратсем йăтаççĕ. Тавçăрма пулать, вĕсем ку туратсене ăçтан та пулин йăва çавăрма йăтаççĕ ĕнтĕ. Автор темшĕн кураксем пирки турат вăррисем тет. Мĕншĕн-ши? Хайлава вуласан пĕлĕпĕр.)*

*Ачасем калава черетпе вулаççĕ, вуланă май вĕрентекенĕн ыйтăвĕсене хуравлаççĕ.*

— Пĕрремĕш абзацра автор пире хайлавăн геройĕсемпе паллаштарать. Камсем вĕсем? *(Юля тата унăн аслашшĕ.)*
— Кама вăрçать Юльăн аслашшĕ?
— Вăл Ванюка мĕншĕн айăплать?
— Мĕншĕн Ванюк кулса кураксем çине кăтартать-ши?
— Ванюк вак туратсем çухалнине мĕнле ăнлантарать?

*Вĕрентекен тăваттăмĕш абзаца (Кураксем вĕсем калаçнине илтмеççĕ...) тепĕр хут вулама хушать.*

— Çак абзацра каланине эсир мĕнле ăнланатăр?
— Çапă-туратсем ăçта кайса кĕнине ăнлансан Юльăн аслашшĕ мĕн тума шутлать? Хăй шухăшне вăл мĕнле ăнлантарать?
— Юльăна çав хушăра мĕнле туйăмсем тыткăнлаççĕ? Мĕншĕн çапла шутлатăр?
— Кураксем пĕр хушă шăпланнă хыççăн мĕн тунă?
— Юльăн аслашшĕ çакна курнă хыççăн мĕн каланă?
— Мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать çак сăмахсене вуланă хыççăн?
— Калав геройĕсем Юльăпа аслашшĕ терĕмĕр. Тата ытти геройсем пур-и ку калавра?
— Кураксене калав геройĕсем теме пулать-и? Мĕншĕн?
— Кураксене автор мĕнле сăнлать? Вĕсем çинчен мĕн калама пултаратăр?
— Эсир кураксене пулăшакан çынсене мĕнле хак панă пулăттăр?
— Ку калавăн темине тата тĕп шухăшне мĕнле калăпланă пулăттăр?
— Калава рольсемпе вулама миçе çын кирлĕ?

*Ачасем тăватшарăн пайланса калава рольсемпе вулама хатĕрленеççĕ. Вĕрентекен кашни герой сăмахне мĕнле вуламалли, сасса мĕнле улăштармалли çинчен шухăшласа пăхма сĕнет. Хатĕрленме панă вăхăт иртсен ачасем калава сасăпа вуласа параççĕ. Кашнин вулавне хаклаççĕ.*

4. Киле ĕç пани.

*Килте харпăр хăй çемйипе кайăксене мĕнле пулăшни çинчен каласа пама хатĕрленмелле. Калава ӳкерчĕксемпе çирĕплетме юрать.*

5. Урока пĕтĕмлетни.

— Урок темине тепĕр хут вулар-ха. Мĕнле ăнланатăр эсир çак сăмахсене?
— Кун пирки «Турат вăррисем» калаври ватă çын мĕн калать? *(Кил-çуртсăр çемье тăваймăн.)*
— Кил-çурт вăл эпир пурăнакан пӳрт çеç-ши?

*Ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн вĕрентекен пĕтĕмлетет.*

**27-мĕш урок**

**Тема:** Ĕç çынна илем кӳрет.

**Урок тĕллевĕ:** Людмила Николаева çырнă «Пĕчĕк пулăшакан» сăвăпа тата Лев Толстой çырнă «Пахчаçăпа унăн ывăлĕсем» юптарупа ĕçлесе ачасен вуланă хайлавсен темине, тĕп шухăшне палăртас ăслайсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсене итлесе, вуласа ăнланма, ăса хывма, текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсене ăнланма, хайлаври сăнарсене, вĕсен ĕçĕсене, хăйсене тыткаланине хак пама пултарни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Людмила Николаевăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Ачасем хăйсем çемьери çынсемпе пĕрле кайăксене мĕнле пулăшни çинчен каласа параççĕ, килте хатĕрленĕ ӳкерчĕкĕсене кăтартаççĕ.*
2. Кӳртĕм калаçу.

*Доска е экран çинче урок теми.*

— Урок темине вулăр. Халăх сăмахлăхĕн хăш жанрне аса илтерет сире ку каларăш?
— Ĕç çинчен калакан тата мĕнле ваттисен сăмахĕсене эсир пĕлетĕр?
— Ĕç теми, сирĕн шутпа, çемьепе мĕнле çыхăннă?

*Ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн вĕрентекен пĕтĕмлетет:*

— Çапла, пурте пĕрле ĕçлесен, пĕр-пĕрне пулăшса пырсан кил-йышра йĕркеллĕ лару-тăру, ăнлану хуçаланать. Ĕçчен çемьере яланах хăтлă. Ача-пăча, чи малтанах, ĕçе çемьере вĕренет, çавăнпа ĕç теми çемьепе тачă çыхăннă.

3. Людмила Николаева çырнă «Пĕчĕк пулăшакан» сăвăпа ĕçлени.

*Вĕрентекен малтан ачасене сăвă авторĕ синчен каласа парать, унтан кĕнекере панă вулав умĕнхи ĕçсене тума хушать, сăвă мĕн çинчен пулма пултарни çинчен калаçтарать. Ун хыççăн сăвва ачасене вуласа парать.*

— Эсир сăвă содержанийĕ пирки каланă шухăшсем тĕрĕс пулчĕç-и?
— Автор сăвăра пуплеве кам ятĕнчен йĕркеленĕ?
— Пĕрремĕш строфана вулăр. Ача хăй çинчен мĕн каласа парать?
— Ăна мĕн пăшăрхантарать?
— Иккĕмĕш строфари асламăшĕн сăмахĕсене эсир мĕнле ăнланатăр?
— Сурăм шывĕ хĕрринче кĕпе-йĕм çуни мĕнпе вĕçленнĕ ачашăн?
— Ача мĕншĕн йăран çумлама нумай пулăшайман?
— Çемьепе утă типĕтнĕ чух мĕнле пăтăрмах сиксе тухнă?
— Пĕрремĕш строфа сăвă вĕçĕнче тепĕр хут тĕл пулать. Ăнсăртран-ши ку? Автор мĕншĕн çапла тунă-ши?
— Эсир мĕнле шутлатăр, ача мĕншĕн пĕр ĕçе те тĕплĕ тăваймасть? *(Вăл пĕчĕк, ĕçлеме вĕренсе çеç пырать.).*

— Ĕçе вĕçне çитерме, тирпейлĕ тума вĕренсе çитĕ-ши вăл? *(Паллах, вĕренсе çитет. Вал тăрăшать, айккинче пăхса тăмасть, ыттисем ĕçленĕ вăхăтра выляса çӳремест.)*
— Авторăн хăйĕн пĕчĕк геройĕ патне мĕнле туйăмсем пулнине калама пулать-ши? *(юратса, тăрăхласарах сăнлать хăйĕн пĕчĕк геройне автор)*
— Сăвăра кăмăл-туйăм мĕнле улшăнать? *(Кашни ĕçе ача хавас, тума пултарас пек пуçлать, анчах ĕçĕ çăмăл мар иккен, çавăнпа унăн кăмăлĕ хуçăлать.)*
— Каланине шута илсе сăвва илемлĕ вулама хатĕрленĕр.

*Ачасем сăвва хăйсем тĕллĕн илемлĕ вулама хатĕрленеççĕ, ун хыççăн пурте илтмелле вуласа параççĕ. Кашнин вулавне хаклаççĕ.*

4. Лев Толстой çырнă «Пахчаçăпа унăн ывăлĕсем» юптарупа ĕçлени.

*Юптарăва ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра вулаççĕ.*

— Юптарăва вуласа мĕн пĕлтĕр?
— Ку юптарăвăн теми мĕнле-ши?
— Тĕп шухăшĕ мĕнре?
— Юптару ячĕ унăн темине е тĕп шухăшне çывăх-и?
Кĕнекере панă ваттисен сăмахĕсенчен хăшĕ юптарăвăн тĕп шухăшне уçса парать?

5. Киле ĕç пани.

*Юрий Артамоновăн хайлавне вуламалла, ĕçсене пурнăçламалла, текстпа усă курса çăкăр пирĕн сĕтел çине мĕнле çитнине каласа пама хатĕрленмелле.*

6. Урока пĕтĕмлетни.

— Мĕншĕн ĕç çынна илем кӳрет теççĕ?
— «Ĕçне тумасăр ан мухтан», – тенĕ ваттисем. Эсир çакна мĕнле ăнланатăр?

**28-мĕш урок**

**Тема:** Аслисен пурнăçĕ пирĕншĕн тĕслĕх.

**Урок тĕллевĕ:** Вячеслав Ар-Серги çырнă «Аслашшĕн вуннăмĕш пӳрни» калавпа ĕçлесе ачасен чăвашла вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси, Тăван çĕршывăн мирлĕ пуласлăхĕшĕн çапăçнă паттăрсене нихăçан та манмалла марри çинчен калаçтарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлава вуласа ăнланма, ăса хывма, ыйтусене хуравласа текста тишкерме пултарни, хайлаври сăнарсене, вĕсен ĕçĕсене, хăйсене тыткаланине хак пама вĕренсе пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Вячеслав Ар-Серги сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
2. Кӳртĕм калаçу.

*Вĕрентекен ачасем çăкăр çинчен каласа панине пĕтĕмлетет, çăкăра перекетлĕ тытмалли, йывăр вăхăтра пĕр чĕлĕ çăкăр та çынсен пурнăçĕнче çав тери хаклă пулни çинчен каласа парать. Унтан ачасене сăвă вуласа парать:*

Ват салтак, Çĕнтерӳ кунĕпе
Ыр сунатăп сана кăмăлтан.
Саламлатăп сана чĕререн!
Тав тăватăп мĕн пур халăхран!

Манар мар вăрçăри салтака,
Çӳле çĕклер ун чаплă ятне.
Сахал мар пуль вăл тӳснĕ нуша
Сывă пултăр тесе Çĕр-анне.

— Ку сăвăра лирикăлла герой кама тата мĕн ячĕпе саламлать?
— Эсир Аслă Тăван çĕршыв вăрçи çинчен мĕн пĕлетĕр?
— Ват салтак мĕншĕн мĕнпур халăхăн тавне тивĕç?
— Сăвăри юлашки йĕркесене эсир мĕнле ăнланатăр?
— Чăнах та, нимĕç вăрă-хурахĕсем питĕ хăрушă пулнă. Çак тискер вăя хирĕç пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм халăх çĕкленнĕ. Çĕнтерĕве вăрçăри салтаксем, тылри ватăсемпе хĕрарăмсем, кăштах çитĕннĕ ача-пăча – пурте пĕрле туптанă. Пирĕн çĕршыври кашни çемьере Аслă вăрçăра çапăçнă çын пурах. Пирĕн вĕсем çинчен пĕлмелле, вĕсен ячĕсене, вĕсен вăрçăри паттăрлăхне нихăçан та манмалла мар.
— Паянхи урок темине вулăр. Мĕнле ăнланатăр эсир çак шухăша?

3. Вячеслав Ар-Серги çырнă «Аслашшĕн вуннăмĕш пӳрни» калавпа ĕçлени.

— Калав ятне вулăр. Унăн авторĕ кам?

*Вĕрентекен малтан Вячеслав Ар-Серги çинчен каласа парать, унтан калав патне панă ӳкерчĕкпе ĕçлеççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн калава ачасем черетпе вулаççĕ. Ачасем вуланă май вĕрентекен ыйтусем парса калава тарăнрах ăнланма пулăшать:*

— Калав геройĕ кам? Мĕншĕн Пончик тенĕ-ши ăна çемьере?
— Пончик аслашшĕне мĕн çинчен каласа парса мухтанать?
— Пончик аслашшĕн алли çинче мĕн асăрхать?

— Мĕнле вăрçăра çухатнă-ши аслашшĕ пӳрнине? Миçемĕш çулсенче пулнă ку вăрçă?
— Сапёр кам-ши вăл? Унăн ĕçĕ мĕнле хăрушлăхсемпе çыхăннă? Сапёр ĕçĕ вăрçăра мĕншĕн питĕ кирлĕ?
— Мĕншĕн мина çурăлсан Пончикăн аслашшĕ тăн çухатнă-ши? Вăл калавă тăрах, ăна пĕр осколок та лекмен-çке?
— Пончикăн аслашшĕне шкула хăнана мĕнле тĕллевпе чĕннĕ-ши?
— Аслашшĕн кăкăрĕ çинче мĕн чухлĕ орденпа медаль пулнă? Сахал-ши ку е нумай-ши? Мĕнле шутлатăр?
— Аслашшĕн орденĕсемпе медалĕсем ăна мĕнле хак пама май параççĕ?
— Калав вĕçĕнчи аслашшĕпе мăнукĕ хушшинчи калаçăва эсир мĕнле ăнланатăр? Аслашшĕ мăнукĕ çитĕнсен мĕнле çын пултăрччĕ тет?
— Автор калава мĕншĕн çакăн пек ят панă-ши?
— Калав хыççăн панă ваттисен сăмахне вулăр. Мĕнле ăнланатăр эсир ăна? Ку ваттисен сăмахĕ урок темипе мĕнле çыхăннă?
4. Киле ĕç пани.

*Ачасен килтисенчен Аслă Тăван çĕршыв вăрçи хирĕнче çапăçнă тăванĕсем çинчен ыйтса пĕлмелле, вĕсем çинчен каласа пама хатĕрленмелле. Фотоӳкерчĕксемпе усă курма юрать.*

5. Урока пĕтĕмлетни.
— Мĕнле хайлав вуларăмăр? Унăн авторĕ кам?
— Мĕнле шухăшсем, мĕнле кăмăл-туйăм çуралчĕ сирĕн паянхи урокра?

**Пай: Эпир туслă ачасем**

**29-мĕш урок**

**Тема:** Çу кунĕсене усăллă ирттерер.

**Урок тĕллевĕ:** Слован Савкайăн «Çулла» сăввипе тата Елен Нарпин «Çумламан йăран» калавĕпе ĕçлесе ачасене чăвашла вулама, вуланă хайлав тăрăх калаçу йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавсене итлесе, вуласа ăнланма, ăса хывма, текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, калав планне тума, ун тăрăх каласа пама пултарни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Слован Савкайăн тата Елен Нарпин сăн ӳкерчĕкĕсем, вĕсен хайлавĕсен пуххисем.

**Урок юхăмĕ**

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
*Киле панă ĕçе уроксем хыççăн асăну каçĕ пек ирттерсе тĕрĕслеме юрать.*

2. Çĕнĕ пай темипе паллаштарни.

*Ачасем кĕнекере панă ваттисен сăмахĕсене вулаççĕ, вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантараççĕ, пай темипе паллашаççĕ.*

— Ачасем, сирĕншĕн туслăх мĕн вăл? Хăвăр юлташăрсем çинчен, вĕсемпе мĕнле хутшăнни çинчен каласа парăр.
— Çапла, тус-юлташ пулни, пĕр-пĕринпе туслă пурăнни çав тери лайăх пирĕн пурнăçра. «Туслăхра – вăй», - тесе ахальтен каламан ĕнтĕ ватăсем. Çыравçăсем те туслăх çинчен чылай хайлав çырнă.
— Эсир мĕнле шутлатăр, туслăх теми çыравçăсене, уйрăмах ача-пăча çыравçисене, мĕншĕн кăсăклантарать-ши?

- Паян урокра туслă ачасен çуллахи ĕçĕсемпе çыхăннă икĕ хайлавпа паллашăпăр.

3. Слован Савкайăн «Çулла» сăввипе ĕçлени.

— Пĕрремĕш хайлав авторĕ кам? Унăн мĕнле хайлавĕсемпе эсир халиччен паллашнă?

*Ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетнĕ хыççăн сăвва вĕрентекен вуласа парать. Вуланă хыççăн ыйтусем парать:*

— Ку сăвăра мĕнле йĕрке темиçе хут тĕл пулать?
— Мĕншĕн автор ку шухăша темиçе хут калать-ши? Эсир авторпа килĕшетĕр-и?
— Ку сăввăн теми тата тĕп шухăшĕ мĕнле-ши? *(Çулла – тĕлĕнмелле ырă вăхăт. Тем те тума пулать çулла, ан ӳркен кăна. Туссемпе пĕрле пулла çӳреме те, вăрманта çырла пуçтарма та, рюкзак çакса похода кайма та аван.)*
— Мĕнле кăмăлпа вуламалла-ши ку сăвва?

*Ачасем сăвва икшерĕн ĕçлесе илемлĕ вулама хатĕрленеççĕ, унтан сасăпа вуласа параççĕ, кашнин вулавне хаклаççĕ.*

4. Елен Нарпин «Çумламан йăран» калавĕпе ĕçлени.

— Хайлав ятне вулăр, ăна кам çырнине калăр. Ку автор хайлавĕсене вуланă-и эпир?

*Вĕрентекен Елен Нарпи çинчен кĕскен каласа парать.*

— Мĕн çинчен-ши Елен Нарпин хайлавĕ? Эпир пĕлекен меслетсемпе усă курса хайлав мĕн çинчен пулма пултарнине калама пулать-и?

*Ачасем ӳкерчĕке тишкереççĕ, словарьпе паллашаççĕ, хăйсен шухăшĕсене калаççĕ. Çапла ĕçленĕ хыççăн калава черетпе вулаççĕ, вуланă май ыйтусене хуравлаççĕ:*

— Пĕрремĕш абзацра çыравçă пире камсемпе паллаштарать?
— Наталипе Андрей çинчен эпир мĕн пĕлтĕмĕр?
— Çу кунĕсене ачасем кукашшĕпе кукамăшĕ патĕнче мĕнле ирттереççĕ?

— Кукамăшĕ пĕррехинче ачасене мĕн тума чĕнет?
— Мĕнле ÿсен-тăрансемпе паллаштарать кукамăшĕ ачасене? Вĕсене мĕншĕн çапла ят панине мĕнле ăнлантарать? Эсир ку курăксене паллатăр-и?

*Вĕрентекен курăксен ÿкерчĕкĕсене кăтартать, ачасем словарьпе усă курса вĕсен чăвашла, вырăсла ячĕсене калаççĕ.*

— Мăян çинчен калавран мĕн пĕлтĕр?
— Вĕлтĕрен çинчен кукамăшĕ мăнукĕсене мĕн каласа панă?
— Андрей тăваттăмĕш йăрана мĕншĕн начар çумланă-ши?
— Мĕншĕн кукамăшĕ ачасене чей ĕçтерме шутланă?
— «Этемри çăм курăкĕ» мĕн пулнине кукамăшĕ ачасене мĕнле ăнлантарать?
— Çылăх çинчен кукамăшĕ мăнукĕсене мĕн калать?
— Çак калаçăва кукамăшĕ мĕншĕн пуçланă-ши?
— Андрей начар çумланă йăрана мĕншĕн тепĕр хут çумласа тухнă?
— Мĕншĕн автор хăйĕн калавне «Çумламан йăран» тесе ят панă?
— Ку калав мĕнле шухăшсем çуратрĕ?
— Калавпа автор вулакансене мĕн каласшăн пулнă-ши? Мĕнле йĕркесенче çак шухăш пытаннă?

*Вĕрентекен ачасене калавăн планне тума сĕнет. Малтан ачасем 126-мĕш страницăра панă виçесемпе паллашаççĕ, вĕсене шута илсе калава пайсем çине уйăраççĕ, кашни пайне ят параççĕ. План тăрăх калав содержанине каласа параççĕ.*

5. Киле ĕç пани.
   *«Çулла» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.*
6. Урока пĕтĕмлетни.

— Урокра мĕнле хайлавсемпе паллашрăмăр?
— Вуланă хайлавсем мĕн çинчен пулчĕç?

**30-мĕш урок**

**Тема:** Юмах-халап юптарар.

**Урок тĕллевĕ:** Лидия Сарине çырнă «Кашкăрпа пакша» хайлавпа ĕçлесе ачасене илемлĕ литературăри тепĕр жанрпа – пьесăпа паллаштарасси.

**Пулмалли результатсем**: пьеса уйрăмлăхĕсене палăртма, ăна ытти хайлавсенчен уйăрма пĕлни; текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсене ăнланма, хайлаври сăнарсене, вĕсен ĕçĕсене, хăйсене тыткаланине хак пама хăнăхса пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренÿ кĕнеки, Лидия Саринен сăн ÿкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

## Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.

   *Ачасем килте вĕреннĕ сăвва пăхмасăр каласа параççĕ, хăйсен ĕçне хăйсемех хаклаççĕ.*

2. Кӳртĕм калаçу.

— Паянхи урок теми – «Юмах-халап юптарар». Эсир юмахсем вулама юрататăр-и? Мĕншĕн?

— Пур халăх та мĕн авалтан юмах яма юратнă, хăйсен ачи-пăчине юмахсем каласа парса ăса вĕрентнĕ. Каярах çыравçăсем те ку жанрпа кăсăкланма тытăннă, тĕрлĕ юмах-халап хайланă.

— Эсир мĕнле шутлатăр, мĕншĕн халăхшăн та, уйрăм çыравçăсемшĕн те юмахсем кăсăклă-ши? Мĕнре-ши юмахăн илĕртӳлĕхĕ?

*Вĕрентекен ачасем каланине пĕтĕмлетет.*

— Паллах, юмахсенчи сюжет аталанăвĕ, юмахăн хăйне евĕр чĕлхи тыткăнланă çынсене. Унсăр пуçне, юмахсем ача-пăчана ăс парса ӳстерме пулăшни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кашни юмахрах пурнăçри начар ĕçсене, çынри усал кăмăл-туйăмсене сивлени, тĕрĕслĕхе çиеле кăларни пур. Çакăнпа çыхăннă та пулĕ ĕнтĕ юмахсен халăх пурнăçĕнчи пĕлтерĕшĕ, вырăнĕ.

— Паян эпир сирĕнпе урокра Лидия Сарине çырнă «Кашкăрпа пакша» юмаха вулăпăр.

3. Лидия Сарине çырнă «Кашкăрпа пакша» хайлавпа ĕçлени.

*Ачасем Лидия Саринен вуланă хайлавĕсене аса илеççĕ, вĕрентекен вĕсем каланине пĕтĕмлетет, çыравçă çинчен хушса калама пултарать.*

— Юмах патне панă ӳкерчĕке сăнăр. Ячĕ тата ӳкерчĕк тăрăх ку юмах çинчен мĕн калама пулать?

— Автор юмаха калăпланинче мĕнле хăйне евĕрлĕх асăрхарăр?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет.*

— Ку юмаха автор сăвăласа çырнă. Унăн хăй евĕрлĕхĕ – юмах геройĕсен сăмахĕсене уйăрса çырса кăтартнинче.

*Вĕрентекен юмаха вулама пуçлать. Вуланă май ачасене ыйтусемпе ĕçлеттерет:*

— Выляканáсем: Кашкăр, Пакша, Пакша çури. Мĕнле ăнланмалла? Мĕншĕн выляканáсем?

*Малалла вĕрентекен ĕç-пуç ăçта пулса иртнине, персонажсем мĕн тунине çырса панине вулать.*

— Кăна мĕнле ăнланмалла? Мĕн çырса кăтартнă-ши кунта автор? Мĕншĕн кирлĕ-ши ку вырăн?

*Вĕрентекен малалла Кашкăр калакан сăмахсене вулать.*

— Кунта мĕнле уйрăмлăх асăрхарăр?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет:*

— Текст пуçламăшенче хайлаври геройсене, ĕç-пуç ăçта пулса иртнине, геройсем мĕн тунине çырса панă. Унтан кашни геройăн сăмахĕсене уйăрса çырнă. Мĕн тума çапла çырнă-ши автор?

*Ачасем хăйсен шухăшĕсене калаççĕ, вĕрентекен ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетсе хушса калать:*

— Кун пек хайлавсене пьеса теççĕ. Вĕсене сцена çинче выляса кăтартма çыраççĕ. Пьеса пуçламăшĕнче автор вылякансене асăнать. Кайран хăш сăмахсене хăш персонаж каланине çырса парать. Персонаж сăмахĕсене реплика теççĕ. Унсăр пуçне автор ĕç-пуç вырăнне, персонажсен хусканăвĕсене, вĕсен пит-куçĕ мĕнле улшăннине çырса кăтартать. Ăна ремарка теççĕ.

*Вĕрентекен пьесăна малалла вĕçне çити вулать.*

— Ку пьесăра виçĕ герой (персонаж). Куракана героя витĕмлĕ сăнласа парас тесен артистăн хăйĕн персонажне лайăх пĕлмелле: усал-и вăл е ырă кăмăллă-и, вăйлă-и е черчен-и, ĕçчен-и е кахал-и, хăюллă-и е хăравçă-и, айван-и е чее-и…
— Эсир ку пьесăри кашни героя мĕнле хакланă пулăттăр?
— Мĕнле мелсемпе сăнлама пултарать-ши артист хăйĕн персонажне? *(Сасăпа; сăн-пит, ўт-пў хусканăвĕсемпе).*

*Ачасем малтан 131-мĕш страницăра панă таблицăри виçесемпе паллашаççĕ, унтан ушкăнсене пайланса вулама хатĕрленеççĕ. Кайран кашни ушкăнри ачасем пьесăна сасăпа вулаççĕ, вуланине хаклаççĕ, пĕр-пĕрне сĕнўсем параççĕ.*

4. Киле ĕç пани.

*Ушкăнри кашни ача роль суйласа илнĕ. Килте суйласа илнĕ роле вылямa хатĕрленмелле. (Сăнар сăмахĕсене кирлĕ пек вулама вĕренмелле, персонаж валли маска е костюм пулсан аван).*

5. Урока пĕтĕмлетни.
— Мĕнле çĕнĕ жанрпа паллашрăмăр?
— Пьесăсене авторсем мĕн тума (мĕн валли) çыраççĕ?

— Пьсăри Кашкăр калакан юлашки сăмахсене вулăр. Мĕнле ăнланатăр кашкăр сăмахĕсене?
— Эпир юмахра яланах ырă усала çĕнтерет тетпĕр. Ку юмах-пьесăра мĕн çĕнтерет?

### 31-мĕш урок

**Тема:** Чĕр чун тĕнчинчи туссем.

**Урок тĕллевĕ:** Геннадий Мальцев çырнă «Пытанма юратакан» калавпа ĕçлесе ачасен чăвашла вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курса чăвашла текстсене вулама пултарни; текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсене ăнланма, хайлаври сăнарсене, вĕсен ĕçĕсене, хăйсене тыткаланине хак пама, хайлавăн планне тума, ун тăрах каласа пама хăнăхса пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Геннадий Мальцевăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Кашни ушкăн юмаха выляса кăтартать. Кайран ачасем вĕрентекенпе пĕрле вăл е ку персонажа чи лайăх выляса кăтартнă ачасене палăртаççĕ, вĕсем вара юмаха ытти класс ачисене е ашшĕ-амăшне выляса кăтартма пултараççĕ.*
2. Кӳртĕм калаçу.

— Чĕр чун тĕнчи, чĕр чунсемпе çынсем хушшинчи çыхăнусем … Çак темăсем çыравçăсене яланах кăсăклантарнă. Вĕсен хайлавĕсене вуласа эпир чĕр чунсем çинчен нумай çĕннине пĕлетпĕр, чĕр чунсем хушшинче те хамăра валли туссем тупма пулнине пĕлетпĕр. Эпир пурте çут çанталăк ачисем, апла пулсан пирĕн туслă пурăнмалла.
— Халĕ эпĕ сире тупмалли юмах паратăп. Ку тупмалли юмах тупсăмĕ паян урокра вуламалли хайлавăн тĕп геройĕ пулĕ.

*Хăмăр тĕслĕ пĕчĕк çивĕчĕ чĕр чун, пит кăшлама юратать, панă апат-çимĕçе çăварне тултарать те йăвине йăтать.*

*Ачасем чĕр чун ятне вырăсла калама пултараççĕ. Вĕрентекен вĕсене словаре пăхса хомяк чăвашла мĕнле пулнине тупма хушать.*

— Арлан çинчен эсир мĕн пĕлетĕр?

*Ачасем хăйсем мĕн пĕлнине калаççĕ. Вĕрентекен ачасен пĕлĕвне тарăнлатма маларах хатĕрленĕ арлан çинчен калакан статьяна темиçе пая пайласа ушкăнсене салатса парать, вулама хушать. Кайран кашни ушкăн мĕн вуласа пĕлнине ыттисене каласа парать.*

- Арланăн тăван çĕршывĕ - Сири. Унта хĕл пирĕн патăрти пек сивĕ, юрлă пулмасть. Тăван çĕршывĕнче арлансем çемьепе пурăнаççĕ, хăйсен йăвине икшер метр тарăнăш çĕр айĕнче тăваççĕ.

- Кăнтăрлахи шăрăх вăхăтра арлансем йăвисенчен тухмаççĕ, каç кÿлĕм вара унтан тухса апатланаççĕ, хĕл валли тĕрлĕ курăк вăррисем пуçтараççĕ. Хĕлле вĕсем çывăраççĕ. Тăрсан-тăрсан вăранса çулла пуçтарнă апат-çимĕçпе апатланаççĕ те каллех çывăрса каяççĕ.

- Çынсем арлансене алла вĕрентме пултарнă. Çапла майпа вĕсене тăван çĕршывĕнчен çурçĕрелле илсе килнĕ. Пирĕн патăрта арлансем çын пăхмасăр пурăнаймаççĕ. Арлансен пурнăçне çăмăллатас тесен пирĕн вĕсене шеллемелле, кÿрентермелле мар, вăхăтра çитермелле.

- Килте арлана тимĕр читлĕхре усраççĕ. Ăна усрама йывăçран е картонран тунă ешчĕксем юрамаççĕ, мĕншĕн тесен арлан – кăшлакан чĕр чун. Унăн çăварĕнче хăйне евĕр хутаç пур. Çисе тăрансан юлнă апата вăл унта тултарать те йăвине кайса тăкать. Çапла пуласлăх валли апат хатĕрлет.

3. Геннадий Мальцев çырнă «Пытанма юратакан» калавпа ĕçлени.

*Çапла ĕçленĕ хыççăн вĕрентекен калав ятне вулама, ун патне панă ÿкерчĕке сăнама хушать. Автор çинчен аса илтерет.*

*Калава ачасем хăйсем тĕллĕн çурма сасăпа вулаççĕ, ун хыççăн ыйтусене хуравлаççĕ.*

— Олег килне мĕн илсе килнĕ? Çак вырăна вуласа парăр.
— Арлана автор мĕнле сăнланă? Ăна вăл мĕнпе танлаштарать?
— Арлана курсан ачасен мĕнле ыйтусем çуралнă? Вуласа парăр.
— Ачасем арлана пурăнмалли вырăн мĕнле туса панă?
— Арлан читлĕхрен мĕнле тухса тарнă? Хăш вырăнта ун çинчен çырнă?
— Олегăн амăшĕ арлан çинчен мĕн калать?
— Олег арлан çиекен апата мĕншĕн тĕрĕслесех тăнă? Калавра тупса вуласа парăр.
— Мĕншĕн калава «Пытанма юратакан» тесе ят панă?
— Арлан пытанма юратнине автор мĕнле ăнлантарса парать? Вуласа парăр.
— Арлан çинчен маларах вуланă статьяри мĕнле шухăшсем Геннадий Мальцев калавĕнче те тĕл пулаççĕ?
— Ку калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле-ши?

*Ачасем калава тепĕр хут вулаççĕ, шухăш тĕлĕшĕнчен темиçе пая пайлаççĕ, кашни пайне ят параççĕ. Тунă план тăрăх каласа параççĕ.*

4. Киле ĕç пани.

*Хăйсен килĕнче пурăнакан (е килте пурăнакан пĕр-пĕр чĕр чун) çинчен каласа пама хатĕрленмелле. (Сăн ӳкерчĕкне е хăйсем туса хатĕрленĕ ӳкерчĕксене урока илсе килсен аван)*

5. Урока пĕтемлетни.

— Мĕнле хайлав вуларăмăр?
— Унăн авторĕ кам? Эсир Геннадий Мальцевăн мĕнле калавĕсене вуланă?
— Çыравçăн калавĕсем вулакана мĕне вĕрентеççĕ?

## 32-мĕш урок

**Тема:** Пĕрлĕхре – вăй.

**Урок тĕллевĕ:** Геннадий Волков çырнă «Пуç пӳрнене те юлташ кирлĕ» хайлавпа ĕçлесе ачасене илемлĕ литературăри хайлавсенче вĕрентсе калакан шухăшсене палăртма вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлаври сăнарсене, вĕсен ĕçне, хăйсене тыткаланине хак пама, хайлавăн тĕп шухăшне ăнланма пултарни, чăвашла вулама, харпăр хăй вулавне хаклама хăнăхни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Геннадий Волковăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Ачасем хăйсен килĕсенче пурăнакан чĕр чунсем çинчен каласа пареççĕ, сăн ӳкерчĕкĕсене кăтартаççĕ.*
2. Кӳртĕм калаçу.

— Вырăссен паллă çыравçин Лев Николаевич Толстойăн çакăн пек притча пур: *Пĕр старик ывăлĕсене туратсене пĕрлештерсе çыхнă шăпăра хуçма хушать. Ывăлĕсем тăрмашаççĕ-тăрмашаççĕ, ниепле те хуçаймаççĕ. Ватă çын вара ачисене шăпăра салтса туратсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хуçма ыйтать. Туратсем çăмăллăнах хуçăлаççĕ.*
— Мĕн каласшăн, мĕн ăнлантарасшăн пулнă-ши ашшĕ хăйĕн ывăлĕсене çапла ĕçлеттерсе? Мĕнле пурăнма вĕрентесшĕн пулнă?

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене итленĕ хыççăн урок темине доска çине çырса хурать.*

3. Геннадий Волков çырнă «Пуç пӳрнене те юлташ кирлĕ» хайлавпа ĕçлени.

— Ăнах та, пĕрлĕхре – вăй. Паян урокра çак шухăша çирĕплетекен хайлавпа паллашăпăр. Кĕнекесене 134-мĕш страницăна уçăр. Хайлав мĕн ятлă? Унăн авторĕ кам?
— Геннадий Волков çинчен эсир мĕн пĕлетĕр? Эпир унăн мĕнле хайлавĕсене вуланăччĕ? *(Виççĕмĕш класра чăвашсен паллă чĕлхе ăсти Василий Георгиевич Егоров профессор çинчен çырнă очеркпа, тăваттăмĕш класра «Ылтăн çĕр» легендăпа паллашнă.)*

*Вĕрентекен ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет, ачасем автор çинчен аса илни çумне хушса калама пултарать.*

*Хайлава вуличчен словарьте панă сăмахсемпе ĕçлеççĕ, хайлав сюжечĕ мĕнле пулма пултарни пирки калаçаççĕ. Унтан вĕрентекен хайлава вулать, ачасене ыйтусем парса ĕçлеттерет.*

— Кача пÿрне, автор каланă тăрăх, мĕншĕн шăнать? Вуласа парăр.
— Пуç пÿрне мĕншĕн шăнать? Хуравăра хайлаври сăмахсемпе çирĕплетĕр.
— Пуç пÿрне мĕншĕн пĕччен? *(Тăрсан-тăрсан, хăйне ăшă чухне, вăл мăнаçланма тытăнать иккен. Сивĕре кам патĕнче ăшăннине манать.)*
— Автор ун çинчен мĕнле çырса кăтартнă? Вуласа парăр.
— Пур пÿрне те пĕрле пулччăр, нихĕшĕ те ан шăнччăр тесен мĕн тумалла?
— «Ĕçленĕ чух пуç пÿрне те ыттисемпе пĕрлех. Пуç каçăртма вăхăт çук», - тет автор. Çак сăмахсене эсир мĕнле ăнланатăр?
— Алă вăйлă пултăр тесен мĕн тумалла? Вуласа парăр.
— Кирек мĕнле ĕç те ăнăçлă пулса пытăр тесен пĕр алă çителĕклĕ-ши? Кун çинчен автор мĕн калать?
— Ку хайлава притча (ытарлăх) тесе калама пулать-ши?
— Ытарлăх – вĕрентсе калакан калав. Мĕне вĕрентет-ши Геннадий Волков çырнă ытарлăх? Унăн тĕп шухăшĕ мĕнле-ши?
— Çапла, пĕрлĕхре – вăй. Мăнаçланни, каппайланни, ырă тунине манни – илемсĕр. Пĕрле, туслă ĕçлесен темĕн те тума пулать.
— Урок пуçламăшĕнче аса илнĕ туратсем çинчен калакан тата халь вуланă пÿрнесем çинчен калакан ытарлăхсен хушшинче пĕрпеклĕхсем пур-ши?

*Вĕрентекен калава юнашар ларакан ачасене пĕр-пĕрне вуласа пама, кашнин вулавне 136-мĕш страницăра панă виçесемпе хаклама хушать. Вуличчен виçесемпе паллашмалла.*

4. Киле ĕç пани.

*Хайлава 136-мĕш страницăра панă виçесене пăхăнса илемлĕ вулама хатĕрленмелле.*

5. Урока пĕтĕмлетни.
— Мĕнле хайлав вуларăмăр? Унăн авторĕ кам?

— Мĕншĕн ку калава притча (ытарлăх) теме пулать?
— Ку ытарлăх сирĕнте мĕнле шухăшсем çуратрĕ?

### 33-мĕш урок

**Тема:** Суяпа инçе каяймăн.

**Урок тĕллевĕ:** Геннадий Волков çырнă «Суяпа инçе каяймăн» хайлавпа ĕçлесе ачасене вĕрентсе калакан шухăшсене палăртма вĕрентесси.

**Пулмалли результатсем**: хайлавăн тĕп шухăшне ăнланни; план тума, унпа усă курса хайлав содержанине каласа пама пултарни; текстра сăнарлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене асăрхама, вĕсене ăнланма, хайлаври сăнарсене, вĕсен ĕçне, хăйсене тыткаланине хак пама хăнăхни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Геннадий Волковăн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Киле панă ĕçе тĕрĕслени.
   *Ачасем калава вулаççĕ, пĕр-пĕрин вулавне таблицăпа усă курса хаклаççĕ.*
2. Кӳртĕм калаçу.

— Лев Толстойăн «Лгун» ятлă калав пур. Кам вуланă ăна? Мĕн çинчен ку калав?
— Мĕншĕн виççĕмĕш хутĕнче кĕтӳ ачине пулăшма никам та пыман?
— Ача малтанах улталаман, суйман пулсан, çынсем пынă пулĕччĕç-ши ăна пулăшма?
— Эсир мĕнле шутлатăр, паян урок теми мĕнле-ши?

*Вĕрентекен урок темине доска çине çырса хурать.*

3. Геннадий Волков çырнă «Суяпа инçе каяймăн» калавпа ĕçлени.

*Ачасем кĕнекесене уçаççĕ, хайлава тупаççĕ, вулав умĕнхи ĕçсене тăваççĕ, вĕрентекен вуланине итлеççĕ, унтан ыйтусене хуравлаççĕ.*

— Сире ку калав мĕнле хайлава аса илтерчĕ?
— Хайлав геройĕ ял халăхне пĕрремĕш хутĕнче мĕн тесе улталать?
— Ял çыннисене суеçĕ мĕнле кĕтсе илет? Вуласа парăр.
— Пулăшма килекенсене ку килĕшет-и? Вуласа парăр.
— Иккĕмĕш хутĕнче суеçĕ халăха мĕнле улталать?
— Ку хутĕнче пулăшу килет-и? Мĕн калать кун çинчен автор?
— «Хăшĕ-пĕри шаннă-шанманах чупса çитрĕ», – тенине эсир мĕнле ăнланатăр?
— Хăçан чăнах та пулăшу кирлĕ пулать ку çынна? Вуласа парăр.
— Мĕншĕн ял халăхĕнчен пулăшу кĕтсе илеймест суеçĕ.

— Суеçĕн нуши çине ял халăхĕ мĕнле пăхать? Вуласа парăр.
— Автор хăйĕн хайлавне мĕнле ваттисен сăмахĕпе вĕçлет? Мĕнле ăнланатăр эсир çак ваттисен сăмахне?

*Ачасем хайлава тепĕр хут вулаççĕ, унăн планне тăваççĕ, кайран план тăрăх каласа параççĕ. Каласа парассине çакăн пек йĕркелеме пулать:*

1) *план пунктне вуламалла;*
2) *хайлавра çак сыпăка тупса вуласа памалла;*
3) *вуланине каласа памалла;*
4) *каласа панине хакламалла.*

4. Киле ĕç пани.

*Геннадий Волков çырнă ытти хайлавсене тупса вуламалла.*

5. Урока пĕтĕмлетни.
— Урокра мĕнле хайлавпа ĕçлерĕмĕр?
— Мĕнле шухăшсем çуратрĕ сирĕнте çак хайлав?

## 34-мĕш урок

**Тема:** Кăмăла кура кăмăл.

**Урок тĕллевĕ:** Василий Сухомлинский çырнă «Пан улми» калавпа ĕçлесе ачасен текста тишкерес хăнăхăвĕсене, тус-тăванлăх туйăмĕсене аталантарасси.

**Пулмалли результатсем**: текста вуласа ăнланма, хайлаври сăнарсене, вĕсен ĕçне, хăйсене тыткаланине хак пама, хайлавăн тĕп шухăшне ăнланма хăнăхса пыни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** вĕренӳ кĕнеки, Василий Сухомлинскийĕн сăн ӳкерчĕкĕ, унăн хайлавĕсен пуххи.

### Урок юхăмĕ

1. Кӳртĕм калаçу.

*Вĕрентекен доска çине урок темине çырса хурать.*

— Эсир урок темине мĕнле ăнланатăр? (По милости и милость. Добро за добро.)
— Темăна лайăхрах ăнланма пире Василий Александрович Сухомлинскийĕн калавĕ пулăшĕ.

2. Василий Сухомлинский çырнă «Пан улми» калавпа ĕçлени.

— Василий Александрович Сухомлинский çинчен эсир мĕн пĕлетĕр?

*Ачасем автор ҫинчен мӗн пӗлнине каласа параҫҫӗ. Вӗрентекен хушса калать. Унăн калавӗсене аса илтерет, кӗнекисене кăтартать.*

*Ун хыҫҫăн ачасем калава ăшра хăйсем тӗллӗн вулаҫҫӗ. Вуласа тухсан вӗрентекен ачасене ыйтусем парса ӗҫлеттерет.*

- Калаври геройсем камсем? *(Ольăпа Нина – аппăшӗпе йăмăкӗ.)*
- Калаври ӗҫ-пуҫ ăҫта тата хăш вăхăтра пулса иртет? Вуласа парăр.
- Хӗр ачасене садра мӗн тӗлӗнтернӗ?
- Аппăшӗпе йăмăкӗн кашнинех пан улмине ҫиес килнине автор мӗнле сăнласа парать?
- «Пӗри те улмана хăйне илме хăйу ҫитереймен», – тенине эсир мӗнле ăнланатăр?
- Ку хӗр ачасене мӗнле хаклама май парать? *(Сăпайлă, хапсăнчăк мар, ыттисем ҫинчен шутлама пӗлекен ачасем.)*
- Мӗнле шутлатăр, хӗр ачасем пан улмине мӗншӗн амăшне параҫҫӗ?
- Вӗсем ҫакăн пек туни хӗр ачасене мӗнле хаклама май парать? *(Хăйсем ҫинчен кăна мар, амăшӗ ҫинчен те шутлаҫҫӗ.)*
- Калаври юлашки предложение вулăр. Эсир ăна мӗнле вӗҫленӗ пулăттăрччӗ?

*Пан улмине хӗр ачасем амăшӗпе пӗрле ҫинӗ пулсан аван пулнă пулӗччӗ.*

- Автор пире ку калавпа мӗн каласшăн пулнă? Унăн тӗп шухăшӗ мӗнле?
- Ҫапла, ку калав пире ҫемьери ҫынсен пӗр-пӗрин ҫинчен шухăшламалли, пӗр-пӗриншӗн тарăшмалли ҫинчен аса илтерет. Пӗр-пӗрне хисеплеме, юратма вӗрентет. Ырă кăмăлпа тунă ӗҫсем яланах ырăпа таврăнаҫҫӗ – ҫакна ачасен яланах асра тытмалла.
  *Малалла ачасем калава миҫе пая пайлама пулни ҫинчен шутлаҫҫӗ. Кашни пайне ят парса план тăваҫҫӗ, унтан план тăрăх, иртнӗ урокри йеркепе, каласа параҫҫӗ.*

3. Урока пӗтӗмлетни.

*Вӗрентекен ку урок вӗренӳ ҫулӗнче юлашки урок пулни ҫинчен калать, ачасемпе литература вулав урокӗсенче мӗн вулани, мӗн тума вӗренни ҫинчен калаҫать, ачасен ҫитӗнӗвӗсене палăртать. Ачасем хăш хайлавсем килӗшни, мӗн асра юлни ҫинчен калаҫҫӗ. Юлашкинчен вӗрентекен ҫулла та чăвашла кӗнекесем вулама сӗнет.*

## Хушса пани.

**Александр Алксеевич Галкин** 19028 ҫулхи нарăс уйăхӗн 12-мӗшӗнче Элӗк районӗнчи Чулкаҫра ҫуралнă. Ялти пуҫламăш, Юнтапари тулли мар вăтам шкулсенче, Калининăри  педучилищӗре, Шупашкарти педагогика

институтĕнче вĕреннĕ. Литературăри пултарулăхне кура А. Галкина Чăваш кĕнеке издательствине ĕçе илнĕ. 1971 çулта ăна «Тăван Атăл» журнал редакторĕ пулма çирĕплетеççĕ. 1980 çулта «Капкăн» журналта ĕçлеме пуçлать. Поэт хĕрĕх çул ытла пичет ĕçĕнче вăй хунă.

Чăваш литературине аталантарас тĕлĕшпе вăй хунăшăн тата общество ĕçĕнче пысăк активлăх кăтартнăшăн поэта 1977 çулта «Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», 1997 çулта «Чăваш Республикин халăх поэчĕ» хисеплĕ ятсемпе чысланă.

Поэт хайлавĕсемпе чăваш композиторĕсем икçĕре яхăн юрă кĕвĕленĕ. Ачасем валли çырнисенчен çак кĕнекесене палăртмалла: «Пĕчĕк ĕçченсем» (1959), «Читлĕхри хăнасем» (1959), «Юптарусем» (1963), «Çунатлă улăп» (1968), «Аптраман Раман» (1963, 2014), «Хĕвел тухсан» (1975), «Сĕрен кĕперĕ умĕнче» (1980).

А.А. Галкин 2002 çулта вилнĕ.

**Надежда Геннадьевна Ильина** 1976 çулхи кăрлач уйăхĕн 19-мĕшĕнче Вăрнар районенчи Мăн Эльмен ялĕнче çуралнă. Ярмушкари вăтам шкул хыççăн И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ăс пухнă (1993-1998), аспирантура пĕтерсе кандидат диссертацине ăнăçлă хÿтĕленĕ (2002), 1998-2003 çулсенче И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче студентсене вĕрентнĕ. 2003 çултанпа Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче ăслăлăхăн аслă сотрудникĕ пулса ĕçлет.

Чăваш Республикинчи Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ (2004), Раççей Федерацийĕн Писательсен союзĕн членĕ (2004), Николай Никольскипе (2012) Иван Ивник премийĕсен лауреачĕ (2014).

**Григорий Луч (Григорий Васильевич Васильев)** 1931 çулта çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Уйкас Кипек ялĕнче çуралнă. Шăхасанти вăтам шкулта, Партин Ленинградри аслă шкулĕнче вĕреннĕ. Шăхасанти район хаçачĕн редакторĕ, Канашри комсомол райкомĕн секретарĕ, Чăваш ВЛКСМ обкомĕн инструкторĕ, «Молодой коммунист» хаçатăн редактор çумĕ, «Коммунизм ялавĕ» тата «Советская Чувашия» хаçатсенче пай пуçлăхĕ, парти обкомĕнче пичет, телевиденипе радио секторĕн пуçлăхĕ пулнă, «Капкăн» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ. Ача-пăча çыравçи тата кулăшла калавсен авторĕ. 1960-мĕш çулсенче пичетленме тытăннă. 1970 çулта СССР Писательсен союзне кĕнĕ.

Ачасем валли тухнă кĕнекисем: «Иккĕмĕш кил» (1964), «Шип-шип» (1964, 2015), «Эсир Куçука курман-и?» (1968), «Эпир те салтаксем» (1971),

«Пăшалсăр сунарçă» (1976), «Чапаев ачисем» (1977), «Кĕтÿç шăхличĕ» (1980), «Ăçта эс, ылтăн кайăк?» (1981) тата ыттисем.

Çыравçă 1998 çулта пурнăçран уйрăлнă.

**Геннадий Степанович Мальцев (Кенаш Мучи)** 1929 çулхи нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Чăрăшкасси ялĕнче çуралнă. Вăтам пĕлÿ паракан Чăваш ял хуçалăх шкулĕнчен тата Партин Ленинградри аслă шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Чăвашрадио тата «Коммунизм ялавĕ» хаçат корреспонденчĕ, Йĕпреç районĕнчи «Çĕнтерÿ çулĕ» хаçат редакторĕ пулнă, «Капкăн» журналта тата республикăри Писательсен союзĕ çумĕнчи пропаганда бюровĕнче ĕçленĕ. 1960 çулта пичетленме пуçланă. Сăвăсем, кулăшла калавсем, статьясемпе очерксем çырнă. Унăн чылай сăввине композиторсем юрра хывнă. 1979 çулта СССР Писательсен союзне илнĕ.

Г. Мальцев – ачасем валли çырнă «Пирĕн асанне» (1978), «Парне кунĕ» (1979), «Олегпа Валерик тусĕсем» (1982) кĕнекесен авторĕ.

Çыравçă 1991 çулта çĕре кĕнĕ.

**Елен Нарпи (Елена Петровна Чекушкина)** 1969 çулхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Вырăскасси ялĕнче çуралнă. Çуткулти сакăр çул вĕренмелли тата Курнавăшри вăтам шкулсенче вĕреннĕ, Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчи чăваш уйрăмĕнче аслă пĕлÿ илнĕ. Вĕренсе тухсан ăна университетра ĕçлеме хăварнă. Вăл вырăспа чăваш филологийĕн тата журналистика факультетĕнче студентсене вĕрентет.

Малтанхи статйисемпе калавĕсене шкулта вĕреннĕ чухнех «Тантăш» хаçатпа «Хатĕр пул» журналта пичетленĕ. Унăн калавĕсемпе повĕçĕсем «Ялав», «Тăван Атăл», «Пике» журналсенче те кун çути курнă. Ачасемпе çамрăксем валли çыравçă «Çумламан йăран» (2007), «Салтак тÿмипе Тал пиçен» (2012), «Пăрли шыври хĕвел пайăрки» (2014) кĕнекесем кăларнă.

Елен Нарпи – ачасемпе çамрăксам валли çырнă кĕнеке ал çырăвĕсен республикăри конкурсĕн çĕнтерÿçи (2013).

**Александр Пăртта (Александр Иванович Степанов)** 1963 çулхи ака уйăхĕн 4-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Алманч ялĕнче çуралнă. Ярославль хулинчи Ф. Волков ячĕллĕ академи драма театрĕ çумĕнчи Театр институтĕнче вĕреннĕ.1985-1990 çулсенче – Шупашкарти пукане театрĕн артисчĕ, 1990 çултанпа – Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн артисчĕ.

Литературăна 1990-мĕш çулсенче сăвă пуххисемпе кĕнĕ. Çамрăксемпе ачасем валли çырнă хайлавĕсем «Уйăх ачи» (2005), «Пирĕн урам» (2010), «Атьăр туслашар» (2015) кĕнекесенче тухнă. Професcиллĕ театрсенчĕ тĕрлĕ

çулта лартнă пьесисем: «Çиçĕм тивнĕ чунсем», «Турă пÿрмен юрату», «Килех килчĕ тур çырни», «Укçа чул кастарать», «Вăрмана юлнă çамрăклăх», «Качча кайиччен», «Чăн телей юратура», «Кирек ăçта та пĕр хĕвел» тата ыттисем.

Раççей Федерацийĕн Писательсен союзĕн членĕ (1997), Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ (2003).

**Нина Пăрчăкан (Нина Алексеевна Семенова)** 1955 çулхи чук уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕрпÿ районĕнчи Мăнçурт ялĕнче çуралнă. Тутар АССРĕнчи Зеленодольск хулинчи медицина техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Шупашкарти «Электроприбор» заводра фельдшер, В.И. Чапаев ячĕллĕ заводăн ача-пăча поликлиникинче медсестра пулса ĕçленĕ. Халĕ тивĕçлĕ канура.

Н. Пăрчăкан 2009 çултанпа Раççей Федерацийĕн Писательсен союзĕнче тăрать. Çыравçăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: «Пил ывăлсене» (2001), «Хĕвел пайăрки» (2001), «Çула тухрăн пулсан утмаллах» (2003), «Тăван енĕм, тăван ен» (2005), «Хĕллехи çумăр» (2007), «Сарă тĕпел» (2010), «Мĕншĕн анне йăл кулать?» (2011), «Тата мĕншĕн пурăнас-ха çĕр çинче…» (2015).

**Егор Федорович Орлов (Георгий Орлов)** 1925 çулхи пуш уйăхĕн 29-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Толиккасси ялĕнче çуралнă. Иккассинчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă, унта полкри радиостанци начальнике пулнă. 1948 çулта ăна ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарĕ пулма суйланă. 1951- 1954 çулсенче вăл çар училищинче, 1954-1955 çулсенче «Ялав» журнал редакцийĕнче ĕçленĕ, унтан Парти аслă шкулĕнче вĕреннĕ. 1959-1963 çулсенче – Чăваш кĕнеке издательствин аслă редакторĕ, 1964-1974 çулсенче – «Ялав» журналăн тĕп редакторĕ, 1978-1985 çулсенче – Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ.

Г. Орлова 1970 çулта Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине панă. Вал – Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Ăна Тăван çĕршыв вăрçин II степеньлĕ орденĕпе, «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă.

Поэт, прозаик, куçаруçă. 1961 çулта СССР Писательсен союзне кĕнĕ. Ачасем валли çырнă паллăрах кĕнекисем: «Тривим йысна калавĕсем» (1974, 1994), «Сивĕ хыпарçисем» (2007) тата ыттисем.

Г. Орлов 2007 çулхи авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче вилнĕ.

**Николай Васильевич Симунов** 1937 çулхи авăн уйăхĕн 27-мĕшĕнче хальхи Тутар Республикин Пăва районĕнчи Хирти Кушкă ялĕнче çуралнă. Элшелри вăтам шкулта, Пăвари ветеринари техникумĕнче, Хусанти ветеринари, Ульяновскри педагогика институтĕсенче вĕреннĕ. Молдавири «Маяк» хуçалăхра выльăх тухтăрĕ, тăван ялĕнчи шкулта учитель тата директор, Çĕнĕ Шупашкарти 9-мĕш техника училищинче директор çумĕ, «Ильинка» кану çуртĕнче директор пулса ĕçленĕ.

1989 çулта СССР Писательсен союзне кĕнĕ, çав çулах СССР Литфончĕн чăваш уйрăмне ертсе пыма тытăннă. 1994 çулта Çĕнĕ Шупашкарта Чăваш Республикин Писательсен пĕрлешĕвĕн уйрăмне йĕркелесе янă. Н. Симунов – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1997).

Литература ĕçне шкулта вĕреннĕ чухнех тытăннă, сăвăсемпе калавсем çырнă. Вĕсене районта тухса тăракан «Ялав», «Новый путь» хаçатсенче пичетленĕ. Унăн ачасем валли «Çип мĕн тĕслĕ?» (1991), «Турат вăррисем» (2010) кĕнекесем тухнă.

Çыравçă 1997 çулта çĕре кĕнĕ.

**Анатолий Семенович Смолин** 1957 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче Куславкка районĕнчи Шăнчас ялĕнче çуралнă. Кармăшри вăтам шкултан веренсе тухнă хыççăн икĕ çул çар хесметĕнче тăнă. Унтан таврăнсан Куславкка районĕнчи «Ялав» хаçатра, районти культура пайĕнче ĕçленĕ. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх унирерситетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн унтах литература кафедринче вăй хунă. 1984-1996 çулсенче «Хатĕр пул» («Çилçунат») журналăн пай редакторĕ, тĕп редакторĕ пулнă. Поэт пĕр вăхăт Чăваш Республикин Президенчĕн аппаратĕнче ĕçленĕ.

А. Смолин публицистикăра та, лирикăра та, куçару ĕçĕнче те йĕр хăварнă. Унăн ачасемпе çамрăксем валли «Çаврăм» (1991), «Кĕтрет кĕтесĕ» (1994), «Çӳретпĕр Çеçпĕл çулĕпе» (1999), «Асамлă азбука» (2012) сăвă пуххисем тухнă.

1992 çулта ăна Раççей Федерацийĕн Писательсен союзне илнĕ. А. Смолин – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ.

Çыравçă 2012 çулхи çу уйăхĕнче çĕре кĕнĕ.

**Василий Александрович Сухомлинский** (1918-1970) – новатор-педагог, УССР тава тивĕçлĕ учителĕ (1969), Социализмла Ĕç Геройĕ (1968), СССР Педагогика наукисен академийĕн член-корреспонденчĕ (1968), педагогика наукисен кандидачĕ (1955), ача-пăча писателĕ. Ăна Хĕрлĕ Ялав тата Ленин орденĕпе (икĕ хутчен) наградăланă.

1918 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче Херсон кĕпернин Александрийск уесĕнчи Васильевка салинче çӳралнă. Хресчен çамрăксен шкулĕнче, Кременчугри медицина техникумĕнче, Полтаври педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Кировоград облаçĕн Онофруев районĕнчи ял шкулĕсенче украин чĕлхипе литература учителĕнче, Удмурт АССРĕн Ува поселокĕнчи вăтам шкул директорĕнче ĕçленĕ.

Паллăрах кĕнекисем: «Сердце отдаю детям» (1972), «Рождение гражданина» (1979) т. ыт. те.

Ачасем валли 1200 ытла калавпа юмах çырнă. Вăл çырнă кĕнекесен пĕтĕмĕшле тиражĕ 4 миллиона яхăн экземпляр.

1970 çулта вилнĕ.

**Ольга Николаевна Тургай** 1963 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче Свердловск облаçĕнчи Красноуфимск районĕнчи Зюрзя разъездĕнче çуралнă. Вăрмар районĕнчи вăтам шкултан, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. «Хатĕр пул», «Ялав» журналсен тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн редакцийĕсенче ĕçленĕ. 1998 çултанпа – «ГТРК «Чувашия»» компанире тĕп редактор.

Прозаик, публицист. 2005 çултанпа Раççей Федерацийĕн Писательсен союзĕнче тăрать. Илемлĕ хайлавсем çырма иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче пуçланă, республикăра тухса тăракан хаçатсемпе журналсенче пичетленнĕ. Унăн «Илемпи савăнăçĕ» (1991), «Санăн йыхравна эпĕ илтрĕм» (1998), «Уй урлă çул» (2013) кĕнекисем пичетленсе тухнă.

**Роза Шевлепи (Роза Ивановна Ильина-Юхма**) 1935 çулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Çатра ялĕнче çуралнă. Вăтам шкулта, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Шупашкарти шкулсенче вырăс чĕлхипе литератури, истори учителĕ пулса ĕçленĕ. Сăвăç, прозаик, публицист.

1991 çултанпа Чăваш писателĕсен союзĕнче тăрать. А. Талвир тата Эмине премийĕсен лауреачĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Ачасем валли çырнă кĕнекисем: «Ачалăх пахчи» (1993), «Йытă куççулĕ» (1996), «Пурнăç сукмакĕ» (1998), «Азбука – ăслăлăх кĕнеки» (2000), «Шăши тус парни» (2006) тата ыттисем.

**Герасим Дмитриевич Харлампьев (Пилеш)** 1913 çулхи нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Мăн Тукаш ялĕнче çуралнă. Хутарти вăтам шкулта, Нурăсри техника профессийĕсен шкулĕнче, Чул Хулари педагогика рабфакĕнче, Мускаври художество техникумĕнче вĕреннĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Упи шкулĕнче столяр, ĕç учителĕ, Чул Хулари «Металлист» заводра тимĕрçĕ, Чăваш кĕнеке издательствинче художник, Чăваш патшалăх художество галерейинче директор пулса ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Çичĕ медаль, Тăван çершыв вăрçин II степеньлĕ орденне илме тивĕçлĕ пулнă. Вăрçăран таврăнсан литература ĕçĕпе пурăннă, ӳкерчĕксем тунă.

1940 çулта СССР Художникĕсен, 1962 çулта СССР Писательсен союзĕсене кĕнĕ. Ачасем валли çут çанталăк пурнăçĕ çинчен калакан хайлавсем çырнă:

«Çамрăк художник» (1939), «Тăрнасен ташши» (1952), 2008), «Пĕчĕк çеç юмахсем» (1955), «Палюк мучи кĕнеки» (1958), (1971), «Йăлтăр çăлкуç» (1976), «Пăшăлтисем» (1983).

Çыравçă 1994 çулта Шупашкарта вилнĕ.

**Ольга Владимировна Савандеева** 1922 çулта Тăвай районĕнчи Турикас Тушкил ялĕнче çуралнă. Вăтам шкул пĕтернĕ. Калавĕсем республикăра тухса тăракан хаçат-журналта, уйрăм сборниксенче, шкул учебникĕсенче пичетленнĕ. Вăл ытларах çут çанталăк çинчен çырнă. Унăн ачасем валли «Пысăк чĕпĕ» (1972), «Учитель парни» (1975), «Тĕпсĕр кӳлĕ» (1979) кĕнекесем тухнă.

Çыравçă 1982 çӳлта çĕре кĕнĕ.

**Альбина Юрату (Альбина Васильевна Любимова)** 1959 çулхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхаль ялĕнче çуралнă. М.В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университетĕнчи журналистика факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Пĕр хушă Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçатра вăй хунă. Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрикинче радиоредакторта тимленĕ, Чăваш Республикин Çут çанталăка сыхлакан министерствин пресс-секретарĕ пулнă.

А. Любимова – Чăваш писателĕсен, Халăхсем хушшинчи писательсен, Раççей Федерацийĕн Журналистсен союзĕсен членĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ тата нумай конкурс лауреачĕ.

А. Юратун çирĕм ытла кĕнеке тухнă. Çав шутра çамрăксемпе ачасем валли çырнисем: «Каях, сывă пул…» (1992), «Эпĕ сана юрататăп…» (1994), «Эпĕ чи пуян хĕрарăм çĕр çинче» (2010), Алфавит А –Я» (2011), «Туслă çемье» (2014) тата ыттисем те.

**Тупмалли**

**Умĕн ăнлантарни …**

**«Литература вулавĕ» вĕренӳ предметне пĕтĕмĕшле хаклани…**

**Предмета вĕрентнĕ май планлакан результатсем…**

**Вĕренӳ предмечĕн шалаш тытăмĕ…**

**Литература вулавĕн урокĕсене тема тата сехет тăрăх пайланин тĕслĕхĕ…**

**Литература вулавĕн урокĕсене йĕркелессин уйрăмлăхĕсем**

**Уроксем…**

**Хушса пани (хайлавсен авторĕсем ҫинчен кĕскен) …**